К84.09
Е91
Ч-38119

I... ЕФИМОВ

# ВЕНЧЕТ ҪЁРРИ



Национальная библиотека ЧР
4-038119



ир К84.09(=Чув)
Е91

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ

# ВЕНЧЕТ ÇЁРРИ

СĂВĂСЕМ

АСА ИЛӲСЕМ

Шупашкар
2003

УДК 881. 512 – 111
ББК 84 (2 Рос – Чув) – 5
Е 91
4-38119

*Çак кĕнекене кăларма пулăшнăшăн «Чувашхлебопродуктăн» Генеральнăй директорне Александр Иванович Федотова сăвап пултăр, - ăна - вăрăм ĕмĕр, телейлĕ кун-çул сунатăп.*

*Тайма пуç!*

*Автор*

**Георгий Ефимов.**
Е 91 **ВЕНЧЕТ ÇĔРРИ.** Шупашкар. Чăваш Республикинчи писательсен фончĕн «Калем» издательстви. 2003 ç., 220 стр.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© «Калем» издательство

ПРОВЕРЕНО
2010 06 ОКТ 2017

* * *

Хитрелĕх - шуçăм ен çутин вылявĕ,
Вăл çуралать асамлă уçлăхра.
Куç шăрçинче – йăл-çăлтăрсен ялтравĕ,
Никам пĕлмен именчĕклĕх – сăнра.

Илемлĕх вăй-халне ăнлантараймăн,
Тухатласа тăрать вăл сан чунна.
Ăна валли сăмах часах тупаймăн, -
Çавах та юрă-кĕвĕ çырăнать.

Унра - хĕвелĕн иксĕлми хăвачĕ,
Вăл çутатса тăрать сĕм-сĕм каçа.
Вăл йăх тăсма телей парса хăварчĕ,
Пуласлăха чĕнет пурăнăçа.

Чиперлĕхпе илемлĕхе туйсан,
Юратăву та пырĕ сан ăнса.

17.10.2002

* * *

Кивҫен пурнӑҫ мана йӑлӑхтарчӗ.
Ну? Мӗскер вӑл капла пурӑнни?
Чӑннипех те мана хакла ларчӗ, -
Пӗтӗмпех, - мӗн пулни те иртни.

Иртни - иртнӗ... Ӑна ман ятлас-и?
Унта – ман ўсӗмсем, инкексем.
Систерет, ав, шалти лӑпкӑ сасӑ:
Иртнинче – юрату та туссем...

Кун-ҫултан кивҫен илнӗ пулсассӑн, -
Апла шаннӑ: паран тавӑрса.
...Ҫӗр ҫинчи парӑма татмасассӑн
Тамӑкра лармалла пӑшӑхса.

Ни кунта, ни лере ҫук-мӗн канӑҫ, -
Пуҫ тухать ҫурӑлса шухӑшпа.
Ҫавӑнпа-тӑр пур Тухӑҫ та Анӑҫ,
Ҫавӑнпах Ҫурҫӗрпе Кӑнтӑрпа
Чун-чӗре хӑйне май тӑванланнӑ, -
Ахальтен-и ҫакна малаш панӑ?

Кивҫенле пурӑнма ҫавах йывӑр...
Ҫутӑ кун, хура каҫ пур тӗнчен.
Шӗшкӗ тӗмӗ шӑтсассӑн йӑвӑ, -
Хӑшпӗрин – хӑрмалла иккен.

Ахаль мар ҫынна панӑ ик алӑ,
Пуҫ та пур, куҫ та пур –
Пур йӑлтах.
Илнине парса татӑп...
Татмалӑх
Кунсем пулччӑр ҫеҫ манӑн малта.

9.11.2002

* * *

Çын пĕр кун çеç телейлĕ пулса куртăр,
Пурнас килни пек пурăнтăр кăна.
Инкек-и е хăрушлăх-и ал султăр, -
Хăюллăнах вăл пăхтăр ырана.

Кун пек май пур-ши пурăнма пире?
Куçран пăхсах тăрать вĕт самана.
Тăвăл çапса каять те уй-хире, -
Пĕр кунĕ тулăхне памасть мана.

Çавах малашлăха эпир пăхатпăр,
Пурнатпăр çавăнпа çак çĕр çинче.
Ахальтен мар сухаласа акатпăр, -
Мĕншĕн тесессĕн çакă çут тĕнчен
Çăкăр чĕлли выртсан çын умĕнче –
Юратупа еткерлĕхе тăсатпăр.

Çĕр çул патне хуллен-хуллен утатпăр,
Уйăрăлас килмест пурăнăçран.
Çак хушăра, - сисместпĕр-ши? - Куратпăр,
Пулатпăрах пĕр кун ырăлăхра...

3.11.2002

* * *

Чечексен ыр шăршисен айне
Тунă йывăçсем çурхи çĕре:
Эп куратăп çĕмĕрт çеçкине,
Шурă та кăвак сиреньсене, -
Вĕсене çил чуп туса çўрет.

Улăх-çарансем çине пăхсан –
Чечек хумĕ çеç тавралăхра.
Сулхăнне парса сĕм-сĕм вăрман
Шăпчăк юррине сапса ярсан, -
Ўсет тырă тăрăшса уйра.

Пурăнас килет çак çăтмахра.
Анчах вăхăт хăйĕннех тăвать:
Çеçке тăкăнать пĕр самантрах,
Тунсăх вăранма пуçлать чунра, -
Çеçке ўктĕр – тĕшĕ вăй пухать...

Ма çеçкеллĕ вăхăт пит сахал
Тăсăлать çĕр кăкăрĕ çинче?
Çавăн пек йĕрке-тĕр? - Яшлăха
Çын хальччен тăсса курманччĕ-ха.
Эпир пурте пурнăç аллинче.

Çут çанталăк çĕр çаврăннă май
Ашă кун та, сивĕ те ярать.
Чечексем – савнисене пама,
Тĕшĕсем килес çулах шăтма...
Пурнăç çĕнĕ кун сунса пырать.

6.10.2002

* * *

Эс манăн савнăç та асап,
Чунри нуша, чунри киленĕç.
Чĕре таппи пĕр пек тапсан,
Килес кун шуçăмĕ çĕкленĕ.

Кун-çул пире пĕрле пулма
Çуралсанах иккен пилленĕ.
Шăпа çеç сан патна пыма
Çула манне пÿлсе çÿренĕ.

Пурăннă чух тумхах нумай,
Сисместĕн – такăнса ÿкетĕн.
Кĕрсе тухмашкăн çула май, -
Вăхăт пулсан та, - ÿркенетĕн.

Сисчеврĕх çук-ши çынсенче?
Е хĕм пĕтет чĕресенче? -
Хамăра хамăр чăрмавлатпăр.
Вăхăт çукки çине ярса,
Ĕç çук çĕртех сăлтав тупса,
Каяссинчен тăрса юлатпăр.

Тимсĕрлĕхпе чурăслăха
Ытла та хăвăрт парăнатпăр.
Юратури хăватлăха
Туйсан та – пĕлмен пек пулатпăр.

Çавна пулах-тăр савнăçа
Курман пек, пĕлмен пек ларасшăн?
...Кирек мĕн пултăр, -
Пурнăçа
Эп чăн Юратупа тăсасшăн!

5.10.2002

* * *

Кун-çулӑн ыр сулӑмӗпе
Малашлӑха утатӑп эп:
Унта ман пуçламан кунсем,
Унта эп çӗрлемен каçсем;
Унта тута паман хӗрсем,
Хальччен илтмен таса ятсем.
Кӗçех тухас хунав унта
Çӗр витӗмне кӑлт! хускатать.
Юман килет-ши тӗнчене,
Шӑтасшӑн-ши çӑка-анне?
Ача сасси те илтӗнет, -
Апла вӗр-çӗнӗ вӑй килет...

Кун-çулӑн ыр сулӑмӗпе
Тӑратӑп, курӑр, Улӑп пек.
Çӗн çӑлтӑр çутисем куçра,
Хӗвел шевли вылять чунра,
Мӗн курасси – йӑлтах умра...
6.10.2002

* * *

Ывӑнтӑн пулӗ, эсӗ, хӗвел,
Анӑҫа анакан хӗп-хӗрлӗ хӗвел?
Кун-каҫа мӗн чухлӗ кӗвве
Илтмен-ши?
Мӗн чухлӗ ҫӗр-шыв урлӑ
Иртмен-ши?
Анчах та пӗрре те хурлӑ
Курман сан сӑнна.
Савӑнӑҫлӑн та ҫуттӑн
Йӑлтӑратӑн кӑна.
Улма-ҫырла тутлӑн
Пиҫет туйса сан ӑшшуна.

Акӑ, хӗвелӗм, вӑрман хыҫне,
Е ҫичӗ тинӗс леш енне
Эсӗ манран пытантӑн.
Унтан мансӑр тунсӑхлатӑн,
Ҫӗр тепӗр енчен, - Тухӑҫран, -
Тухатӑн.
Эпӗ сана йӑл кулӑпа, -
Ҫапла-тӑр шӑпа, -
Кӗтсе илетӗп, кайӑк пек, юрӑпа,
Ӗмӗтпе,
Ӗҫпе.

Таса та ҫутӑ хӗвел,
Сан пайӑркунтан хӗлӗх туса,
Пуҫлатӑп ҫӗнӗ кӗвве
Сан хӑватна мухтаса,
Пуҫланнӑ куншӑн
Чунтан савӑнса.
6.10.2002

* * *

Тĕлĕнмелле...Мана çуратнă чух анне
Мĕнле те хытă асапланнă пулĕ?
Анчах та хăй каланă тăрăх
Вăл питĕ савăннă. Куççулĕ
Тухнă унăн чунтан хĕпĕртесе.
Кăвапана кассассăн, кукамай
Мана чĕркенĕ тет шап-шурă пӳспеле.
Кайран анне, кăкăр парсан,
Ун кăкăрĕн пуçне чĕлхепеле
Кăтăклантарнă имĕш ĕмнĕ майăн.
Анне йăл кулнă çеç. Малтанхи ывăл
Пур ылттăн-кĕмĕлтен те хаклă пулнă.
Ун кăкăрне эп икĕ алăпах
Тытма пултарнă.
Тутлă кăкăр сĕчĕ
Çăварăма кĕмесĕр таçта тарĕ.

Пĕлетĕп: кăкăр паракан хĕр арăм –
Еткерлĕх тăсăмĕ, кил-йышăн тыткăчи.
Унра чăн юрату ачашлăхне куратăп,
Вăл Тӳпепе Çĕр пĕрлĕхне çыхса тăрать.

Тĕлĕнмелле...Çав кăкăр тулăх пулнă:
Ырă Çĕр евĕр ĕмĕртнĕ мана.
Кăкăрĕ пур
Пусă пекех мĕн тулнă,
Мĕн чул ăсатăн, - пурĕпĕр хухмасть.

Аннеçĕм эп сыввишĕн питĕ хĕпĕртенĕ.
Анчах ăна эп шеллеме пĕлмен,
Тек ĕмнĕ...
Ак ура çине
Тăма вĕреннĕ çирĕп.
...Чăнах та, сиплĕ кăкăр сĕчĕ
Мана çын тунă чыслăн пурăнма...
9.10.2002

* * *

Чĕрӳ савать пулсан, хăюллă пул,
Тĕллевлĕн ут ху шанчăку патне.
Выртать-и умăнта тумхахлă çул, -
Такăрламашкăн тăрăш кулленех.

Çирĕп чунли туптать хăй телейне,
Куç шăрçинче çĕн уйăх йăл кулать.
Хăравçăлăх хуплать-и умрине, -
Сирсех пырсам эс пур чăрмавсене.

Çавăнпала шăпа хуçи пулса
Ĕмĕт патне тĕллевлĕн утмалла, -
Шиклĕхпеле пурнаймăн ăнтарса.

Инçетрине тĕтреллĕ куçпала
Кураймăн уççăн. Эп пухса хала
Утап патваррăн çирĕп юратса.
16.10.2002

* * *

Пулни – пулнах. Ҫук хушма, катма.
Пĕр йĕркине те тӳрлетме май ҫук.
Каяс ҫĕре пултарнă эп кайма,
Сăввине ҫырнă чунăм ҫуннă чух.

Пулни – пулнах. Куҫҫулĕ те кăларнă
Умра пĕрмай хура курăннăран.
Хăш чух ҫур ҫул ытла укҫасăр ларнă, -
Тăван ҫĕре ҫавах та ылханман.

Пулни – пулнах. Пире хыт тарăхтарнă,
Ҫавах пуҫа йăлмак ăшне чикмен.
Чыса яланлăх упраса хăварнă,
Этем ятне сыхланă, - пĕтермен.

Пулни – пулнах. Пĕлмен пуль юратма,
Тен, макăртнă хĕре усăсăрах.
Пултарнă ҫурт лартма, кил-йыш тума,
Усал сăмах илтмен-ха таврара.

Пулни – пулнах. Чун уҫă яланах.
Вĕчĕ тытса хаяррăн ҫӳремен.
Ырра курса ҫеҫ ыранхи куна
Тĕрĕслĕхпе ҫеҫ тăрăшнă кĕме.

Пулни – пулнах. Йăлт тӳснĕ те, веҫ курнă,
Телейлĕ кун та пулнă чĕрере.
...Ҫавах атте-анне пилленĕ пурнăҫ
Темрен те хаклă маншăн тĕнчере.
8.10.2002

* * *

Кĕркунне çитсен
Уй-хир, вăрман, тӳпе
Тунсăхлăн тавраналла пăхаççĕ.
Кайăк хур, тăрна картийĕпе
Ăш кунсем ăшă енне каяççĕ.

Кĕркунне сывлать те хашлатса
Ӳппĕн-теппĕн çулçăсем ӳкеççĕ.
Пырать хĕвел вăйĕ те чакса,
Пурпĕр вĕтĕ чечексем ӳсеççĕ.

Çĕре савакан сенкер тӳпе
Сивлекрех пăхать çынсем çине.
Садсем çеç пин-пин пан улмипе
Хăпартаççĕ кăмăл ăшшине.

Йăлт иртет.
Çу кунĕсен хавасĕ,
Çурхи каççен ян-янăра кулли
Йăннă ĕнтĕ.
Çил те сывлать ассăн,
Хĕрелет, шăнать ĕçчен алли.

Анаслать çĕр.
Çывăрма выртасшăн,
Ĕçлĕ çуркуннешĕн
Вăй пухасшăн.
6.10.2002

* * *

Çĕр хут, пин хут та калăп кун пирки,
Вăл маншăн темĕнрен те пахарах.
Унпа ман çыхăнать кун-çул йĕрки,
Ман чĕрене вăл çирĕплĕх парать.

Вăл – Туслăх! Çак сăмах сана нихçан
Сутса ямасть. Вăл – чăн вут чулĕ пек.
Тĕреклĕхне кӳрет те пурнăçа,
Çӳретĕн кулленех хӳтĕлĕхпе.

Çав сăмаха пиллет пуль çӳл тӳпе?
Вăй-хал сунать Чăн Туслăх чунсене,
Ĕмĕт патне утатăп тĕллевпе.

Урсан та тăвăл, - эс хĕвел сăнне
Курмашкăн пултаратăн умăнта.
Мĕншĕн тесессĕн тус пур çумăнта.
18.10.2002

***

Килĕшӳпе çураçу
Пытăр ĕмĕр-ĕмĕре.
Вара ăнĕ пурнăçу,
Тăнăç тăрĕ чĕрере.

Мĕншĕн харкашас ахаль, -
Пурăнар тăвансем пек.
Умра çăкăр та пур халь, -
Çын – илемлĕ ĕçĕпе.

Ĕç пĕтсен, килет уяв
Юрăпа та ташăпа.
Савнăçне ĕçчен туять
Ырлăхне кӳрсен шăпа.
7.11.2002

* * *

Çурçёртен вёçсе килеççё
Шăлинкурăссем,
Писнё пилеше çиеççё
Ушкăнпа вёсем.

Йышпала... Çавах хăраççё, -
Сасă илтсенех,
Вёсем сых ятне
Вăр! кăна вёçсе тараççё
Хӳтёрех
Çёре.
Шăлинкурăссем çитсессён
Атăл еннелле,
Пёлнё пул, юлташăм, эсё,
Ларать шур хёлле.

Шăлинкурăса пилеш
Йыхăрать: - Илеш!
Пилеш савăнать,
Чёнет хăнана...
13.11.2002

* * *

Чиперлĕх – чун илемĕ,
Тухать вăл сăн çине.
Анчах та ун çĕклемĕ
Хавшатĕ чĕрене.

Ăçта ан пыр, - пăхаççĕ
Тĕпчевлĕн сан çине.
Сан таврара шыраççĕ
Пулни-пулманнине.

Элек-челек сараççĕ
Тĕк пурăннă çĕртех.
Санран патша тăваççĕ,
Тепри – шыва тĕртет.

Çавах та чăн чиперлĕх
Çут тĕнчене упрать.
Унта таса еткерлĕх
Хăй ĕмĕрне тăсать.
17.10.2002

* * *

Хӗвел ан хӗрттӗр, ан ялтратăр –
Чечек те çурăласшăн мар.
Тымарсене упрать Çӗр-паттăр:
Ăшă килсен, - хунав кăлар.

Пӗлетӗп: шеллемест-çке сивӗ
Ачаш, çӳхе çеçкесене.
Пӗр систермесӗрех тăм тивӗ,
Çеçке çыхаймӗ тӗввине.

Вара ан кӗт эс тулăх çимӗç,
Параймăн ал кӗр мăнтăрне.
Юнра выляймӗ çырла симӗ
Чуна парса хăй хăватне.

Хӗвел пăхсассăн кайăк-кӗшӗк
Ӳстерӗ те чӗпписене, -
Çунат сартарӗ, - вара кӗшӗл
Вӗçтерӗ тӗпсӗр тӳпене.

Ăсанӗç кăнтăра,
Хӗл касӗ
Хăшӗ-пӗри Шупашкартах.
Вӗсем, иккен, йăва сыхлаççӗ, -
Тӗп килӗ - ӗмӗрлӗх кунта!

Хӗвеллӗ кун-и, çил-тăман-и –
Тымар управлă сыхлансан,
Тăван çӗр ыррăн аталанӗ
Чӗр куçпала мала пăхса.
31.10.2002

Ч-38119
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

* * *

Пысӑках мар тӑван ялӑм,
Ҫавах та килӗм пур ман ҫав ялта.
Ҫав ҫӗр ҫинче ман пухӑннӑ вӑй-халӑм,
Ҫырми-ҫатри те юрататъ мана унта.

Эп утӑ ҫулнӑ ярӑнса кӑна,
Нимле ӗҫрен те пӑрӑнса тӑман.
Пӗр сарӑ хӗр сасси вӑйӑйа тухсан
Асамлӑн тыткӑнланӑ шух чуна.

Васканӑ чух хире ыраш вырма
Сукмакӑм хӗрринчи чечек ҫинче
Пултарнӑ эпӗ пӗчӗк сывлӑм пӗрчинче
Пысӑк хӗвел йӑл-йӑл сӑнне курма.

Ҫав ҫутӑ сӑн пурнать халь чунӑмра,
Пур синкертен мана вӑл хӑтарать.
9.10.2002

* * *

Ӑста художник евӗр кӗркунне,
Тӗс шеллемест, - хайлать натюрмортне.

Чӑн композитор тейӗн кӗркунне,
Янраттарать туй-ҫуй кӗввисене.

Сисетӗп: чӑн-чӑн сӑвӑҫ кӗркунне,
Ҫырать куллен ҫӗн ҫӑкӑр сӑввине.

Механизатор евӗр кӗркунне,
Чӗнет хастарсене кӗрекене.
9.10.2002

* * *

Атăл çине кимĕпе
Ярăнма тухнă пек
Уйăх ишет шывра, -
Çыраналла хум ярать.

Çакăн пек касчĕ ун чух,
/Эп ĕмĕрне манас çук./
эс вăтанса, именсе
Каларăн: «Саватăп...» тесе.

Çав вăхăтран пуçласа
Манăн чĕре – санра.
...Вăхăт иртрĕ. Кайрăн манса.
Эп тăрап пек çаплах çыранра.

Санăн вăйлă аллу
Çаплах ыталать, çаплах...
Пĕлесчĕ: мĕншĕн çулу
Выртмасть сан кунталла?

Пĕлетĕн вĕт: манăн чĕре
Санра, пĕтĕмпех санра...
Чĕре,
Ăнланатăн, пĕрре...
Хăçан
Тавăрса паран?
Е ху чунупа çыхан?..
13.10.2002

* * *

Пурӑннӑ чух мӗскер кӑна курмастӑн?
Шурӑпала хура та пӗрлешет.
Шерпетлӗ чӗлхепе, ав, пӗр-пӗр аскӑн
Хӗр чыслӑхне ним шелсӗр пӗтерет.

Таса чуна та пылчӑкпа пересҫӗ,
Ҫирӗп чӗре пултарӗ ҫурӑлма.
Хӑшне-пӗрне пилӗк хуҫман, - ҫӗклесҫӗ,
Ыр ятпалан пуҫлать те пурӑнма.

Ҫапах та тӳрӗ сӑмаха мӗн ҫиттӗр?!
Час мар пулсан та, - чыс вӑл ҫӗнтерет.
Хӗн килӗ-и? - тухатӑн тӑвӑл витӗр, -
Пурнать-ха чӑнлӑх ҫутӑ тӗнчере.

Ачаранах пӗлетӗп эп ҫакна:
Ёнену ҫеҫ парать вӑй-хал ҫынна!
17.10.2002

* * *

Телейлӗ пулӑп-и е ҫук-и
Тесе ҫуралмӑн ҫӗр ҫине.
Кам хӑй ҫулне шыраса тупӗ,
Ҫав тытӗ пурнӑҫ ҫилхине.

Ӑнӑҫлӑхпа телей пӗр мар,
Сутуҫӑсем ҫеҫ ӑнтарасҫӗ.
Телей-и? - Ёҫпеле туптасҫӗ,
Ӑшша пиҫсе тӑкасҫӗ тар.

Вут-ҫулӑма кӗресҫӗ шиксӗр,
Пӗлмесҫӗ лӑпкӑлӑх мӗнне.
Юратупа утатӑр иксӗр
Ёмӗтленен телей енне.

Турра шанса ҫеҫ эс ан лар,
Илетӗн пурнӑҫран — ху пар.
18.10.2002

* * *

Патша йăх-тĕпĕнче те вăрă пулнă.
Вĕлернĕ патшасем ачасене.
Шăпашăн çук патша...
Шăпа йăл кулнă
Сăнанă май этемĕн кун-çулне.

Вăл ылттăна та, çутă кĕмĕле те
Пуçне тайса кĕлмĕçленсе тăмасть.
Шăпа мĕнле, -
Çакна аван пĕлетĕп, -
Ун картинчен никам та тухаймасть.

Ак калăпăр:
Тин çеç эп пуçлăхраччĕ,
Пĕкетчĕç пуç мана хăш-пĕрисем.
Эрех черкки те йăл кулса паратчĕç...
Вăрантăм та... –
Умри йăпăлтисем
Шăши пек тарса пĕтнĕ, - пĕлĕрсем.

Иккен,
Ман пьедестал ишĕлсе аннă,
Машина та пымасть крыльца умне.
Пуçлăхра чух
Шăпа пирки эп маннă, -
Атя хыçам халь хамăн ĕнсене.

Асăрханма, пулма ялан виçеллĕ
Вĕренмелле-мĕн чунпала чĕрен.
...Ахальтен мар иккен çĕрти этемлĕх
Хăй шăпинчен
Пĕрре те иртеймен.

* * *

Пушăлăхра çуралмĕ ырă шухăш,
Тĕттĕмлĕхре тапранмĕ ырă ĕç.
Тикĕтпеле пылран
Пулаймĕ тутлă хутăш,
Пулаймĕ йывăçран чи çивĕч хĕç.

Çавах та ăс хăвачĕ тем те тăвĕ:
Кĕмест-и ытама?..Ăс вăй хурать!
Вутчуль çумне тытатăн та, ак, ăвă -
Çулу çапать те – хĕм вут кăларать.

...Çĕн пулăм
Чун хĕлхемĕнче тухать.
1.09.2002

* * *

Çĕнĕ хапхаччĕ сирĕн.
Хыр хапхаччĕ.
Куçа вăл илĕртетчĕ таçтанах.
Инкӳ ăна час-час уçса тухатчĕ.
Кĕтеттĕм эп
Эс тухасса кăна.

Эп кĕтрĕм, кĕтрĕм.
Кайрĕ харама.
...Ятлатăп халь хама.
Пулман-и вăйăм ман
Çĕн хапхана уçма?
13.10.2002

## ШУРĂМПУÇ ХĂПАРАТЬ

Савнăç та хурлăх йăлтах иртсе кӳрĕ:
Сывă пул, сывă пул,
Тăван шкул.
Чӳрече умĕнче вĕрене пуçне тайрĕ:
«Ăнăçса пытăр сирĕн умри ирĕк çул!»

Укăлча патнелле йышпала çул тытатпăр,
Кашнин хăйĕн телейĕ умра.
Шурăмпуç хăпарать, эпир уççăн куратпăр:
Ав, хĕвел те тухасшăн, шевле йăлтăрать.

Хĕвеле кĕтме ырă, шевли çуттăн-çуттăн
Тăванла туйăмпа пуç çинче вăй вылять.
Эп куç хывнă пике пуçласа питĕ тутлăн
Юлташсем умĕнчех ыталать, чуп тăвать.

Чечексем, чечексем – тюльпанпа çут нарцисĕ
Ачаш шăршăпала илĕртеççĕ чуна.
Çамрăкла пуçланать каччăпа сар хĕр чысĕ, -
Пуçсем кĕмĕлленсен те упрасчĕ ăна.

Шурăмпуç çĕкленсен кăмăлсем те тулаççĕ,
Шурăмпуç тăрăшса çĕн куна вăй парать.
Ав, пулас ĕçченсем алла-аллăн утаççĕ,
Пирĕн шкул, тăван шкул, малаша çул уçать.

* * *

Кăшт пур-тăк чунра тараватлăх
Ырра кĕтме пулĕ çынран.
Пĕлеп: çурта тĕпĕ пит хаклă
Чĕртмен те çунман çуртаран.

Çунатсăр этем те çунатлă
Пулма пултарать тăрăшсан,
Хăватсăр чухне те хăватлă
Чĕрÿ чăннипех юратсан.
1.09.2002

* * *

Çут çанталăк пăхăнать пире,
Тетпĕр те – пурнатпăр уямасăр.
Тĕрлĕ имçамсем сапса хире
Тырпула варлатпăр шутламасăр.

Кайран аптăратпăр нишлĕхпе,
Ачасем ÿсеççĕ вăй-хăватсăр.
Çапла пĕтеретпĕр йăх-тĕпе,
Кун-çул йĕркине хуллен вататпăр.

Çут çанталăк ăссăр мар иккен,
Шухăшлать вăл, -
Пур хăй майĕ-шывĕ.
Ним те ан çухалтăр çĕр çинчен:
Çавăн чухне пулĕç ырă-сывă
Тÿпере те тинĕс тĕпĕнче...
1.09.2002

* * *

«Çăлтăрпа çăлтăр калаçать...» тесе
Çырма пултарнă çын ĕмĕрлĕх гени.
Вăл пăхнă тӳпене хыт тĕсесе,
Унта вăл ангел вĕçнине ĕненнĕ.

Самрăк пулсан та,
Ăслăран та ăслă
Тĕпчевçĕ пек вăл курнă тĕнчене.
Вăл Пушкинăн ĕçне малалла тăснă,
Каланă яланах тĕрĕссине.

Шел, Пятигорск тăрăхĕнче пулман, -
Эп дуэле кайма памастăм ирĕк.
Анчах та сăвăça –
Лермонтова – чарма
Вăй çитĕ камăн? Шăпа çирĕп, -
Ăна никам та хирĕç тăраймасть.

Ун сăввисен ытамĕнче çӳретĕп:
Вăл ăс парать, кӳрет мана вăй-хал.
Ун парăсне куратăп та, -
Ишетĕп
Нихçан курман,
Пĕлмен пуласлăха...
20.10.2002

* * *

Манӑн ҫамрӑк кунсем –
Вӑйӑ-кулӑллӑ вӑхӑт,
Манӑн ҫамрӑк кунсем –
Юрату та ĕҫ-пуҫ.
Ай, мĕскершĕн эсир
Иртсе кайрӑр-ха хӑвӑрт?
Мĕншĕн ĕлĕкхи пек
Витĕр мар манӑн куҫ?

Сар хĕрсем иртсе кайĕҫ, -
Хурланса юлать чунӑм,
Текех хĕм сирпĕтсе
Ташлама тухас ҫук.
Тен, шĕвелчĕ пуль ман
Ӳт-пĕвре вылян юнӑм, -
Кĕреке умĕнче
Сарлакан юрлас чух
Сывлӑш тыткӑчĕ ҫук,
Сас хӑватсӑррӑн юлнӑ.

Сассине тупма пулĕ,
Пĕр черкке эрех сыпӑп,
Халӑхпа, йышпала
Янраттарӑп кӑна.
Ӑсĕ-пуҫĕ ан пĕттĕр,
Ӑс пулсассӑн эп тытӑп
Халиччен ҫын пĕлмен
Тинĕсри чĕр чуна.

Ӑсĕ пултӑр, ан пĕттĕр,
Ун чух тĕплĕн эп ҫырӑп
Хамӑн халӑх кун-ҫулĕ,
Малашĕ ҫинчен.

Эп пӑлхар патшипе
Юнашар утса пырӑп,
Тӗлӗнсе пӑхса тӑрӗ
Пире ҫут тӗнче.

Пулмӗ тетӗр-и?
Темӗн тума та
Пултарать сӑнар урлӑ
Чӑн-чӑн ҫыракан.
Ӗмӗрсем витӗрех
Ҫивӗч куҫлӑн пӑхатӑп, -
Ӗмӗрсем йыхӑраҫҫӗ:
Йӑлт упра та ан ман !..

Манӑн ҫамрӑк ҫулсем –
Вӑйӑ-кулӑллӑ вӑхӑт.
Вӑл этемлӗх ачалӑхӗ
Евӗр иртет.
Пурте, пурте, - шутла-ха, -
Иртет питӗ хӑвӑрт,
Ҫиҫӗм ҫиҫет,
Аслати кӗр-кӗрлет,
Ҫӳҫ кӑтри те пӗтет,
Шурӑпа витӗнет.

Сар хӗрсем иртнӗ чух
Куҫ пӑхать, куҫ пӑхать...
Хӗр утти
Чунӑмри
Ватлӑха мантарать.
9.08.2002

* * *

Йӗрес килет хӑшпӗр чухне,
Ытла та чухӑн пурӑнатпӑр.
Ыйткалакан ачасене
Ҫаплах-ха урамра куратпӑр.

Мӗскершӗн? Мӗншӗн? Час-часах
Пӗр-пӗринчен эпир ыйтатпӑр.
Пӗтерейместпӗр ӑнланса,
Татса пӗри те калаймастпӑр.

Ҫӗр айӗнче те ҫӗр ҫинче
Пуянлӑх ҫук-и сан, ҫӗр-шывӑм?
Пуянлӑхӗ кам аллинче?..
Тӗпчеме тӑр...юлмастӑн сывӑ.

Тӑр кӑнтӑрлах пӑшал перет.
Перекенне хӑҫан тытайӑн?
Утса пыракан ҫын вилет, -
Вилекеннин пурах-ши айӑп?

Йӗрсен те канӑҫмасть вӗт чун.
Тарӑхнипе те усӑ ҫук.
Мӗн парӗ-ши ыранхи кун?
Пурнас килет – пурӑннӑ чух.

«Ҫуралнӑ ҫын телей курма...»
Тесе калатпӑр час-часах.
...Ай, вӗренесчӗ пурӑнма,
Тӑван ҫӗр-шывӑм, тӑрӑшса.
20.10.2002

* * *

Ыр кӑмӑллӑ ман пирӗштийӗм
Вӗҫсе иртсессӗн пуҫӑм ҫийӗн
Пӑхатӑп шиксӗррӗн мала,
Вӑл ҫутатса тӑрать ҫула.

Туятӑп эпӗ уҫӑ варкӑш,
Ҫунаттине сарать пек акӑш,
Курӑнмасассӑн та куҫа,
Вӑй-хал кӳрет ман пурнӑҫа.

Ҫӗнелнӗнех туятӑп чунӑм,
Вӑрӑмланса пырать пек кунӑм.
Куллен эп кӳленсе ӗҫе,
Тататӑп хамӑн тивӗҫе.

Ман ӗмӗрӗн ыр пирӗштийӗ
Лавӑм ҫине, тен, йывӑр тийӗ?
Тиетӗрех! Аван унпа...
Ун аллинче вӗт ман шӑпа.
18.08.2002

* * *

Мĕн тăвăпăр? Турри çырман...
Çавах та савнă пĕр-пĕрне.
Эп пĕлнĕ эсĕ пурăнан,
Тĕл пулнă хулана тухсан,
Калаçкаланă хăш чухне.

Çав çеç...Шикленнĕ элекрен.
Илтес килмест усал ята.
Упраннă эсĕ чĕрере
Кирек хăçан та пит шалта.

Халь иккĕн...Иккĕнех эпир.
Çырлаллă, мăйăрлă вăрман,
Умра тырпуллă уй-хир
Пире илеççĕ ытама,
Пилне параççĕ пурăнма.
18.08.2002

* * *

Ача вăй-халсăр тĕнчене килсен,
Йăлтах амăшĕнчен килет кун-çулĕ.
Тăван киле, тен, каймĕç те илсе?
Çуралнăскер, больницăрах, тен, юлĕ?

Кайран кăкăр сĕтне те тутанаймĕ.
Вăл йĕрсе выртĕ йӳç куççулĕпе.
Тек амăшне нихçан та вăл кураймĕ,
Çывăрса кайĕ ют лăпканипе.

Курмаллине ача йăлт курĕ, тӳсĕ,
Ăс пухĕ пур йывăрлăха çĕнсе.
Çавах та çирĕп çын пулса вăл ӳсĕ,
Вăл калĕ çĕр-шыва Анне тесе.

Ача пит ӳпкелемĕ шăпине,
Туятăп: тасан тăсĕ йăх-тĕпне.
18.10.2002

* * *

Сенкер тӳпе куҫлӑ
Чипер сар хӗре
Каларӑм эп уҫҫӑн:
«Ҫунать ман чӗре...»

Вӑл пӑхрӗ, йӑл кулчӗ, -
Таса куҫӗсем
Чӑн-чӑн шанчӑк пулчӗҫ
Йӑл-йӑлтӑр ҫиҫсе.

Сӑмах кирлӗ мар-мӗн
Куҫсем калаҫсан:
Ахаль йӑлтӑрамӗҫ
Вӗсем хӗм сапса.

Хӑюлӑх та кирлӗ, -
Ырлатӑп хама.
Юратӑвӑм вирлӗх
Парать чунӑма.

Сенкер тӳпе куҫлӑ
Маттур сар хӗре
Калатӑп эп уҫҫӑн:
«Эс ман ӗмӗре...»
18.08.2002

* * *

Хапсăнмастăп нумая,
Ман упрасчĕ çеç вăя.
Тытас мар алла туя, -
Ура уттăр пĕрмаях.

Куç та куртăр,
Тĕл тĕллетĕр,
Пуç та
Хальхи пек ĕçлетĕр.

Алă та хальхи пекех
Кӳлтĕр ĕçлĕхлĕ пĕкке.
Арăм та хĕр евĕрлех
Култăр.
Çунтăр ман чĕре.

Маншăн çак нумай пулать-и?
Капла пурăнма эп хатĕр.
5.08.2002

* * *

Ёнерхишĕн паян чуп тусан,
Çылăху иртсе кайĕ-ши сан?

Хытă кĕтнĕ сана эп ёнер,
Тĕттĕм витĕр тинкернĕ çула.
Автан авăтрĕ виççĕ...Ёнен.
Хуçрăн манăн хĕрӳ кăмăла.

Юратать-тĕк кĕтет тетĕн пуль?
Куçăма тулчĕ манăн куççуль.

Вăл юхмарĕ пит тăрăх вĕрин.
Чун чул мар çав... Анчах хĕр чĕри
Питĕ çирĕп иккен. Вăл чăтать,
Асап витĕр хаваслăх курать.

Ёнерхишĕн паян ан чупту.
Ёнерхи таврăнмасть каялла.
Пур пулсан чĕрере Юрату,
Малаша, ырана утмалла...

Шухăшлатăп ялан эп çапла.
4.08.2002

* * *

Гвиччиоли те Августа, Ада –
Байрон сăвăçшăн çуннă вĕсем.
Ыттисем те пур, - лайăх куратăп, -
Хăй патне туртатех çав илем.

Сăвăç чунĕ ялан та çунатлă,
Ун чĕри, - пĕлнĕ пул, - чăн вулкан.
Савнă чух вăл савать пит хăватлăн,
Сивĕнсен – таврăнмасть нихăçан.

Ахальтен-и хăйне Манфред евĕр
Туять Байрон, - тĕнче кисренет.
Ту çинчи аçа-çиçĕм кĕрлевĕ
Хут çине ĕмĕре йĕрленет.

Греције ирĕке кăларасшăн
Вăл ахаль-и каять Англирен?
Вăй хурать вăл малашлă шăпашăн.
...Эп пĕлместĕп-ха: çак таранччен
Пĕр никам хăтăлман вилĕмрен.

Юрату, Кĕрешӳ, Сăвă терчĕ
Йăлт хавшатнă ун пуç мимине.
Пултарулăхĕ чĕррĕн çитерчĕ
Çут тĕнчемĕр умне
Ун ятне.

Байронпа юнашар çамрăк Шелли
Утнă май сăвă чысĕ ӳсет.
Тинĕссем те шап-шурă çилхеллĕ...
Пирĕн Çеçпĕл те шух тинĕсе
Вĕсем пек савнă çирĕп, хĕлхемлĕн.

Акă,
Нуся та Августа, Ада
Тăраççĕ
Сăвăççем çинелле тинкерсе.
Ĕмĕрсем урлă çывăх куратăп:
Йăлтăраççĕ вĕсен куçĕсем
Чăн тасалăхпа çылăх сĕнсе.
Сăвăççен чунĕнче эп туятăп
Юрату тăнине хĕмленсе.
1.08.2002

* * *

Хăшпĕр чухне йĕрем-и эп пĕччен,
Çавах та тăван халăх умĕнче
Çут сăнпала тăрас килет куллен:
Мĕншĕн тесессĕн ку пĕр манăн хуйăх, -
Арман чулне кам илĕ-ши хуллен
Чĕрем çинчен?
Вылять-и çăлтăрсен таса çут уйĕ,
Çавăн чухне пур уйăхăн ыр туйĕ, -
Ир килессе систеретех-çке Тухăç,
Анчах ман еннелле вĕçет
Тĕлленĕ ухă.
Ман мĕн тăвас?..
Паян килмест пулсассăн
Маншăн çур çĕр, -
Ыран çĕкленсе лармĕ кун-çул çурчĕ.
Апла пулаймĕ мăшăр юнашар, -
Ун чух мана пĕр ним те кирлĕ мар.
Çавах та халăх ăнлансассăн туйăма,
Эп пултаратăп ĕмĕр пурăнма.
25.11.2002

* * *

Сӑмах хакне пӗлес пулать:
Вӑл ылттӑнран та хаклӑрах.
Сӑмах сана кун-ҫул парать,
Е пурнӑҫа татса хурать.

Сӑмах виҫи те пулмалла:
Каятпӑр хӑш-пӗр чух хӗрсе.
Хыҫалалла та малалла
Витӗр куҫпа пӑх тимлесе.

Сӑмах ачаш, сӑмах хаяр,
Пит йывӑр ӑнланса илме.
Ҫавах та иртӗхен вӑя
Пултармалла сан ҫӗнтерме.

Кам улталать, кам элеклет,
Пӗл витӗррӗн тӳрех курма.
Тепри йӑпӑлтатса кӗрет
Сан шанчӑка – сӑтӑрлама.

Сӑмах кӑтартӗ кун хакне,
Унра – таса хӗвел ҫути.
Ас тивӗн те хӗр тутине,
Эс пӗлӗн, - мӗн вӑл пыл тути.

Сӑмах – вӑл туслӑх та юлташ,
Ӗмӗрлӗхе тӗрек парать.
Ҫула тухсассӑн ан аташ,
Тӗллев ҫеҫ пулӑшса пырать.
26.10.2002

* * *

*Валери Туркай сӑвӑҫа хисеплесе*

Шӑллӑм теме парсассӑн ирӗк,
Эп калӑп яланах ҫапла.
Чӑвашлӑхшӑн тӑратӑн ҫирӗп,
Чакса курман эс каялла.

Панӑ сӑмахӑн тӗшшине эс
Хальччен нихҫан та ҫухатман.
Ӗҫе тӑватӑн тӗплӗн, тӗрӗс,
Ӑсна та ҫил ҫине яман.

Хӑш чух, пӗлетӗп, сана йывӑр.
Поэт чӗри – хӗрӳ чӗре.
Кашни нуша чунна пит ҫывӑх, -
Хӗн-хур нумай-ха тӗнчере.

Ҫавах та ҫамрӑклӑх хастарлӑ,
Алла усмашкӑн юрамасть.
Сӑвӑ ҫырни – хӑех патварлӑх,
Ҫырни пуҫа усма памасть.
Пур санӑн сум, пур санӑн ят та,
Пӗлетӗн, шӑллӑм, вӑй хума.
Атя, кашни куна туптатпӑр
Ӗҫченсене телей пама.

Эс ҫеҫпӗлле вӑя пухатӑн
Пӑхса таса малашлӑха.
Апла, сар ҫунатна хӑлатӑн,
Памашкӑн алӑ уҫлӑха.
21.07.2002

* * *

Йывăçсем те пĕр-пĕрне параççĕ ăшă,
Йывăçсен те пур иккен хăй евĕр măшăр.

Ахальтен-и кĕрлĕ-çурлă сапнă тĕшĕ
Йăлтăр кунсенче
Шăтса тухать вĕт кĕшĕл.

Çавăн пек-мĕн
Çаврăнса пырать кун-çулăм,
Йывăçсен те, этемсен те
Пур иккен хăй майлă çулĕ.

Пĕрисем ӳсмесĕрех хăрса лараççĕ,
Теприсен сухалĕ те шăтман – каяççĕ.

Çавăнпа та
Кашниннех шăпи телейлĕ, хурлă,
Калăр-ха? -
Кам каçнă, иртнĕ шăпа урлă?
7.06.2002

* * *

Илсе кайрĕç сана çырăнма
Пирĕн умран,
Чӳрече умĕнчен.
Эп тухасшăнччĕ хирĕç тăма...
«Хăй килĕшнĕ, - терĕç
-Сана пĕлтермен...»

Ахалех мĕн вылятнă сăмах.
Юрату...Чуп тăву...Мĕн тума?
Эп пĕлетĕп: укçа ун нумай...
Укçаран халĕ хĕн пăрăнма.

Укçапа Юрату...Тĕлĕнетĕп!
Халь ăçта-ши Джульетта, Нарспи?
Пурпĕрех ыррине эп кĕтетĕп,
Пур!.. Пурах Юратун ыр шăпи.

Укçапа та пулаççĕ тет хăрхăм.
Çук вĕт, çук чĕрере килĕшӳ.
Шурă пурçăн çине ӳкнĕ хăрăм
Кун-çул мар, -
Парать çеç хĕвĕшӳ.

Сывă пул... Алăпа та сулмастăп...
Ырăпа, усалпа асăнмастăп.
21.07.2002

* * *

*Чăвашрадиора вăй хуракан,*
*ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченне –*
*Петр Андреева сума суса, хисеплесе*

Тăван халăх кĕввине
Чунпа тĕпчерĕн,
Юрă ылттăнран та хаклĕ терĕн.

Ылттăн мĕн вăл,
Кĕмĕл мĕн вăл тĕнчере?
Халăх кăмăлне
Упрать таса, маттур чĕре.

Сывлăш хумĕпе вĕçет чăваш сасси,
Инçете илсе каять ыр çил касси.
Чăн культура уй-хирне
Куратăн витĕр,
Ас-халу кӳрет
Пурне те ырă витĕм.

Эс çакна туятăн-и е çук-и? -
Кам пĕлĕ?
Сан ĕçӳ-хĕлӳ
Калатăп тӳррĕн: - Кĕлĕ!..

Пит сахал сан пек çынсем.
Мĕн тăвăн?
Çавăнпа сана савса
Çуралчĕ сăвă...
6.07.2002

* * *

Шăпчăксем хĕрсе кайса юрлаççĕ
Çыран хĕрринчи çĕмĕртлĕхре.
Вĕсен кĕввипе çеçке сураççĕ
Чиесем, улмуççисем ирех.

Шăпчăк юррине парăнать сивĕ,
Тăм ӳкме те пăрахать хуллен...
Ман чуна хускатрĕ мăшăр çивĕт,
Хĕр утти те илĕртет иккен.

Вăраха пыринччĕ çурхи туйăм,
Çеçке пек ан тăкăнтăр çĕре.
Такан евĕр курăнать çĕн уйăх,
Телей суннă май иксĕмĕре.

Çеçке ӳкĕ, чăмăртанĕ çимĕç,
Çумăр хăйĕн нӯрлĕхне парсан.
Тăван çĕрĕн ырă имĕ-симĕ
Савăнтартăр кашнине чунтан.

Шăпчăкĕ, сар кайăкĕ юрлатăр,
Тăтăр çеç тавралăх янраса.
Пан улми сĕтеклĕн чăмăртантăр,
Килес кĕршĕн туратне усса.
18.05.2002

* * *

Анне сăмахĕ -
Кун-çул ахахĕ.
Атте калани –
Ĕмĕре тăсни.
21.05.2002

* * *

Пӗлетни, эсӗ,
Мӗн вӑл ҫын хапи?
Вӑл кӗлетке, пуш кӗлетке.
Ҫавах та
Пур вӗт ун шӑпи,
Шӑпи – ҫуман пӗлӗт пекех.

Ҫумасть пулсассӑн,
Ҫумастех, -
Тӑрӑшмалла, ҫутармалла.
Килменнине килтермеллех,
Савманнине – савтармалла.
Шутланӑ чух ӗмӗр ҫинчен
Ҫӗн уйӑха та асӑрха.
Ҫӗр тӗнӗлне ҫак таранччен
Тикӗт сӗрсех тӑратпӑр-ха.

Ҫын хапине чӗртме пулать,
Вара
Пуш кӗлетке хӗм кӑларать!
6.06.2002

* * *

*Петӗр Ҫӑлкуҫа*

Кунсем-ҫулсем шӑваҫҫӗ хӑвӑрт,
Мӗн тӑвӑн? - ҫитрӗн те алла.
Ҫӗре ҫитме вӑй патӑр сӑвӑ,
Ут малалла та тӑвалла!
5.06.2002

* * *

Паян мĕн пуласса
Пĕлсен,
Каяссăм çукчĕ пасара.
Ыран мĕн пуласса
Сиссен
Ташлассăм çукчĕ вăйăра.

Çапла.
Мĕн пуласса пĕлсен,
Эп çуралмастăп та пуль тен...
22.05.2002

## ŸКЕРЧĔК

Асфальт çинче ташларĕ çумăр
Сапа-сапа пĕрчисене.
Тусансăр сывлăш таса хумĕ
Вылянтарать çулçăсене.

Нӳр çилĕн варкăшĕ шеллевсĕр
Турат çинчи тумламсене
Çĕре тăкать ытла тĕллевсĕр, -
Тумлам кĕмест çил ывăçне.

Ав, урам урлă кантăк уçăлчĕ, -
Çутатрĕ кулă урама.
Пĕр каччăн кăмăлĕ тин хуçăкчĕ... –
Халь хатĕр вăл ташша яма.
1.06.2002

* * *

Тупнах-ши эп хам çăлтăра
Çак аслă тĕнчере?
Тен, пуçăм тăрринчех тăрать,
Ырă сунса йăл-йăлтăрать
Çав çăлтăр янкăр тӳпере?

Пурах пуль çăлтăрăмçăм ман?
Шутлатăп: татăлса анман,
Мĕншĕн тесессĕн çĕр çинче
Утса çӳретĕп-ха çаплах.
Вылять-ха куçăм умĕнче
Мăн Атăл та шавла-шавла.

Тупнах эп хамăн çăлтăра:
Вăл тӳперех, çӳл тӳперех.
Ахальтен мар ĕнтĕ чунра
Сăвă йĕрки хуллен хĕрет.
Юратăва туйса чĕре
Хула урамĕпе çӳрет.

Якур, çав çăлтăрăн çути
Сана пилленĕ кун утти...
19.10.2002

* * *

Илемлĕхре тасалăх пулмасан,
Вăл пырĕ тутăхса куллен кунах.
Тен, асăрханă? Пĕлĕт хупласан,
Хĕвел те ăшшине памасть сана.

Тавралăх тĕксĕм. Таврара – кичем.
Чечек те илĕртсех каймасть куçа.
Садра сайра юрлаççĕ кайăксем,
Çитмест те çутă - кăмăла хуçать.

Тĕсне кĕмĕл укçа та çухатать, -
Вĕренеймен эпир тыткалама.
Илем утса пырать-тĕк çумунта,
Пĕл сыхлама,
Пĕл чыслă упрама.
20.10.2002

* * *

«Турра шан» теççĕ.
Ĕнентереççĕ.
Шанни – аван.
Çавах та алла ĕç тытмасан,
Шанса çеç ларсан,
Нимĕн те ăнăçмĕ сан.

## ÇУЛÇĂ ÇУМĂРĔ ÇĂВАТЬ

Çулçă çумăрĕ çăвать
Кĕркунне çитсен.
Çулсене вăл хăварать
Сарă пурçăнпа витсе.

Çавра кӳлĕ хĕрринче
Курăнмаççĕ пулăçсем.
Кăвар пур пилеш çинче, -
Ак, çил вĕрнĕ чух
Çулăм хыпĕ вăрмана
Пĕр самантранах...
Анчах пилешпе палан
Нихăçан вут хыптарман.
Çампа шанчăклăн утатăп,
Хитре çулçă пуçтаратăп.
Кăмпасем пухать пакша,
Кăмпаç евĕр тăрăшса.
Юман хăвăлĕ - вĕлле –
Пухнă пыл... Унта сĕрлет
Йышлă та ĕçчен пыл хурчĕ, -
Тулăх, тутлăхлă ун çурчĕ.

Çулçă çумăрĕ çăвать...
Сĕр çине вырăн сарать:
Ашă пултăр тымара,
Çуркунне çитсен вара
Йышлăн тухĕ çĕн хунав.
Ешĕл тĕс çеç таврана
Савăнтарĕ пĕр кана...

Кĕр килет те хĕл килет,
Унтан çуркунне çитет...
Çапла ĕмĕр те иртет.
19.10.2002

* * *

Хамăн хака пĕлетĕп эпĕ, -
Ан пултăр манăн ылттăн-кĕмĕл.
Чунра – таса этем хисепĕ,
Кăкăрăмра – килеслĕх хĕмĕ.

Ан тив, хăшĕ-пĕри тиркетĕр...
Хăй туса куртăр ман ĕçе.
Нихçан сутмастăп тивĕçе,
Йăпăлтатса кахал çӳретĕр.

Çынсем çине пăхатăп тӳррĕн,
Нихçан сутман-çке вĕсене.
Мана тасалăх вăй-хал кӳрĕ,
Туйтарĕ пурнăç техĕмне.

Кил-йышăм чыслă та йĕркеллĕ,
Мансах кайман-ха Мускавра.
Манра – Çĕр-шывăмăр элчелĕ,
Кун-çул нуши – ман ăшăмра.

Халăхăмпа эп алла-аллăн
Утатăп ыр тĕллев патне.
Хăшпĕр чухне ăнмасть кал-каллăн, -
Чĕрешĕн хĕн ун пек чухне.

Пĕлетĕп хакăма. Çавах та
Эп каçăртмастăп пуçăма.
Тус-йышшăн кирлине тăватăп,
Усала памăп аллăма.

26.05.2002

## ÇĔНТЕРӲ ПИРЕ КУН-ÇУЛ ПИЛЛЕНĔ

Çĕнтерӳ пире кун-çул пилленĕ
Çут çанталăк чĕрĕлнĕ чухне;
Кашниех паттăрлăхпа çĕкленнĕ
Упрама йăх-тĕпĕмĕр ятне.

Çĕнтерӳ вут-çулăмĕ çунтарнă
Çын чунне, мĕнпур йĕксĕксене.
Çĕнтерӳ...хăй хыçĕнчен хăварнă
Хуласен, ялсен ишĕлчĕкне.

Ишĕлчĕк çинче çĕн никĕс хывнă
Пурнăç пуçлама яланлăха.
Ĕçпеле куллен ăнтарса пынă,
Парăнтарнă хамăр выçлăха.

Мĕнле чăтнă ачапча?
Вĕсемшĕн –
Сахăр та сайра-хутра кăна.
Çăкăрĕ те юхăннă килсемшĕн
Сайрарах килетчĕ хăнана.

Пулнă, пулнă...Çĕнтерӳ хăвачĕ
Çĕнĕ хал кашни çынна парать.
...Мускавра ирттернĕ çар парачĕ
Паян кун та куç умне тухать.

Эпир утнă пурте асап витĕр.
Миçе çын пуç хунă вăрçăра?
Юлайман пуль хĕнлĕхсĕр пĕр кил те
Хамăр аслă тертлĕ çĕр-шывра.

Юхнă юн...Çавах та йӳç куççулĕ
Хуçайман ман халăх кăмăлне.
Берлинта вĕçленнĕ вăрçă çулĕ
Тăнăç панă хурлă чĕрене.

Салтаксен йăл-кулăллă сăн-пичĕ
Орден-медальсен ялтравĕнче,
Çĕнтерӳ ялавĕпе чыс илчĕ, -
Ырлăх сунчĕ вĕсене тĕнче.

Çĕнтерӳ чечекĕсем параççĕ
Паян кун та ветерансене, -
Вĕсем çĕнĕ ăрăва сунаççĕ
Çулăмра туптанă телейне.

Манас çук. Епле ĕнтĕ манайăн
Халăхăн патвар кунне-çулне?
Çĕнĕ ĕмĕрте пурăннă майăн
Çĕнтерӳ хăвачĕ ӳссе кайĕ,
Ун салючĕ ирĕк тӳпене
Сапĕ çулленех ялтра хĕмне!
8.05.2002

* * *

Амăшĕсем, пулсамăр кăмăллă,
Сире ыйтатăп йăлăнса.
Çуратнă ачăра пит çăмăллăн
Ан хăварсамăр пăрахса.

Вăл, пĕчĕк чун, сăмах калаймĕ,
Пултараймасть ÿкĕтлеме.
Пăрахнăскер утса пыраймĕ, -
Ача сирĕн тĕле пĕлмест.

Амăшĕсем, эсир савман-и?
Ĕненнĕ ĕнтĕ йĕкĕте.
Хĕрсе кайса ыталаман-и,
Май тупăнсан, улах çĕрте.

Мĕн пуласса, паллах ăнланнă,
Анчах та пулнă çăмăлттай.
Вăхăт çитсен, ача çуралнă,
Ăна пăрахнă, - тупнă май.

Сан кăкăр каранна, сĕт юхнă,
Çавах та ĕмтерсе курман.
Мĕнле питпе çын çине тухнă? -
Ачашăн эс анне пулман.

Савма, эрех ĕçме вĕреннĕ,
Ĕçпе пит хуçăлсах кайман.
Сăр айĕнче пит кĕренленнĕ,
Сăрланнă, - намăс курăнман.

Сан пепкÿне халь ача çурчĕ
Пăхать те — чыслăн ÿстерет.
...Каллех, каллех сан çие юлчĕ, -
Ачушăн пулмăн эс тĕрек.

Амăшĕсем, шухăшласамăр:
«Анне» сăмах пĕлтерĕшне
Чи чыслă ят эсир тусамăр, -
Вăл илем кĕрттĕр çĕр питне.
4.05.2002

* * *

Чăнах та, юрату тĕлĕнтерет, -
Кăтартĕ ырлăх, çавă вăхăтрах
Вутпа çунмашкăн тытăнать чĕре,
Темскер хĕсет, тытать ман кăкăра.

Ак - ăнăçу та савăнăç умра,
Ăнтăлса çеç утатăн малалла.
Шутлап: телейĕм яланах çумра,
Сисместĕн те – вăл устарать алла.

Капла мĕнле иртгерĕн пурăнса?
Шанчăкĕ пурччĕ, - вăл ăçта, ăçта?
Ирĕксĕртен куççулĕ юхтарса
Çӳремелле-и?.. Юрату утать.

Ман паталла йăл-йăл кăна кулса,
Пуласлăха чĕнсе те йыхăрса.
20.10.2002

* * *

Тӗлӗнтерет мана ҫак ҫут ҫанталӑк.
Мӗскершӗн-ха вӑл пӗр хӗре кӑна
Илемне панӑ? Пур ҫӗрте те паллӑ.
Ҫунатӑн уншӑн, - чунӑм та ҫунать.

Пӑхать те ыррӑн, - тӳпере вӗҫетӗп,
Кулли те ун тавралӑхра пӗрре.
Калаҫӑвне пӗр вӗҫӗмсӗр итлетӗп,
Чи ҫепӗҫ туйӑм ҫеҫ ман чӗрере.

Умра тӑрать пек асамат кӗперӗ, -
Пӑхатӑп куҫ илмесӗр ун ҫинчен.
Эп улӑхӑн-ҫаранӑн та ҫӳрерӗм:
Хӗр маншӑн — пур чечексенчен чечен.

Атӑл хӑви пек яштака ун пӗвӗ,
Ҫӗр тӑрӑх вӑл утать ҫирӗп пусса.
Хыватӑп кулленех эп уншӑн кӗвӗ, -
Кӗвви яланлӑх пытӑрччӗ усса.

Епле-ха ҫут ҫанталӑка халь ятлӑп?
...Чуна кӗрет те Юрату хӑватлӑн,
Ҫунат та ҫук, - пулатӑн эс ҫунатлӑ,
Улмуҫҫисем умрах чечек ҫураҫҫӗ,
Асамлӑхне сана йӑлт кӑтартаҫҫӗ.
Кам юрататъ, - ун куҫӗ умӗнче
Яр уҫӑлса каять вӗр-ҫӗн тӗнче...
2.05.2002

* * *

Мĕскершĕн юрату ытла хаяр?
Мĕн-ма ултавлă, савăнăçлă, ырă?
Ак санпала ларать вăл юнашар,
Эс тăрса утăн, - çуммăнах вăл пырĕ.

Паян сана ăнăçу çеç парать,
Шутлатăн савăнса: ак çитрĕ канăç.
Чуну тӳпенелле çеç хăпарать,
Шур акăшсем те туслăн умна анĕç.

Ирĕкӳпех лекетĕн тыткăна, -
Унтан мĕнле майпа-ши хăтăлайăн?
Ху телейне пит çирĕп тыт кăна, -
Пурăнăçна телейсĕр, çук, тăвайман.

Ыран вара куççулĕпе йĕрсе
Ним тăваймасăр халсăррăн ларатăн.
Эс чухăн...акă, кивçене кĕрсе,
Ыйткалакан майлах нушаланатăн.

Чип-чиперехчĕ...Кам инкек ярать?
Кала-ха, Юрату, мĕн хăтланатăн?
Хĕвел пур, ним пĕлмен пек йăлтăрать...
Çут уйăх, пĕлĕтпе ма хупланатăн?

Чунпа чĕре вылявĕ те нуши
Пурах иккен чăн аслă юратушăн.
Сивве сирсе таса кун-çул ăшши
Пурĕпĕрех умна тухмалла туслăн.

Апла юратăва айăплас мар, -
Кам çирĕппĕн тухать инкексем витĕр,
Ӳт-пĕвĕнче чĕртсе таса кăвар
Ялан та хăй тĕллевĕ патне çитĕ...
2.05.2002

* * *

Çĕрпеле пĕлĕт пĕрлешен тĕлтен,
Тухăç енчен,
Шевлисене хĕвел сапма пуçларĕ.
Хĕвел çаври хуллен çеç шĕл кăваррăн
Пур сĕмлĕхе сирсе çунтарчĕ мар-и?
Çухалчĕç пĕлĕтсем,
Кун тап-тасан
Пуçланнине туйсан,
Ирхи туйне тапратрĕç кайăксем.
Хĕвелĕн пичĕ йăлтăркка, кулать,
Ахах пек сывлăм йăлтăрать.
Упаленет шыв тăрăх шур тĕтре.
Кун пек чухне çупах аван кĕрет, -
Ахаль-и çыранта кăвайт хĕрет?
Хĕвел тӳпенелле
Тек кармашать:
Мĕн пулнине çĕрле
Пĕлмешкĕн тăрăшать.
Каç сĕмлĕхне йăл çутă çĕнтерет,
Вăл паттăр пек çӳрет.
Хуçаланма пуçлать патваррăн кун,
Çĕр ырлăхĕ - хĕвел, тĕнчешĕн куллен çун
Вăраннă ĕнтĕ паçăрах ĕçлĕхлĕ чун.
Илемлĕ - таврара,
Сĕмлĕх тек çук.
Этем шанса ырра
Пурнать çакăн пек чух.
30.04.2002

* * *

Вĕçĕ пулать кун-çулăн та... – Пĕлетпĕр.
Анчах та шутламастпăр ун çинчен.
Ĕç ăннă чух хĕрсе кайса ĕçлетпĕр, -
Ан пултăр намăс çăкăр умĕнче.

Шăвать эрне, систермĕ - уйăх тулĕ,
Çулталăк та хăй майĕпе иртет.
Çак хушăра мĕн тунă эс, мĕн юлĕ
Аса илмелĕх санăн пӳлмӳнте?

Хĕвел эпир кайсан та тухĕ, анĕ,
Юрсем те, çумăрсем те çăваççех.
Юрри те пулĕ,
Пулĕ ташлаканĕ,
Хĕрсем те, каччăсем те сываççех.

Хăй йĕркипе утса пырать вăл пурнăç,
Çын çавăнпа вĕçне пĕлесшĕн мар.
Вăл савнăçне те, хурлăхне те курнă,
Апла ăна малашлăх кăна пар!
30.04.2002

## АСЛӐ АТТЕЛӖХ ВӐРҪИ...

I

Аслӑ Аттелӗх вӑрҫи
Паян кунччене пырать.
Хӗвеллӗ кунсем...ҫавраҫил...
Ҫуран та ҫаплах сурать.

Пуля вӗҫет шӑхӑрса,
Бомба хӑруш ҫурӑлать.
Салтак, окопран тухса,
Тӑшман еннелле ыткӑнать.

Вилӗме хирӗҫ тӑрать
Пӗтӗм ҫӗр-шыв вӑйпа,
Ҫӗнтерме ҫеҫ сӑмах парать,
Хӗрӳллӗн тӑвать тупа.

Тӑватӑ ҫул ытла
Юнлӑ вӑрҫӑ куллен хӗрет.
Ҫулӑмлӑ ҫулпала
Берлина штурмпала кӗрет.

Ялав – Ҫӗнтерӳ ялавӗ -
Вӗлкӗшет рейхстаг ҫинче.
Кун-ҫулӑн паттӑр шавӗ
Йӑл илет
Тӗнче
Умӗнче!

2

«Мӗн курнӑ эсир тылра?» –
Илтетӗп хӑшпӗр ҫынсенчен.
«Мӗн ҫинӗ-ха эс фронтра?..» –
Ыйтатӑп хуллен вӗсенчен.

Эп кун пирки шикленмесĕр
Калатăп çапла малалла:
-Тылри ĕç-пуçа пĕлмесĕр
Эсĕ ытла ан шавла.

Тырпул ӳстернĕ уйра,
Вăй хунă тылри хресчен.
Ача-пăча акара
Вăкăрпа сухаланă куллен.
Салтак татăлман
Çăкăртан.
Пушмак-атă та пулнă ялан...
Гимнастерка та пур çире.
Станок умĕнчи ачасем
Фронта панă тупă, йĕтре.
Аннесем те маттур хĕрсем
Ларман ал усса, йĕрсе.

Тылпа фронт туслăхне
Манас мар ĕмĕрне.
Тылри ĕçченсен алли
Хатĕрленĕ йăлтах фронт валли...

Çавăнпа та тылри ĕçчене
Эп паян салтакпа пĕр танах
Хакласа лартнă пулăттăм палăк.
Унта пирĕн чунсен пĕрлĕхне
Пĕлсе тăтăр кашни яланах,
Курса тăтăр тăван ырă халăх!
12.05.2002

* * *

Мĕскершĕн эп ку таранччен
Пĕлмен?
Çĕлен тумне улăштарать иккен.
Вĕр-çĕн тумпа шăвать вăл йăлтăрса...
Çĕнĕ тирпе...çавах илет сăхса.
29.04.2002

* * *

Сана савап тесе вăл ыталать,
Анчах та куçĕпе теприн çине
Хулпуççи урлă кармашса пăхать, -
Эс ĕненетĕн унăн сăмахне.

Пĕлесчĕ ман: çапла миçе çынна
Каланă-ши ултавлăн уртăнса?
Хăй сăмахне вăл курнă-ши тытса?
Чун çук-тăр унăн? - сăмахсем кăна
Выляççĕ пуль чĕлхе вĕçне тухса...

* * *

Хăшпĕр чухне
Шăпа хăйăр çине
Лартса парать пире хăй çурт-йĕрне.
Никĕсĕ пур-и çуртăн? Çук пулсан,
Пурăнăçу ăнăçса пымĕ сан.

Тухсассăн тăвăл, çăмăл хăйăра,
Ним мар, тепĕр çĕре вăл куçарать.
Никĕссĕр çурт та ишĕлсе анать.

Шăпа ултавлă. Ун çине шанса
Тăваймăн пурнăç. Çавăнпа ĕçре
Эс тăрăш куллен-кун вăйна хурса,
Кĕреш юман çеç вырттăр никĕсре.
29.04.2002

* * *

Кашни этемĕн çылăхĕ пурах:
Çын арăмне куç хывнă-мĕн пĕри,
Тепри вăралнă витерен çура,
Хăшĕ-пĕрин ытла чĕри вĕри, -
Темиçе хĕр пуçне те çавăрать.

Мĕнле тасалмалла-ши çылăхран?
Каçать-ши вăл куллен çурта çутсан?
Ăнлантарса кам парĕ кун пирки?..
Пурах ĕнтĕ, пурах кун-çул йĕрки.

Чи айăплă çынсем те Тӳперен
Ыйтаççĕ каçару чун-чĕререн.
Тытаççĕ типĕ, сăхсăхаççĕ вирлĕ,
Тен, хăшпĕр чух чиркӳ лартни те кирлĕ
Таса çĕрте, хуламăр варринче,
Шевле вылятăр хĕрессем çинче.

Усалĕ илĕртсех тăрать пулсан,
Эс пĕл ăна чунпа хирĕçлеме.
Çын асапне асапу пек курса
Пултар тăванлăн хăв çине илме.

Пит йывăрпа каçать-мĕн тунă çылăх,
Çавах та эс çылăх çăмхи ан пул.
Кĕлĕпеле куллен пулсамччĕ çывăх,
Хĕн-хур пулсан та çынлăхра çеç юл.
«Кашни этемĕн çылăхĕ пурах»,
Тесе нихçан та аллупа ан сул.
...Асра тытсах тăр вĕçĕмсĕр Турра...
26.04.2002

* * *

Пĕлетĕп: Турă сучĕ пулатех.
/Унта пĕлтермелле тет тĕппипех./
Чунсем, ак, тăрĕç ун умне пырса...
Шутланă май каятăп çывăрса.
Чăнах ыйтать: «Йăлт парăр каласа...»
-Мĕскер калас?..Пĕлетĕн ху веçех...

«Йăлтах ман хăвăртан пĕлес килет.
Тен, пурăннă эсир тĕрĕсех мар?
Тен, кĕртнĕ юттине хăвăр киле?
Усалпала, тен, тăнă юнашар?
Йăлт калăр хăвăр, юрамасть суйма...»

Хăратăп ĕнтĕ çăвара уçма,
Кăлт-калт тĕкетĕп хамăн арăма.
Вăтанчăклăн пăхать мана куçран,
Хушать пек: «Ху каласа пар малтан...»

-Эп çырнă сăвă...Тӳпере те вĕçнĕ.
Тăван халăхăма улталаман.
Юттисене те пăхнă. Эрех ĕçнĕ.
Чирке кайсан,
Çурта лартма манман...

«Суймастăн пек...Тӳп-тӳррĕн калани
Хăвăн чунна яланлăх тасатни.
Анчах та эс мухтанă Сталина...»

-Эп пĕччен мар. Çаплаччĕ самана.
«Ан йăвантар эс самана çине...
Мĕн чухлĕ çын ăсаннă тĕрмене?
Хăшĕ-пĕри çеç таврăннă килне...»

-Çавах та эп сутман юлташсене...

«Çылăхлă чун, калатăн чăннине...
Çавах сана кĕртеймĕп çăтмаха...»

-Вилмен вĕт эп?..Ман вăхăт пур умра, -
Куç уçнă май калатăп сăмаха.
Ак тĕлĕнтермĕш, - арăм та çумра...
Çавах та шел. Вăрантăм иртерех.
Эп илтеймерĕм арăм сăмахне;
Тепре çинче пулатăп чеерех,
Малтан калаçтаратăп-ха хăйне.
25.04.2002

* * *

Чăнлăха кун-çул тĕвви эп тунă,
Никĕсре тăван чăваш чĕлхи.
Паянхишĕн тăрăшнă, вăй хунă,
Чĕнсе тăнă ыррăн ыранхи,
Малаша кĕтсе чун-чĕре çуннă.
2002

* * *

Юхан шыв та юхĕ каялла
Ман чĕрен чăн асапне пĕлсен.
Сăрт та тикĕс вырăн пулмалла
Кăкăрта хĕм тăнине сиссен.

Мĕншĕн ултав пур-ши тĕнчере,
Унăн никĕсне кам аркатайĕ?
Вăл вара ним пулман пек çӳрет,
Туслă кил-йыша та кĕрсе кайĕ.
Эп пĕлеп: вĕри хĕвеллĕ кун
Сивĕпе те улшăнма пултарĕ.
Анчах шанчăкпа пурнакан чун
Пылчăкпа хăйне нихçан вартармĕ.

Çирĕп туйăм пылакне туйсан,
Хăй йăвишĕн пурте тăрăшать.
Кун-çула ахаль айăпласа,
Ĕçсĕр çунтарса лармасть ăша.

Юхан шыв та кутăн юхас çук,
Сăрт та ларĕ пирĕн çул çине.
Сывă пултăр çеç хĕрӳ пуçу,
Куççуль курам мар куçусенче...
27.04.2002

* * *

Çунат пачĕ мана юрату
Тӳпе тăрăх вĕçсе çӳреме.
Анчах çĕрелле сан туту
Мана вĕçсĕр пуçларĕ чĕнме.

Çĕр çыннин çĕр çинех анмалла,
Суха тумалла,
Акмалла.
Туй тăватăн та – çурт лартмалла,
Пăхăнас пулать йăлт кун-çула.

Çамрăк чун,
Эп пĕлетĕп, вĕçет.
Савнине
Çăлтăрсем те парать.
Ачаран санпа туслă ĕçе,
Каласам, сансăр кам тăваять?

Çав-çавах юрату çунатне
Чĕререн кăларса пăрахман.
Тĕрĕслетпĕр-ха çӳл тӳпене, -
Унта яшлăх çӳрет вĕт-ха ман.
27.04.2002

* * *

Кӑтра хум вӑй вылять Атӑлта
Ҫырана ерипен чуп туса.
Ак шывҫийӗм путать...Ҫатӑлтат,
Лекнӗ пулӑ, умра йӑлтӑрса.
Вӑй вылять пулӑ ылттӑнӑн, кӗмӗлӗн
Тухакан йӑл хӗвел шевлипе.
Ларӑп эп...Вӑлтана паян кӗмӗ-ши
Ман телейӗм юмах сӗмӗпе.

Шанӑҫ пур-тӑк пулать ӑнӑҫу:
Пултӑр ӗмӗт тата тӑрӑшу.
Малалла ҫивӗч пӑхтӑр куҫу,
Таса тӑтӑр ялан та ӑшу.

Ӗмӗрсем витӗр Атӑл юхать:
Курманни, пӗлменни ун юлман.
...Шывҫи путрӗ...Телей, тен, тухать?
Ӗмӗтпе те май пур йӑпанма.

Вӑлтана пулӑ, тен, ҫакланмасть?
Тен, тарать кӑшласа ӑмана?
Ҫавах пур вӗт-ха мел пурӑнма:
Йӳле ҫеҫ ан ярсамччӗ хӑвна...
17.04.2002

* * *

Тӳпе мана ҫунат парать, сӗнет,
Анчах ҫӗр туртӑмӗ чарать тытса.
Инҫет куллен ҫула тухма чӗнет,
Кил-ҫурт ҫӗнӗ ӗҫ-пуҫ парать тупса.

Ҫак чӑрмавсем пӗтмеҫҫӗ пуль нихҫан?
Пӑхать, ав, арӑм йӑлӑнса куҫран.
Иккен майламалла пурӑнӑҫа, -
Ака-суха кам тӑвӗ эп кайсан?

Ӗмӗт пурри, паллах, ҫавтер аван,
Анчах паянхи кун илет чуна.
Килте ҫимелӗх ҫӑкӑр пулмасан,
Мӗнле ирттерсе ярӑн-ха куна?

Тытать-мӗн паянхи ҫатӑрласа,
Сӑмса умӗнчи ҫеҫ-мӗн курӑнать...
Тӳпе тӑман пулсан ҫунат парса,
Кам космоса пӗр шелсӗр ыткӑнать?
20.04.2002

* * *

Канаш та юлчĕ ĕнтĕ хыçала,
Иртетĕп Ухман ялĕн çулĕпе.
Умра куратăп лăпкă Çавала,
Юхать вăл хăйне май, ĕлĕкхи пек.

Çӳренĕ ача чух кунта пулла,
Кунта ялан çĕкленнĕ ĕмĕтпе:
Çавал юхса тухать-тĕк Атăла, -
Эпир те çыхăнатпăр тĕнчепе.

Ачалăх тек чĕнет малашлăха,
Куçсем кураççĕ витĕр яланах, -
Тăр кăнтăрла кураççĕ çăлтăра.

Çавăнпала та эп çак тăрăха, -
Кун-çул вăл уçса панă вĕт мана! –
Упратăп ĕмĕр-ĕмĕрех чунра.
20.04.2002

* * *

Эп тӗлӗнетӗп ҫав ҫуркуннерен:
Шыв юхтарать, илсе килет хӗл кунӗ.
Кӗҫ хӗр тухать ҫӳхе кӗпелен, -
Ӑна курсассӑн каччӑ чунӗ ҫунӗ.

Асӑрханса тухать, ав, вӗллерен
Хӗлле хӑй майлӑ тӗлӗрнӗ пыл хурчӗ.
Ҫӗнӗ вӑй-хал илет вӑл хӗвелрен, -
Чечек те, сарӑскер, умрах вӗт – курчӗ.

Асамлӑхӗ пит пысӑк ҫуркуннен!
Ҫӗр ӑшӑнать те – пурте чӗрӗлет.
Кашни тымар симфони кӗвӗлет.

Малтанхи ҫиҫӗм...-аслӑ тӳпене
Кӗрлеттерет ҫеҫ аслати хӑватлӑн.
Хире ӗҫе тухать ҫын тараватлӑн.
20.04.2002

* * *

Мĕн тăвăн? - шыв юхать е юр çăвать,
Килет те шурăмапуç – хĕвел тухать.
Кӳн пуçлансассăн, эс ĕçе каян,
Киле каç еннелле çеç таврăнан.

Черетленсе пырать пек йĕркипе, -
Сиссе те юлаймастăн, - самана
Тĕкех пыратчĕ мар-и? - улшăнать...
Çĕр çаврăнать çавах мехелĕпе.

Тĕнчен çапла: пĕри хупать куçне,
Тепри килет...Пуçламăшĕ пулсан
Тухатпăрах эпир кун-çул вĕçне.
Пырать, пĕлетĕп: йăлт аталанса.

Çавах çынсемшĕн пит сахал телей:
Тин çеç çут кунччĕ...
Хура каç тăрать.
Çитес пекехчĕ палăртнă тĕле, -
Шăпа-и, мур-и? - урине хурать.

Пурнатăп эп йăх-тĕп пиллĕхĕпе
Хаярлăх упрамасăр чĕрере.
Тепĕр чухне çĕр-шыв чухăннипе, -
Сиссе те юлаймастăп, - чун йĕрет.

Мĕскершĕн-ха пĕлместпĕр пурăнма?
Пире никам та ĕçлесе памасть.
Эпир çуралнă йăх-тĕпе тăсма, -
Кам юратмасть,
Ун нимĕн те ăнмасть.

Ара, шыв юхтăр, çутăр юр – кирлех,
Хĕвел пире ăнăçу çеç сунать.
Халăхпа халăх тăрăшсан пĕрле
Куратпăрах ăнăçакан куна.
20.04.2002

* * *

Мăнкăмăллăхăм пур ман хама майлă,
Хăшпĕр чухне вăл хÿтĕлет чуна.
Пĕри пуянлăхпа, ав, асса кайнă,
Тепри аран-аран çеç пурăнать.

Ман çук нимех те – сăвăсем кăна,
Сăвăпала, тăванăм, мул пухаймăн.
Эп тав тăватăп ыр вулакана,
Пурăнма çук вĕсемсĕр, - мĕн тăвайăн...

Мĕн тутăр-ха сан сăввупа пуян?
Лартаймăн эсĕ саплăк та унпа...
Поэзипе тĕнче умне тухать
Ман халăхăм, - ăна аван куран.
Выляймĕ ылттăн ман таса чунпа, -
Поэзи тек пăхать пуласлăха.
20.04.2002

* * *

Çĕр çинче – эп çĕр тарçи.
Çавăнпа: «Ĕçле те çи»,
Тет-мĕн уй-хирте пĕр кайăк.
Кайăкпа эп мĕн тăвайăп? -
Унăн пурăнăçĕ лайăх
Сарă тулă пуссинче,
Çут хĕвелĕн айĕнче.

Çыннăн çунмалла ĕçре,
Унăн – пулмалла тĕпре.
Пĕрчĕ акĕ - шăтĕ тырă,
Çилпеле хумханĕ ыррăн.
Эпĕ, - мĕн тăвайăп? - ырăп.
Телей пур ывăннинче,
Ĕçпе халланать тĕнче.

Çĕр тарçи пулни аван.
Çĕр кăна ялан пуян.
Куç хăрать-и? - алă тăвĕ,
Парăнĕ пире сăрт-тăвĕ.
Эпĕ - çын!.. Пурне те тăвăп
Пурăнан кун-çулăмра,
Ят яман-ха таврара.
20.04.2002

* * *

Чӑваш пулса ҫуралнӑ, - чӑвашах
Эп тӑрса юлӑп ӗмӗр-ӗмӗре.
Никам улӑштараймӗ ман ӑша,
Тапма та – чӑвашла тапать чӗре.

Итлетӗп: кӑлт та кӑлт...Таканлӑ ут
Чупса пырать пек тикӗс ҫулпала.
Эп ҫуралас пулсан та тепӗр хут, -
«Анне!..» тесех калатӑп чӑвашла.

Ытти чӗлхесене те тиркеместӗп,
Мӗнпур чӗлхесене эп хисеплетӗп.
Мӗн чухлӗ кайӑк ҫӗр ҫинче?!. Кашни

Хӑй юррипе киленнине пӗлетӗп.
Ҫавӑнпала та чун чӑваш ҫынни
Пулнишӗн савӑнать...Эп хӗпӗртетӗп.
24.04.2002

* * *

Кама-ха айӑплас? Кала? Куҫа-и?
Вӑл вӗҫӗмсӗр пӑхать вӗт сан ҫине.
Урасене ним мар уттарса кайӗ
Хысунтанах эс утакан енне.

Чӗреҫӗме халь айӑплас-и? Мӗншӗн?
Сана курсан тӑпӑртатать кӑна.
Хӑй йӑвине ялан кӗресшӗн вӗршӗн
Вӗҫет тӗллевлӗн чӑнкӑ ҫырана.

Хӑв патналла мӗнпе туртса тӑратӑн?
Камран вӗреннӗ-ши асамлама?
Илем тек илӗртет-ҫке куҫӑма.

Ан хӑварсам чуна тӑлӑх-туратӑн,
Ман ҫинелле пӑхсамччӗ-и пӗрре.
Тин тапма пуҫлӗ тикӗссӗн чӗре...
24.04.2002

* * *

Сылтӑм ҫыранӗ Атӑлӑн сӑрт-туллӑ,
Ҫӳрерӗм вӗсем тӑрӑх эп утса.
Сӑрт хушшисен сукмакӗ юратуллӑ, -
Вӑрттӑнлӑхсем тӑраҫҫӗ пытанса.

Унта-кунта ҫӑл куҫӗсем тапаҫҫӗ,
Тухма васкаҫҫӗ аслӑ шыв патне.
Пулӑҫӑсем пулӑ яшки ҫакаҫҫӗ,
Пӑхасшӑн ас тивсе шӳрпе имне.

Инҫех те мар хӗр юррине илтетӗн,
Кӗвви каять ҫыран хӗррипеле.
Хӗре эс ҫӗр каҫах иккен кӗтетӗн:

Сан шухӑшна туять чӗрипеле.
Юратӑва пиллет пулсассӑн Атӑл,
Вӑл ӗмӗрлӗх, - ӑна чунпа туятӑп.
24.04.2002

* * *

Килсе кур эс мана, килсе кур,
Çӗр çинчех пурӑнатӑп, эп пур.
Эс манман пулӗ-ха ман сӑна,
Ӗлӗкхи евӗрлех курӑнап.

Пӗр-ик йӗр пулинех пит çинче,
Ку килет йӑлт пӗччен пулнинчен.

Тен, кулап сайрарах...Сӑлтав çук.
Уявсем те сахал пӗччен чух.

Çывӑрать-ха ача сӑпкара,
Сан сӑну çеç тӑрать умӑмра:

Тур палли пур тӑнлав патӗнче,
Сан куллу йӑлтӑрать тутинче.

Тӗлӗнтермӗш!..Пулать вӗт çапла:
Мӗншӗн ун сан пекех утмалла?

Тунсӑхлатӑп. Çавах йӑлӑнма
Пултараймӑп. Эп айӑплӑ мар.

Мӑн кӑмӑллӑ эс. Чӑнни пур сӑмахра,
Хӑшпӗр чух эс, пӗлсем,
улпутран улпутрах.

Каçарсам...Суйи çук...Ывӑла
Сан пӗрре те пулин курмалла.

Тен, кун-çул пӗрлештермӗ пире?
Тен, телей кирлӗ манӑн киле?

Анчах санăн та пур вĕт чĕре,
Вăл савать, юратма та пĕлет...

Килсе кур...Çулĕ пит инçех мар.
Шанчăк çук-тăк та...шанчăклăх пар.
4.05.2002

* * *

Çӳретĕп-и утса эп улăх тăрăх,
Кĕретĕп-и сар тулă пуссине, -
Хам çул çинче ялан та çирĕп тăрăп,
Сулăнас çук нихçан енчен енне.

Савас пулсассăн ĕмĕрлĕх юратăп,
Сутма юрамĕ чун-чĕре хĕмне.
Тахçан-тахçан шăратнă кив юрра та
Тупра пек илĕп аслă çул çине.

Ыталасси килсессĕн эп ыталăп,
Анчах та йăнăшмашкăн юрамасть.
Каласси не куçран пăхса çеç калăп.

Пĕлетĕп: килĕшмест çынна суйма.
Сăмах вăйне ялан чысра курасчĕ,
Атте-анне ятне куллен упрасчĕ.
24.04.2002

* * *

*Светланăна*

УТМĂЛТА сана тин тупрăм.
Куççуль витĕр тупа турăм.
Эс пĕчченччĕ, эп пĕчченччĕ:
Пĕр-пĕрне эпир çитменччĕ.
Алă патăн, - пит аван!
Пĕрле пулăпăр ялан.

Халь пĕр юрă, халь пĕр кĕвĕ,
Пурнăç турĕ çирĕп тĕвĕ.
Çав тĕвве никам салтаймĕ,
Кунпа çĕр арканса каймĕ.
Ма тесессĕн, юрату –
Ман хăват, сан çунату.

Курнă савнăç, курнă хурлăх,
Телейпе хĕнне те курнă.
Пурпĕр пуçсене усмасăр
Ĕçелле уттарнă харсăр.
Тен, ĕçри туссем пире
Вăй-хал панă ĕмĕре.

Юр та çăвĕ, çумăр çăвĕ -
Халь пĕр юрă, халь пĕр кĕвĕ,
Вăрăм пултăр çеçчĕ ĕмĕр,
Çунтăр çеçчĕ чĕре хĕмĕ, -
Вара утăпăр пĕрле
Каччăпа чипер хĕрле.
1990

## ХИРУРГИ ПАЛАТИНЧЕ ÇУРАЛНĂ СĂВĂСЕМ

*Леонид Петрович Ефимова,*
*ЧР тава тивĕçлĕ тухтăрне*

Çĕçĕ айне вытманччĕ халиччен.
Ак çитмĕл урлă каçса кайнă май,
Выртап наркоз тĕтрийĕ айĕнче, -
Турăпала пуçлатăп калаçма.

Мана вăл хатĕр пулăшу пама,
Таçтан ăш çилĕн варкăшĕ килет:
Уçăлтарма тесе кăкăрăма
Кĕпе çухавине хуллен сирет.

Пĕр ним те ыратмасть ӳт-пĕвĕмре.
Ăста алсем ăрăмçă пек выляççĕ.
Ыр туйăм чунăма кĕрет...кĕрет:
Ман çывăхра хĕрсем пăшăлтатаççĕ.

...Епле талантлă ал ӳте çĕлет!
Ыратнине те эп манса каятăп.
Ман пурăнас пулать-мĕн çĕнĕлле...-
Шап-шур палатăра куçа уçатăп.

Ал пачĕ тухтăр тăванла мана:
«халь пурăнатпăр ĕнтĕ, пурăнатпăр!..»
Ун куçĕнче таса хĕлхем çунать,
Пĕрне-пĕри шанчăкпала пăхатпăр.

Маттур ĕçчен пурришĕн чăвашра
Савăннипе суран та ыратмасть.
...Эп тав тăватăп ырă тухтăра
Пултарнăшăн çынна кун-çул пама,
Ун ĕмĕрне малашлăхшăн тăсма...

Çын ĕмĕрĕ е вăрăм, е кĕске, -
Чылай чухне килет тухтăрсенчен.
Вĕсем кўлтерĕç ĕçлĕхлĕ пĕкке,
Çĕн кун парнелĕç çут хĕвел пекех, -
Йăл кулĕ çыншăн вĕçĕ çук тĕнче.

* * *

*Ю.А. Богатеева сестрана*

Тĕлĕнтермĕш пирĕн Юля
Чечекрен çуралнă пулĕ?
Пĕрре пăхăн, - куç илеймĕн,
Çўрĕн яланах телейлĕн.
Куçĕсем ун çăлтăр евĕр,
Вĕсенче – кун-çул кĕрлевĕ.
Кулса ятăр, - шăлĕсем
Йăлтăр-йăлтăр ахахсем.
Кăмăлĕ - хĕвел ăшши,
Калаçни - мăйăр тĕшши...
Юля, Юля, çынсене
Эс сиплетĕн кулленех.
Çавăнпа та чунтанах
Эп вăй-хал сунап сана.
Ăнтăр çамрăк пурнăçу,
Умра пултăр пыл та çу!..

## МĂШĂРĂМА

Çакна пытармăп эпĕ нихăçан:
Эпир пĕрне-пĕри валли çуралнă,
Кун-çул хĕрӳ хуранĕнче тасалнă, -
Çавăнпала таса ята яман.

Эпир, çук, хурламастпăр пурнăçа,
Атте-анне пире çут кун кăтартнă,
Хуллен-хуллен ура çине тăратнă, -
Вĕсен пехилĕ çĕнĕ çул уçать.

Вăй пур-ха ĕçлеме те савăнма,
Хăшпĕр чухне курка та йăткалатпăр,
Купăс сас патăр, - ташлама тухатпăр:
Хĕмне сапать ĕмĕр манми такмак.

Пиртен вĕренмелле халь юратма:
Куллу çаплах хĕр кулли пек янрать,
Куçу чĕркĕмĕл евĕр ялтăрать,
Вут хыптарса манман-ха чуп тума.

Вирт витĕр тухнă, - кĕл пулса вĕçмен,
Телейне курнă, - каçăртман пуçа.
Эпир хамăра хамăр чăн хуçа,
Çук, памăпăр йăха-тĕпе пĕтме.

* * *

*Аристарх Дмитриева сума суса*

Кун çинчен нихçан та шутламан:
Халь выртатпăр пĕр палатăра.
Пĕрле лайăх: ыратан суран
Юсанать тусла калаçура.

Ыратни те, халь пĕлетĕп эп,
Çынсен чĕрине çывăхлатать.
Шанчăклă сăмах, пыл сĕрнĕ пек,
Чуна ырă вăй парса тăрать.

Шӳт те кирлĕ, унсăр пурнăç çук, -
Нăйкăшса выртар-и иккĕн чух?!
Ăнланатпăр эпĕр пĕр-пĕрне,
Ахальтен тухман сăвă хирне.

Пĕр чĕлхе тупни те пит аван.
Пирĕн евĕр тăванпа тăван
Çакă тĕнчере пурăнайман, -
Килĕшӳ мĕнне вĕсем туйман.

Тухăпăр кунтан çирĕпленсе, -
Йышăнĕç хула урамĕсем.
Кăмăл çуталса та çĕкленсе
Илсе кĕрĕ килсене илем.

Çак палатăри таса хала
Иксĕмĕр упрар-и ĕмĕре?
Хĕсĕк мар пире тăван хула, -
Хулара пирĕн кун-çул çӳрет.

* * *

Куҫа уҫнӑ вӑхӑт питӗ чаплӑ,
Ҫутӑ йӑлтӑрса каять умра.
Пурнӑҫ, пурнӑҫ, эсӗ мӗнле хаклӑ!
Ҫынсем калаҫаҫҫӗ-мӗн ҫумрах...

Шур халатлӑ сестрасем пуплеҫҫӗ:
«Куҫне уҫрӗ...» — хӑлхана кӗрет.
Шевлесем ӗлӗкхиллех ҫиҫеҫҫӗ,
Йӑлтӑрать хӗвел чӳречере.

Ҫут тӗнче, сана пуҫласа курнӑн
Антӑхса пӑхатӑп тавралла.
Ырлӑхӗ те савнӑҫӗ ҫак кунӑн
Тӑтӑр йыхӑрса мана мала.

Эп ӗлӗкхи мар-мӗн, эп ҫӗнелнӗ,
Ӳт-пӳ ҫеҫ йывӑрлӑха туять.
Кам пуласлӑха шанса ӗненнӗ,
Ҫавӑ ҫӗр ҫинче аван тӑрать.

Авӑ, кӑвакарчӑн килсе ларчӗ
Чӳрече умне, - мана пӑхать.
Ҫаксене асран кӑларас марччӗ, -
Юлтӑр кун-ҫулта яланлӑха.

Кӑвакарчӑн хӑйӗн ҫунатне,
Тен, мана сӗнесшӗн: - Вӗҫмелле!..
Эп пӑхатӑп ҫӳл тӳпе енне
Тав туса
Тухнишӗн хӗвеле...

* * *

Ҫăмăлттайла, хăшпĕр чухне,
«Юлташ» тесе черкке ҫĕклетпĕр.
Кăштах ларсассăн, пĕр-пĕрне
Хĕрӳллĕн чуптуса илетпĕр.

Черкке ҫĕклентерет ҫапла,
Салтса ярать чĕлхесене.
...Тепĕр кунне ак, мухмăрла,
Тухса танккатпăр ĕҫ енне.

Юлташ таҫта, аса илмест,
Курсассăн та курмиш пулать.
Хăй пурпĕрех сăра ĕҫме
Буфеталла хуллен утать.

Сĕтел хушши юлташĕсем
Тытма пĕлмеҫҫĕ сăмаха.
Ҫумра сан пуррине пĕлсен,
Вĕсемшĕн эс каллех паха.

Каллех эс хаклă, кирлĕскер,
Йăпăлтатаҫҫĕ ырласа...
Ярса парсан пĕрер ҫĕршер,
Мана илеҫҫĕ мухтаса.

Эрехпеле хăналаса
Юлташ тупсассăн кашни кун, -
Эп пырăп пурнăҫран юлса,
Ҫухатĕ хăй чысне ман чун.

Сĕтел хушши уявсенче
Тăвансемпе пĕрле шавлатăр,
Юлташ та ырă йыш ҫинче
«Ан авăн шĕшкĕне...» юрлатăр.

Ҫакна ӑнлантӑм халӗ тин:
Юлташ – пӗрре, ҫынсем – пин-пин...

* * *

*«О, эти милые глаза...»*
*Юрӑран*

Кун пек йӑлтӑркка куҫсене,
Туссем, эп курман нихӑҫан.
Ачашшӑн чӗнет хӑй патне,
Ҫӑмӑллатать пурнӑҫа.

Ҫӑлтӑр пекех йӑлтӑрать,
Тен, витӗр курать чуна.
Шелсӗррӗн вут хыптарать,
Каҫа ҫавӑрать куна.

Хӑррӑн ҫеҫ пӑхтӑр пӗрре,
Чӗлхе саманта ҫухалать.
Тапма пӑрахать чӗре,
Пуҫ ҫаврӑнса каять.

Ку нумая пымасть,
Куҫ йӑлтӑрать, йӑлтӑрать...
Мана малалла пӑхма
Сӗнӗ вӑй-хал парать.

Таса та ырӑ куҫсем,
Пӑхӑр ялан ман ҫине.
Илӗртӳллӗ хӑватлӑ илем
Чӗнтӗр кун-ҫул ытамне.

* * *

Мĕншĕн хĕрхенместĕн, кунăм-çулăм,
Е эп ытлашши сан умăнта?
Е курас килет вĕри куççулĕ?
Е эс хăпăтасшăн çумăнтан?

Кирек мĕн пулсан та, кунăм-çулăм,
Пурăнма эп килнĕ тĕнчене,
Çынсемпе
Ман ĕçлĕ пурнăç çулĕ
Утма пехилленĕ 100 енне.

Çитĕп-и, çитеймĕп-и, калаймăп, -
Сӳнтерместĕп хамăн ĕмĕте.
Çакă çул-йĕртен пăрăнса каймăп,
Эп шанатăп: ман вăй-хал çитет.

Çут çанталăк çитĕ-çке пурне те, -
Мĕншĕн пĕр-пĕрне хурас ура?
Шухăшăмпала хирте çӳретĕп,
Чечексем тататăп улăхра.

Кунăм-çулăм, кĕрешмесĕр вăйлăн
Ал парасшăн мар эс çынсене.
Паттăра кăна юратса сăйлăн,
Парăн эс малашлăх куркине.

*  *  *

Ҫӳречери шур хурӑнсем
Халь манӑн ҫывӑх юлташсем.
Кашни турачӗ калаҫать
Выляна майӑн ҫилпеле:
«Каятӑн, - теҫҫӗ, - кӗҫ киле»..
Ҫил кантӑкран тусла шаккать.
Туять-мӗн аслӑ ҫут ҫанталӑк
Ҫын хуйхине те савнӑҫне.
Мана касса хурать вӑл алӑк
Халех тухмашкӑн тӗнчене.
Ҫак ҫыхӑну яланлӑх юлтӑр,
Хӗвел вылятӑр тӳпере.
...Чипер сестра умра йӑл култӑр, -
Ун куллипе вӑй-хал кӗрет.

Шап-шурӑ, шурӑ хурӑнсем –
Чун суранне сиплекенсем, -
Ешерӗр ҫуркунне ҫитсен,
Ҫулҫӑсем тӑкӑр кӗр килсен,
Ҫирӗп те йӑрӑс вуллӑра
Чӗр сыввӑн, чыслӑн упрӑрах...

* * *

Хăшпĕрисем: «Çав кирлĕ-ха»,
Тесе шăлне йĕреççĕ пулĕ.
...Пăхатăп эп малашлăха,
Унта выртать килес кун çулĕ.

Пĕлетĕп: шăл йĕрекен чунĕ
Сынна инкек пулсан савнать.
Анăçса пынăн ĕçлĕ кунĕ,
Кăмăлĕ тулнă пек утать.

Ай, кам ӳстернĕ вĕсене?
Тен, чĕрисем çăмпа пĕркеннĕ?
Пĕлмеççĕ-тĕр чăн тус мĕнне?.. –
Эп ĕлĕк вĕсене ĕненнĕ.

Куç усăлать хĕне лексен...
Сипленĕ чух сурансене.
Кĕтменччĕ... Халиччен
Вăл манăн тус йышне кĕмен, -
Килет халь вырăнăм патне.

Иккен, вăл ăнланать сана.
Куçа кĕрсе вăл çӳремен, -
Пĕр-ик сăмах калать кăна:
Пуçлатăн тӳпере вĕçме.

Кун пек çынсем «çав кирлĕ-ха»
Тесе çӳремĕç нихăçан.
Вĕсем упраççĕ туслăха
Ялан куç шăрши пек тасан...

* * *

Сĕрме купăс хĕлĕхĕ пекех
Çын ачаш та кĕвĕллĕ, -
Хурамана авĕ те — пĕкке
Аслă пурнăç çулĕпеле тĕвĕлĕ.

Этем чунĕ тимĕр тăприлле
Домнăра шăранĕ, - хурçă пулĕ.
Кайран ĕмĕрсем тăршшипеле
Йăха асăнмалăх тăрса юлĕ.

Çын чĕри хĕвел вăйĕпеле
Çĕр питне куллен çĕн илем кĕртĕ.
Хăйĕн иксĕлми ĕçĕпеле
Тĕнчене пăсса, юсаса чĕртĕ.

Çыннăн ăсĕ - тĕпсĕр çӳл тӳпе,
Шухăшĕ - Хуркайăк çулĕ евĕр.
Вăй виçме ялтра çăлтăрсемпе
Илтĕнет ракетăсен кĕрлевĕ.

Ĕмĕрĕ çеç çыннăн пит кĕске,
Татăлать çинçе хĕлĕх пекех...

* * *

Хӗвел усала та, ырра та
Пӗр пек ҫутатать, - суйламасть.
Ун ҫине эп пӑхма тӑратӑп,
Куҫ шарать, - май ҫук пӑхма.

Тырпулсем, курӑксем туртӑнаҫҫӗ
Хӗвел еннелле кулленех:
Хӗвелҫаврӑнӑшсем ҫаврӑнаҫҫӗ
Вӑл куҫнӑ майӑн пуҫне,
Чечексем те куҫне уҫаҫҫӗ...
Пуян ҫӗр ӳстерет пурлӑхне.

Апла хӗвеле мухтав!
Иксӗлми хӑватне ӗмӗр тав...

* * *

Шанчăкпа пурнать этем,
Шанчăк çеç çăлать пире.
Унпала кĕрет илем,
Тикĕссĕн тапать чĕре.

Юрату та — шанчăкра,
Шанчăкпа йăх-тĕп пурнать.
Ахальтен-и улăхра
Шăпчăк ир-ирех юрлать.

Эп те шанчăкпа выртап:
Тӳрленет куллен суран.
Юсансассăн чул сăрта
Хурăп çавăрса кайран.

Ĕмĕт пысăк шанчăкпа.
Çыхăнать те — йыхăрать.
Пăхăнать мана упа,
Çĕнтеретĕп кашкăра...

Шанчăк умăмра тăрать,
Çирĕп аллине парать.
Ман телейĕм хулара
Кăмăллăн утса пырать.

* * *

Тĕлĕнтерет ку нарăс уйăхĕ:
Е юр, е çумăр, е тăман.
Шуçлак, шуçлак... – ку çынсен хуйăхĕ.
Ӳксен, пулать хуçма, ватма.

Хам ĕмĕрте пуçламăш хут
Кун пеккине куратăп эп.
Урамра шыв, ун тăрăх ут,
Ура – сисмерĕн те – йĕпе.

Çавах та эс ман патăма
Çӳретĕн кăмăлпа куллен.
Палатăран киле пыма
Кĕтен, пĕр вĕçĕмсĕр кĕтен.

Кĕтмешкĕн хĕн. Пĕлетĕп эп.
Юрать-ха чăтăму çитет.
Чăн Юрату хăвачĕпе
Кун
Хавасне илсе килет.

Мĕн тăвăн? Нарăс та хăй май.
Вăл кăтартасшăн вăй-халне.
Пире валли кунсем нумай,
Çулталăк кӳрĕ хавасне.

* * *

Пурӑнни – хӑех уяв, -
Илтӗм эпӗ ӑнланса,
Ҫутӑ куншӑн пур вӑя
Пурӑнатӑп халь пухса.

Пурӑнни – хӑех уяв,
Эп калатӑп шантарса,
Тухса кур тӑван уя, -
Выртать тулӑ хумханса.

Пурӑнни – хӑех уяв, -
Кун иртет те – ҫул тулать.
Каймалла каллех туя, -
Мӑнук пирӗн авланать.

Пурӑнни - хӑех уяв!..

* * *

Сывă пул, палата, сывă пул,
Эп паян киле тухса каятăп.
Кунта юлтăр ĕлĕкхи кун-çул,
Малашне эп çĕннине пуçлатăп.

Тепĕр çын выртсан ман вырăна,
Ун суранĕ хăвăртрах сиплентĕр.
Ахлатса илсен те кăшт кăна, -
Чунĕнче çĕн кĕвĕ кĕвĕлентĕр.

Арăм эпĕ тухасса кĕтет,
Пысăк шанчăк унăн куçĕнче.
Уçă варкăш кантăкран кĕрет, -
Апла ăнăç пулĕ çул çинче.

Халăхăм умне кĕç тухăп эп,
Кăмăлтан калаçăп унпала.
Халăхпа эпир йĕппе çип пек, -
Пĕрлĕхе пĕрле упрамалла.

Çула тухас умĕн лармалла...
Сывă пул, палата, сывă пул.
Кам сипленнĕ, ун пурăнмалла.
Кĕтсе ил мана, хĕрӳ кун-çул.
Нарăс уйăхĕ,
2002 ç.

* * *

Хир шап-шурă.
Нушапа-ши
Вăл шуралнă çавăн пек?
Илтĕнет авалхи юрă, -
Тен, юрлать ăна тӳпе?
Тен, вăл пин çулти Апашăн
Хĕрĕсен чечен кĕвви?
Пĕрчĕ, тен, тымар ярасшăн, -
Сас парать пуль чун тĕвви,
Тен, канать Аспарух çарĕ
Дунай шывĕ хĕрринче
Чăннипех кам уçса парĕ?
Чăнлăхĕ - пăлхарсенче.

Шурă-шурă тĕс çухалчĕ,
Ешĕл витрĕ таврана.
Çĕнĕ кĕвĕсем çуралчĕç,
Атăлăм, - итле кăна.
Тĕнчене чăваш пуçтарчĕ
Хамăр шур Шупашкара.
Хăй ятне сырса хăварчĕ
Андриян та уçлăхра.
Парижран та, Берлинтан та
Çул хываççĕ чăваша.
Чăн пĕрре те килмест янтăн, -
Ырă, ăслă шухăша
Яланах тĕпе хурса
Кун-çул никĕсне хыватпăр.
Ĕмĕте çунат парса
Ĕмĕр çĕн кунне уçатпăр.
16.02.03

* * *

Вилес умĕн Толстой
Аллипе,
Хăй кăкри çине,
Хут çине йĕрленĕ пек,
Çырам пек тунă теççĕ темĕн.
Вăл тăрăшни
Ăсаннă хăйĕнпе...
Курни вăл юлать ĕмĕрсен тăршшĕпе,
Калани те юлать ĕмĕрех халăхра.
Çавăнпа та курнин-илтнин çĕклемĕ
Иксĕлмест-мĕн, ӳссех пырать.

Çаврăнать ак пластинка-диск,
Чашлатать те хăрăлтатать:
Йăлт пĕрлешнĕ-тĕр çĕрти-çӳлти –
Çулсем урлă Толстой калаçать.
Вăйсăр пек илтĕнет ун сасси, -
Ватăлсан çырса илнĕ ăна.
Çав-çавах хăватне çил касси
Чун патне çитерет.
Самана
Йăлт тимленĕ хăватлă çынна.

Каламан-тăр ахаль: «Раççейре
Халĕ икĕ патша...»
Чăнласах
Ун сăмахĕ çĕр тăрăх çӳрет
Этем чунĕн чăн тĕкĕрĕ пек.
Вăл çырни, чунсене çутатса,
Çыхăнать кашни çын шăпипе.
Вилес умĕн те гени алла
Ручка тытнăн хуллен йĕрлемен-и?
Нумай пулнă иккен çырмалли, -

Мĕн тăвайăн? - ĕлкĕреймĕн-мĕн.
Вăл çырни çулсем урлă килет,
Пирĕнпе калаçать халь те чĕррĕн.
Унпала тертлĕ ĕмĕр çынни
Телейне яланах курма хĕрнĕ.

## Н.В. НИКОЛЬСКИЕ АСĂНСА

«Хыпар» хаçатăм умĕнче пуçа таятăп.
Мĕншĕн тетĕр-и? Йăлт пĕлтерем.
Кашни сас паллинчех тусла куратăп
Никольскин ĕç-хĕлне...Куллен чĕрем
Ун хăватне ман йышăнать тăванлăн.
Хам ĕмĕрте Никольские эп курнă
Тăватă хут. Калаçăвĕ ун анлă
Уй-хир пек – тулăх-тулăх хумханать.
Пуçран шăлсах кайман-мĕн ăна пурнăç,
Ура лартса, ура хурса тăнă кăна.

Çапах та парăнман Муркаш чăвашĕ,
Чăвашлăха упранă чĕринче.
Вăл çынсене телейлĕрех тăвасшăн
Шутланă чăвашла хаçат çинчен.

Ак, Хусанта «Хыпар» пичетленет:
Чи малтанхи чĕкеç вĕçсе çитет
Çĕрпӳ, Кавал та Етĕрне енне, -
Хаçат вуланă май çын тĕлĕнет:
Чăваш сăмахĕ те çут тĕнчере
Çут çăлтăрăн вăй выляса тăрать, -
Пуплевленсе кашни киле кĕрет,
Куçа уçма та пурăнма йыхрать.

Сас паллисем шур хут çинче хура
Сăрпа çеç пичетленнĕ пултăр, -
Пур-пĕрех

Вăл ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах,
Чуна малаш енне чĕнет вĕçĕмсĕрех.

«Хыпар» никĕслевçи – йăваш чăваш –
Çак таврара тек нимĕн те ан тутăр, -
Вăл пирĕншĕн чăн тус та, чăн юлташ,
Пĕлӳлĕхшĕн пире вăл панă çутă.

Профессор та философ, ыр чĕлхеçĕ
Никольский ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.
Унран яш-кĕрĕмсем халь вĕренеççĕ,
Ун ĕçĕнче чăваш малашĕ курăнĕ.

Кам тăрăшать,
«Хыпар» вăй-хал парать.
Кам чунĕ сывă мар,
Вăл – юнашар.
Тен, йăнăшатăп эпĕ? -
Тӳрлетет.
Унра – этем хисепĕ...
Инçете
Витĕр куçпа пăхма тусла хистет.
...Апла Никольский
«Хыпартах» ĕçлет.
26.XII.2002

## УХСАЙ САНАРĔ

Куç умĕнчех Ухсай санарĕ:
Ача кулли сăн-питĕнче.
Сăввисенче вут-хĕм кăларĕ
Кĕтмен-туман самантсенче.

Силпи-Слакпусăн эп çӳрерĕм
Ухсайпала чăн тăванла.
Калаçрăм –
Тăрана пĕлмерĕм:
Уçса ярать вăл кăмăла.

Слакпус çăлкуçĕнчен шыв ĕçрĕ,
Питне те çурĕ тăрăшса.
Чун-чĕрипе Сетнер пек вĕçрĕ,
Шыв ăсакан хĕре курсан.

Силпи çаранĕнче кансаччĕ:
Ем-ешĕл куракĕ - кашма.
«Кунта, эх, Кĕçтенттин пулсанччĕ...» –
Тек пĕр сăмах та шарламасть.

Хĕвел те аслă çутçанталăк
Пĕрлешнĕ пулĕ халь унпа?
Лутра çынра тăван çĕр халĕ, -
Куратăп, - иксĕлми тапать.

Трагеди, сăвă, романсем те
Ахаль-и ӳкнĕ хут çине?
Тавралăх сăвăçа:
«Илсем, - тет, -
Ман мĕскер пур, чĕрӳ варне...»

Ваттипеле – вăл чăн-чăн ватă,
Ачапалла – чăн ачалла.
Кун-çул иртет,
Кун-çул шăвать, ав,
Асилўпе шав малалла.

Мĕскер тăвайăн? Вăхăт шелсĕр,
Ухсай хупать таса куçне.
Выртать халь лăпкăн,
Ним пĕлмесĕр
Çĕршывăмри нушасене.

Халăх нушишĕн, чун нушишĕн
Ĕçетчĕ-тĕр хăш-пĕр чухне?
Пурăнăçпа малаш пурришĕн
Тытатчĕ çирĕппĕн хăйне.

Çын чĕрĕ чух эпир мĕн-ма-ши
Этем чунне курасшăн мар?
Вак-тĕвексемшĕн е ним маршăн
Кун-каçăн хатĕр ятлаçма.

Халь –
Çулсем урлă эп пăхатăп:
Ухсай тăрать таса, хитре.
Вăл вăрмана кĕрет, куратăп,
Тухать тырпулăллă хире:
«Саватăп эп, хирсем сире...»
Типтерлĕ сăввине вулатăп.

Якку Ухсай!
Утатăн чĕррĕн
Халăхпала куллен-кунах...
Çĕн ĕмĕре хастаррăн кĕрĕн,
Мĕншĕн тесен чăвашăн çĕрĕ
Чунпа упрать ялан сана.
1991

## ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ

Мӗн пур чӑвашсене пӗрлештерсе
Тӑратӑн эсӗ малтанхи кунран,
Вӗсен нуши те савнӑҫне пӗлсе
Ҫӗр тӑрӑх ҫирӗп утӑмпа утан.

Паллах, чӑвашсене ертсе пыма
Хӗнрех пулсан та, эсӗ вӑй хуран.
Пухатӑн ӑс чун тӗрекне пама,
Кашни ҫынна чӑн тус пекех куран.

Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче чӑваш нумай,
Пӗрин пирки те каяр мар манса.
Вӗсен чӗри патне ҫул хывнӑ май
Ӗҫсем те пирӗн пултӑрччӗҫ таса.

Чӑвашсене илетӗн хӳтлӗхе,
Чӗртетӗн чӗлхене, йӑласене.
Усала мар, чӑн-чӑн илемлӗхе
Илме чӗнетӗн аслӑ ҫул ҫине.

Конгресс енне пӑхать пӗтӗм чӑваш.
Эс сис, тимле, тӗпче, ун ӗҫ-пуҫне.
Яр уҫӑлӗ вара пире малаш,
Ҫул хывӑпӑр йышпа тӗнче умне.

* * *

Нарӑс уйӑхӗ - шевле уйӑхӗ,
Йӑмӑхтарать куҫа шартса.
Сан умӑнта
Йӑл-йӑлтӑр шуйӑхӗ
Пас тӑкӑнса та выляса.

Кӑсӑясем пуҫлаҫҫӗ юрӑ
Ӑш пайӑрка хӳттийӗнче,
Чи-чи! тесе
Шыраҫҫӗ мӑшӑр
Ҫап-ҫутӑ кун ытамӗнче.

Ҫӗлӗк хывмашкӑн вӑхӑт тенӗн
Хӗвел хӗртмешкӗн вӑй пухать.
Хур ҫӑмарта тума пикеннӗ,
Пӳрте кӗмешкӗн шак хурать.

Пуш уйӑха парасшӑн алӑ
Ялтравлӑ нарӑс кулленех,
Вӑранупа тулса вӑй-халӗ
Пуласшӑн тус ҫуркуннене.

Шевлеллӗ нарӑс тӗрлет тӗрӗ
Ҫут пайӑркаллӑ укапа.
Хӗл тумне хывнӑ кӳршӗ хӗрӗ
Пӑхать мана йӑл кулӑпа.
12.02.2001

* * *

Хурăн çулçине сире-сире
Çăлтăр тинкерет
Иксĕмĕре.

Куç хĕсет те –
Йăлтăр çухалать,
Çăлтăр та хăйне юлташ шырать.
Тӳпере те
Пĕччен чух кичем:
Çăлтăр, ан,
Сана хĕре парам,
Ĕмĕрлĕх ăна савăнтарам, -
Тăччăр тĕлĕнсе çеç таврара:
«Кур-ха, каччă, чăн та, пултарать!..»

Хурăн çулçине сире-сире
Çăлтăр тинкерет
Иксĕмĕре.
Тем каласшăн пулĕ вăл пире?
Сасси илтĕнмест... –
Сисет чĕре.
4.XII.2002

* * *

Тӳпере çӗн уйӑх!
Çӗнӗ савнӑç, çӗнӗ хуйӑх,
Çӗнӗ тарӑху та тӑрӑшу, -
Ан вӑркатӑр çеç ӗнтӗ ӑшу...

Чӑннипех те, мӗншӗн хурланас?
Çӑкӑр пур, тӑвар сӗтел çинчех.
Тикӗс мар пулсассӑн та тӗнче, -
Хевте – çирӗп, - кӑмӑллӑн пурнас.
Анчах калама кӑна канас:
Шухӑш, шухӑш çаврӑнать пуçра, -
Кунта – шурӑ, лере – ма хура?

Халӑхӗ вӑй-халлӑ теççӗ пуль,
Ма тесессӗн курӑнмасть куççуль.

Тӳснӗ вӑрçине те выççине,
Чӑтнӑ элекне те тӗрмине, -
Çав-çавах та тӑснӑ йӑх-тӗпе,
Ачисем çӗкленнӗ туйра пек.
Çирӗп пурӑнаççӗ чӑвашсем
Атӑл хӗррине кӗртсе илем.

Тӳпере тӑрать вӗр-çӗнӗ уйӑх,-
Унӑн тавралла çӑлтӑрсен туйӗ...
4.XII.2002

## УХ-ХА-ХА...

Упрама патӑм чунӑма
Упрама,
Вӑл упрама пӗлмерӗ -
Ух-ха-ха!

Упрама
Патӑм юратӑва
Юрама
Хӑват,
Вӑл юрама пӗлмерӗ, -
Ух-ха-ха!

Упрама
Патӑм сӑнӑма
Савӑнма,
Вӑл савӑнма пӗлмерӗ, -
Ух-ха-ха!

Упрама
Патӑм чысӑма
Чыслама,
Вӑл чыс мӗнне пӗлмерӗ, -
Ух-ха-ха!

Эх, Упрам, Упрам,
Санпа мӗн тӑвам?..
3.XII.2002

* * *

Çĕршыв – çĕршывăм, каласам,
Чирў пырать-и вăраха?
Ăшă куçпа савса пăхсам
Ĕçпе ĕшеннĕ халăха.

Вăл тивĕç ырă сăмаха,
Вăл тўсĕ мĕн тўсмеллине.
Вăл пăхнă тек малашлăха,
Ĕненнĕ вăл ертўçсене.

Мĕскер пулса иртет-ха халь?
Хаксем ўсеççĕ кулленех.
Никам ĕç тумĕ так ахаль, -
Пĕтернĕ çын ĕненĕвне.

Çĕршыв, çын шанчăкне ўстер,
Çынна куçран пăхса кала.
Ыранхине тўрех пĕлтер!
Куна тума мĕнпур хала,
Çĕршывăм, санăн пухмалла.
2.XII.2002

* * *

Чуп турăм та хĕре
 çухалчĕ хĕл сивви,
Çуралчĕ чĕрере
 чăн юрату кĕвви.

Çапла та пулкалать
 çак çутă тĕнчере,
Хĕвел – хăлхапала –
 итлет çӯл тӯпере.

Юман шарт! шартлатать,
 сивве вăл тӯсеймест,
Кам хытă юрататъ –
 шăнассине пĕлмест.

Улатакка таккать,
 телеграмне çапать:
«Каччă хĕре савать»
 тесе хыпар ярать.

Шур юр йăл-йăлтăрать, -
 вылять ахах-мерчен.
Телей – юратура,
 хăрамĕ хĕллерен...
2.XII.2002

* * *

*Л.П. Ефимов тухтăра хисеплесе*

Хирург çине пăхатăп та –
Ун сăнĕ лăпкă та таса.
Вăл манпала пĕрле чăтать:
Мана вăл сыватать касса.

Эп тӳснине хирург тӳсет:
Курать вăл ман пуласлăха.
Ĕçре ăсталăхĕ ӳсет, -
Кашниншĕн ĕçĕ ун паха.

Унпа тăванлашса каян,
Чунра вăл пурăнать ялан.
Ун алли витĕр эс тухсан,
Çĕнĕ кун-çул умне тăран.

Хирург тăсать пурнăçăма,
Умра чăн Турă пек тăрать.
Хăш чух пултарĕ йăнăшма, -
Йăнăшасси сахал пулать.

Хам çĕнĕрен çуралнине
Сисетĕп ĕнтĕ кулленех.
Чĕркуçленеп хирург уине
Таптарнăшăн ман чĕрене.
3.XII. 2002

* * *

Эсӗ мар-и, эпӗ мар-и
Панă пӗр-пӗрне сăмах
Çӗрлеме те кунлама?
Эсӗ мар-и, эпӗ мар-и
Тулли уйăх пытансан
Илнӗ тутлăн чуптуса?

Эсӗ мар-и, эпӗ мар-и,
Сут хӗвел пытаннă чух,
Ӗмӗрне те манас çук,
Пуçласа таса куна,
Уçса хамăрăн чуна
Аннуне пӗлтертӗмӗр:
«Пӗрлешетпӗр...»терӗмӗр.

Эсӗ мар-и, эпӗ мар-и
Тупа турăмăр пӗрле? -
Пӗлчӗ пур хăна вӗрле...
Халь тута тăсса çурес-и,
Кирлӗ маршăн хирӗçес-и?
Шур пуçа хур тăвар мар,
Уяв кӗреки пухар,
Такмакпа ташша çапар,
Савăнтăр çăкăр-тăвар!

Эсӗ мар-и, эпӗ мар-и?...
Кил-ха яш чухнехи пек
Чуп тăвар савăннипе.
2.XII.2002

*  *  *

Чӳрече умӗнчи хурӑнсем
Йыхӑраççӗ каллех урама.
Ыратаççӗ-çке ман урасем,
Тата сивӗ, - тухма юрамасть.

Ну, мӗнех? Вӑхӑт çитӗ-ха. Тухӑп.
Кун пекки манпала пулман мар.
Çӳллӗ ту тӑррине те эп ухӑп
Мӑшӑрпа алран-ал, юнашар.

Шанчӑкпа çухатмашкӑн юрать-и?
Шанчӑк пур-тӑк — телейлӗ этем.
Сӑввӑмпа эп халех тухма хатӗр
Уй-хире, - йӗлтӗрпе вӗçтерем.

Ёмӗт, ёмӗт! Мӗнле эс хӑватлӑ!
Йыхӑратӑн пӗрмай малалла.
Çук çӗртен пӗтӗмпех пур тӑватӑн, -
Йӑлт уçатӑн йӑмшак кӑмӑла.

Эс, больница, мана туслаштартӑн
Шурӑ хурӑнсемпе ёмӗре.
Ахальтен-и мана сывлӑх патӑн? -
Ёнтӗ тикӗс тапать ман чӗре.

Çуркунне, акӑ, çулçӑ кӑларӗç,
Кӑчкӑ çакӗç таса хурӑнсем.
Манпала вӗсем туслӑн калаçӗç, -
Шанчӑк пур-тӑк — телейлӗ этем.
2.XII.2002

* * *

Эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ:
Тӳпере
Пирĕштисем вĕçсе çӳреççĕ ыррăн.
Вĕсем сĕнеççĕ имлĕхлĕ çĕре
Хастаррăн ӳстермешкĕн тулăх тырă.

Пирĕштисем çунатпала сулса пире
Пиллеççĕ вăрăм кун-çулпа телей.
Кĕтетпĕр çавăнпа килес ире,
Пуçа таятпăр тухнă хĕвеле.

Сирнишĕн каç сĕмне тавах Турра,
Чун пирĕн çутă патнелле утать.
Чĕре тасалăх хăватне курать,
Хăват пурне те малаша туртать.

Çунат варкăштарать, ав, сывлăша,
Ман таврара апла пирĕштисем.
Кĕрет чи лăпкă туйăм ман ăша, -
Çав туйăмпа эп кулленех çӳрем.

Эй, Аслă Тура, ан пăрах мана,
Пĕлменнине вĕрентсе пыр ялан.
Çурта лартатăп эпĕ сан умна, -
Тав тăвăттăм пĕр сылăхĕ каçсан.

Пĕлетĕп: çăмăл сылăха кĕме,
Çын выçă куçлă, хапсăнать мула.
Тепри чиркӳ хăш тĕлтине пĕлмест, -
Çапла сылăх хутаçĕ те тулать.

Чун канăçĕ куллен пĕтсе пырать...
Апла текех упрасчĕ хамăра.
Çавăнпала чĕре пăшăлтатать:
«Паян та ĕмĕр-ĕмĕр тав Турра!..»
29.XII.2002

* * *

*Ваçлей Игнатьева хисеплесе*

Асрах-ха «Пĕчĕк акăшсен ташши», -
Çухе пулсан та, - лайăх кĕнеке.
Кĕнекере асамлă Чун ăшши
Тапса тăрать таса çăл куç пекех.

Чăваш литературин алăкне
Эс уçса кĕтĕн çирĕппĕн, хастаррăн.
Хайларăн ĕмĕтри сăнарсене:
Ӳкерĕнчĕç вĕсем, чăнах та, тарăн.

Ятна-сумна
Упрарăн яланах,
Вăй хутăн тăван халăха савса.
Ялан ĕçре куратăп сан сăнна,
Ĕçре пыратăн эс çунат сарса.

Çĕр ĕçĕнче те хăвату пур сан,
Хура тесе тăмастăн пăрăнса.
Улмуççисем туратсене усса
Сĕнеççĕ панулми ыр кăмăлпа.
Мăнукусем савнаççĕ çырлапа, -
Эс вĕсене сăнатăн йăл кулса.
Пĕлетĕн пулăшмашкăн туссене...
Телей çеç тухтăр сан çулу çине,
Çавах та «Пĕчĕк акăшсен ташши»
Аса илтертĕр çамрăк кунсене.
Чайковский кĕввинпе сан чун ăшши
Упраччăр пултарулăх хăватне.

* * *

«Сан инкек – ман инкек»,
Кам-ши калĕ сана шантарса?
Пĕччен тухĕ тинке
Хӳтлĕхпе тӳрĕ çул шыраса.

Вăхăтра ал пама
Пит пĕлсех те каймастпăр пулас.
Çынпа çуммăн тăма,
Пулăшма
Хăват кирлĕ, -
Ăна çтан тупас?

Кайăксем те пĕрне-пĕри
Пултараççĕ-мĕн хӳтлĕх пама.
...Хурчăкан та хăпать, ав, чĕри, -
Чăх памасть ăна чĕпĕ тытма,
Пултарсан ăна хирĕç тăма.

Халь хута кĕриччен
Сана
Çырмана
Тĕкме хатĕр çынсем...
Çав-çавах çĕр çинче
Нумайрах ырăсем.

«Сан инкек – ман инкек...»
Эп шанатăп çапла пуласса.
Пурăнас текенсем çын пек
Утĕç-ха алран ал тытса.

Шанчăкне кам упрать чĕрере,
Йĕркеленĕ кун-çул тĕнчере.
9.06.2001

* * *

Шăппăн кěвě янăрать,
Кěвě шухăша ярать:
Тин çеç эпě каччăччě,
Тěлěнмелле паттăрччě.
Тем те курнă,
Тем те тӳснě
Шур сухал шăтиччен ӳснě.
Халě вăйлă çил вěрсен,
Шуçлак чух кайса ӳкен...
Акă мěнле япала, -
Пурпěрех пурăнмалла,
Çурт тăрне тăрламалла...
1.XI.2002

* * *

Пурнăçа ятлама пулать,
Кун-çула питлеме юрать,
Анчах Турăпа çеç ан хирěç,
Сан умри усала вăл сирě.
Хěрпе тавлашатăн,
Пасарти сутăçпа харкашатăн,
Ăнсăртран самана сакки çине,
Хăш чухне,
Саваламасăр ларсан,
Купарчуна кěтмен çěртен
Шăрпăк кěртен.
Ирěксěрех тухтăр патне каян...
Çапла çав.
Ăнкартăн пулсассăн тав!
3.XI.2002

* * *

Аннў сан тăхăрвуннăра,
Эс утмăла çывхарнă пултăр,
Сана вăл ача пек курать.
Мĕнле курать, - çаплах-и юлтăр.

Эс сăпкара...утма пуçлан.
Шкула каян...
Савни те пур-мĕн...
Аннў пĕлсе тăрать ялан,
Шăпи çапла ун, - Турă пўрнĕ.

Эс утмăлта, çавах ача, -
Пулсан та хăвăн мăнуксем.
«Ан вĕрентсем», тесе пачах
Калаймăн эс хирĕçлесе.

Чĕнеççĕ «асанне» тесе
Сан ачусем ăна куллен,
Вăл вĕсене те ăс кĕртсе
Пырать хăй майлă, ерипен.

Çапла пуль çав анне шăпи,
Мĕн чухлĕ вăйпа хал унра?!
Унра кун-çулăмăр таппи,
Пире ăшпиллĕн вăл упрать.

Ун чун çунать эс йăнăшсан,
Çавах та тўрĕ çул çине
Сана кăларĕ тăрăшса, -
Вăл сыхлĕ килĕмĕр чысне.

Эпир çавах та хăш чухне
Хуçатпăр унăн кăмăлне.
Йăлтах тўссе вăл ирттерет, -
Эпир курман чухне йĕрет.

Аннемӗр – пирӗн чыс, тӗрек,
Ҫакна асра тытар ялан.
Вӑл панӑ пурнӑҫпа чӗре
Таса кун-ҫул тума пире...
Пӗлсех тӑр кун ҫинчен, ан ман.
10.06.2001

* * *

Чап. Мӗн вӑл чап?
Шыв ҫинчи тӗтре пек сирӗлет.
Ванчӑк кӗленчене ачапча,
Ялтранӑран хӗвел пиитӗнче,
Шевлене тытнӑ пек илет,
Кӗленче –
Ывӑҫ ҫинче –
Выртать,
Ялтрамасть.
Вара пӑрахать
Каллех урама.

Ӗҫ вӑйӗпе ҫеҫ чап ҫуралать,
Ӗҫлеме пӑрахатӑн –
Вӑл ҫухалать.
25.03.2002

* * *

Юратура иккӗленни –
Пуласлӑха пӗтме сунни.
Иккӗлену кӳрентерет,
Унпа куллен йӑшать чӗре.

Иккӗленӳн чыс-сумӗ ҫук,
Вӑл шанчӑка ҫеҫ пӗтерет.
Ҫавӑнпала та савнӑ чух
Ялан ӗненӳпе ҫӳре.
9.06.2001

* * *

Эс тухрăн та – ман пӳлĕм тĕксĕмленчĕ.
Мĕскершĕн-ши? Кăна пĕлес пулать.
Пăхап та урама – кун илемленчĕ...
Апла эс урамра...
Илем санпах пырать.

* * *

Йывăр пулсан, чĕнсе ил мана,
Савăннă чух та йыхăр мана.
Тухнă хĕвел пурпĕрех анать,
Шурăмпуç хăпарсан,
Вăл тухать-вăранать.

Хĕн-хур килет-и, мана чĕнсем,
Эпĕ çитетĕп, пĕлсем.
Анчах та санпа юнашар,
Çунтарса манăн ăша,
Ан пултăр тепри, апăрша.
Вăл хапсăнать
Санăн сăнна
Кăна.

529 Каларăм тӳррĕн, каçар.
Инçетре эп пулам-и –
Санпа юнашар...
Эсĕ манăн çумра –
Умра.
25.03.2002

* * *

Телейлĕ каç, сывлăмлă ир
Йăлтах пĕлессĕ кун çинчен:
Венчете тăтăмăр эпир
Санпа Алькеш чиркĕвĕнче.

Чиркÿ маччинелле пăхса
Çунатчĕç пирĕн çуртасем.
«Малашлăх пытăрччĕ ăнса»,
Пăшăлтатчĕç тутасем.

Шăпасене венчет çĕрри
Çыхса хурать ĕмĕрлĕхе.
Эп — сан çурри, эс — ман çурри,
Апла упрар-и пĕрлĕхе.

Çак пĕрлĕхшĕн эпир мĕн чул
Ваклана хаклă кунсене?
Ытла та вăрăм пулнă çул
Çыхса хумашкăн чунсене.

Тухатпăр шăппăн чиркÿрен,
Таса тĕнче ялтрать умра.
Эс манăн ĕмĕр-ĕмĕре,
Эп пулăп яланах çумра.

Çак çут куна ахаль кĕтмен.
Пире вăл йыхăрнă ялан.
Юратăва паман пĕтме,
Чĕре те аташса кайман.

Хĕвел анса, хĕвел тухса
Пире куллен телей сунать.
Иртеççĕ уйăхсем ăнса, -

Тата мĕн кирлĕ-ха çынна?! –
Пĕрле вĕçлесчĕ ĕмĕре,
Тикĕссĕн таптăр çеç чĕре...
30.03.2002

* * *

Турă пані кашни куна
Пурăнма пĕлмелле.
Хамăр телейсĕр чуна
Вĕçеве чĕнмелле.

Пирĕшти тўперен пире
Сăнаса тăрать,
Йăнăшмасан вĕçевре
Малашлăх парать.

Хĕвел пулмасассăн уйăх
Ялтрас çук тўпере.
Вылявлă çăлтăр туйĕ
Ташлать пĕвере.

Çĕр çаврăнăшĕ май парать
Çаксене сăнама.
Куç курать те ăс хаклать
Малалла пурăнма.

Çавăнпа та кашни куна
Пурăнма пĕлмелле.
Юратушăн çунан чуна
Телей кўмелле.
30.03.2002

* * *

Курманни, тӳсменни ман юлмарӗ,
Аҫа ҫеҫ халь килсе ҫапмалла.
Суллӑмсем Атӑлпа юхса кайрӗҫ, -
Кил-ҫурта мӗнпеле лартмалла?

Эп пӗлеп: тӳсеймест ҫирӗп хурҫӑ.
Этеме мӗнрен тунӑ вара?
Вилӗмпе юнашар тӑрса курчӗ
Ҫын унта та кунта...Вӑл – вӑйра!

Ҫынсенче яланах пурнӑҫ хӗмӗ
Йӑлкӑшать, - куҫ курать хӗвеле.
Ҫавӑнпа пӗр сӳнми кун ҫул сӗмӗ
Килессин тӗввине тӗвӗлет.

Атӑл тӑрӑх каллех сулӑ килӗ,
Ҫӗнӗ ҫурт лартӗ сывӑ этем.
Уҫӑлтарӗ ӳте пурнӑҫ ҫилӗ,
Ҫӗн урам яла кӗртӗ илем.

Тем курсан та, тӳссен те ҫын ҫӳрӗ,
Кашни килнӗ эпир йӑх тӑсма.
Ҫавӑнпа пулас мар ӳрӗк-сӳрӗк,
Кулленех туптам хам чунӑма.
30.03.2002

* * *

Ыраш хушшинчи сукмакпа
Тӑри юррине итлесе
Пымашкӑн утса пит аван.
Вӗҫетӗн эс шухӑшупа, -
Кӗтеҫҫӗ сана инҫетсем,
Кӗтет сана ҫывӑх тӑван.

Ӗмӗт...ӗмӗт сана ыталать,
Лекеҫҫӗ питрен пучахсем.
Туятӑп эп: пӗрчӗ тулать
Ҫӗрпе сывлӑм нӳрне ӗмсе,
Хӑйӗн ӗҫ тухӑҫне ҫын курать, -
Кӗтсе илӗ вӑл кӗр мӑнтӑрне.

Ҫывӑхрах авӑтать путене,
Ун сасси каять ялӑм енне.
...Сукмак тухрӗ шоссе хӗррине,
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр инҫет уҫӑлать,
Йыхӑрать те чӗнет малалла.
Ман унччен кӗмелле-ха яла.

Ҫуралнӑ ял пур...Пит аван.
Тӗнчене эпӗ тухнӑ кунтан.
31.04.2002

* * *

Кӳлĕ пур чӳрече умĕнче, -
Мăшăр акăш ишет кӳлĕре.
Вĕсене эп сăнап темĕнччен;
Пит сăпайлă вĕсем ишевре.

Кунтан кайĕç вĕсем пăрахса,
Хӳтĕрех вырăнсем шыраса.
Чĕп кăларĕç вĕсем хӳтĕре, -
Акăшсем пулмаллах тĕнчере.

Акăшсем пике пек курăнаççĕ,
Чĕрене ĕмĕрех тыткăнлаççĕ.
Пĕрре куртăн – манаймăн нихçан,
Вăй-хал кӳрĕç сан пурăнăçа.

Манăн та акăш пур çуммăмра,
Питĕ çирĕп сыхлать йăвине.
Кун-çул çутине вăл упрать, -
Эп туяп ун çуначĕн вăйне.
31.03.2002

* * *

Çынна куçран пăхсах
Пĕлетĕн кăмăлне:
Çӳрет-и тарăхса,
Пурнать-и савăнса –
Йăлтах пĕлме пулать, -
Куç чăннине калать.

Хĕвел вылять сăнра,
Ачаш тута кулать.
Çынсен апла чунра
Ăшши ӳссе пырать.
Вĕсен пур ăнăçу,
Аталанать кун-çул.

Куç шурри çеç умра,
Сивĕ вĕрет таçтан.
Çук, тăрам мар çумра, -
Тарам-ха ăншăртран.
Эп хăнăхнă ырра,
Телей шырап куçра.
1.04.2002

*     *     *

Усал çинчен шутласанах,
Килет тет хăвăрт йăпшăнса.
Пĕр систермесĕрех сана
Вăл хăварать ура хурса.

Ырри пирки шутлан-шутлан, -
Çӳрет ырри чуман утпа.
Кĕте-кĕте халтан каян,
Пыратăн хавшаса чунпа.

Ырри çитет кая юлса...
Çын кайнă ĕнтĕ шуралса.
2.04.2002

* * *

Мăшăрланнă кураксем
Çавăраççĕ çĕн йăва.
Тăрăшулăх пур вĕсен,
Ёçре пур вĕсен хăват.

Эп курап: ял вĕçĕнче
Кирпĕчрен çурт çĕкленет.
Çамрăксен куçĕсенче
Ялтăрав вылять, çиçет.

Акă, кĕркунне енне
Пулĕ çĕнĕ пӳрт ĕçки.
Хăнасем хуçасене
Чунтан сĕнĕç тав курки.

Кураксем те кăнтăра
Çул тытма хатĕрленеççĕ:
Чĕպписем те ушкăнра
Çуната çирĕплетеççĕ,
Ярăнса кăна вĕçеççĕ.
2.04.2002

* * *

Хĕлле çумăр çăвать,
Çулла юрĕ çăвать, -
Апла та пулать,
Капла та пулать.
Тепри кĕрĕке
Таварса тăхăнать,
Лешсен кĕреке –
Сĕтел аванать.
Пуранатпăр эпир
Хамăр май каç та ир.
Çут çанталăкĕ те
Хăйне май çаварать:
Ăшă кун та пĕтет,
Сивĕ кун та çитет, -
Çын пурне те тӳссе пуранать,
Кун-çулне майлама тăрăшать.
3.04.2002

* * *

Мĕскершĕн ун чухне мана
Эс сăмах патăн, ĕнентертĕн?
Тыткăна илтĕн те чуна,
Канăçлăха йăлтах пĕтертĕн.

Сассу çаплах-ха хăлхара,
Çаплах тăран пек юнашар.
Каллех пĕрле пек улăхра,
Анчах чечек татса ан пар.

Çунсан та чун, - улталаннишĕн
Ятлатăп пĕр хама кăна.
Эп кĕтнĕ çĕн куна,
Кĕтнишĕн
Юрать-и ятлама çынна?

Ӳпкелешсе чăна тухаймăн,
Айăплине те тупма çук.
Утам, утам-ха хĕвел айĕн
Чĕрем хуллен сипленнĕ чух.
3.04.2002

* * *

Э-эхчĕ!
Çавăн пекехчĕ:
Тухаттăм ташша
Вăркăнса,
Пиçеттĕм ăшша
Тăпăртатса.
Купăсĕ!
Ун пеккине туп эсĕ,
Уйăх та
Алă çупатчĕ,
Хуйăх та
Çухалатчĕ, -
Çамрăклăх хĕм сапатчĕ.
Ватлăх çинчен
Шутламан,
Пире тĕнче
Хĕсĕк пулман.
Хĕрсем йăлл! кулатчĕç,
Чуп тутаратчĕç,
Кирлех-тĕк –
Ыталаттаратчĕç.
Чăнах та çаплаччĕ...
Аванччĕ!..
4.04.2002

* * *

«Аса ил...аса ил...аса ил...»
Хум килет ҫырана, хум каять.
Ҫӳҫӗме вӗҫтерсе вӑштӑр ҫил
Хӑлхаран мана уҫҫӑн калать:
«Аса ил...»

Чӑнахах ас илмешкӗн пулать:
Кимӗпеччӗ эпир Атӑлта.
Ҫут хӗвелӗ те, хӗр те кулать, -
Аслӑ ирӗк выртать умӑнта.

Хӗр кайран кайрӗ питӗ инҫе,
Ҫырма пулчӗ, - ҫырмарӗ пачах.
Ман ума тухать ун сӑнӗ ҫеҫ,
Тӑрса юлнӑ-ҫке ахрӑм анчах.

Апла мӗншӗн-ха ман ас илес?
Ҫил мӗскершӗн манпа калаҫать?
Чӗремпе пулаймастӑп хуҫа, -
Тӗл пуласшӑн вӑл ҫав хӗрпеле...
4.04.2002

* * *

Йӑлӑхтарчӗҫ тӗтреллӗ кунсем,
Ҫавӑнпах пуль чунра та ӑмӑр.
Умӑмра тӑрать хӑмӑр та хӑмӑр, -
Килейет-ши хӗвеллӗ илем?

Ҫутталлах туртӑнать вӗт-ха чун,
Ахалех каҫӗсем шутсӑр вӑрӑм.
Вут хутсан, ҫулӑма пӑхса тӑрӑн, -
Апла манӑн чӗремҫӗм те ҫук.

Пит нумай ҫунмалла пурнӑҫра,
Ҫавӑнпа, ҫын, пулсам витӗр куҫлӑ.
Ахальтен-и эс темӗн те уҫнӑ? -
Пурӑнасшӑн пӗрмай малашра.

Ҫавӑнпа та тӗтреллӗ кунсем
Час-час тӑнӑшӑн эп хурланатӑп...
Кӑмака ҫуннине хыт сӑнатӑп, -
Вут уҫҫин те пур ырӑ илем.
5.04.2002

* * *

Хура çăкăр татăкĕ -
Ман сĕтел çинче.
Выртать сахăр катăкĕ
Куçăм умĕнче.

Мĕншĕн çапла чухăн-ши
Манăн кун паян?
Пурнăç...пурнăç тупăн-ши
Çĕнелен вăя,
Кăвак хуппи уçăн-ши,
Юлмăн-ши кая?

Шухăш çăмхи вĕçĕмсĕр
Пуçра сӯтĕлет.
Кун икерчĕ-пĕлĕмсĕр
Хӳхлесе иртет.

Ай, каплах пулсассăн
Пуç çинчи тӳпе,
Халь сывлас-и ассăн
Тăлăх ача пек.

Саншăн, тăван çĕрĕм,
Хурланатăп эп,
Хăçан эсĕ кĕрĕн
Йĕркене?.. – Кĕтеп.
5.04.2002

* * *

Çут çанталăкăн алăкĕ уçă
Пур енне те — çӳре те çӳре.
Çул туйи, çирĕп пулччĕ, ан хуçăл,
Эп çитем чĕре чĕннĕ çĕре.

Хирĕç мар, - эс те пыр.
Питĕ лайăх
Иккĕн çул кĕскетме, калаçма.
Пĕччен мар, мăшăрпа вĕçет кайăк, -
Пĕр-пĕрне пултарать пулăшма.

Çут çанталăк вăл ырă, кăра та:
Уяр кун, аçа-çиçĕм, тăман...
Ылттăн-кĕмĕл умра эс куратăн, -
Шухăшлатăн яланлăх пуйма.

Эс çеç мар-çке...сынсем ыйткалаççĕ.
Çу çинче ярăнас-и пĕччен?
Çынлăхран кăларса мăшкăллаççĕ
Тап-таса кăнтăрлах, çул çинче.

Кун пек чух çут çанталăк-сăнавçă
Пулăшаймĕ сана нимĕнпе.
Пĕлĕтсем çĕре çывăх анаççĕ, -
Ан аптратăр тырпул типĕпе.

Чунăм çеç ĕмĕре таса юлтăр, -
Çитмелли çĕрсем пулччăр нумай.
Ырă сунтăр хĕвел, йăлтăр култăр,
Пĕлер çеç тĕнĕлне упрама.

* * *

Хĕвелпе те, уйăхпа та
Эп инçе çула тухатăп,
Çутă йăлтăр çăлтăра та
Сар хĕре татса паратăп.
Хура çĕрĕм, тăван çĕрĕм,
Сăввăма ялан эс кĕрĕн.
Савнă ял, йăмраллă ялăм,
Эс Шупашкарта та паллă.
Эп çуралнă ырă килĕн
Чĕререх çӯрет ăш пилĕ.
Анне евĕр тăван ен
Кăларман ытамĕнчен.
Çавăнпа йăлтах эп тӯснĕ,
Юман евĕр çирĕп ӳснĕ.
Çитесехчĕ çĕр çула,
Çитмесен, тус, ан ятла...
Çакăн чул пурăннипе те
Эп хама телейлĕ тетĕп.
6.04.2002

* * *

Малтан пулнӑ Сӑмах.
Сӑмахчен – пулнӑ Турӑ.
Этемле пурӑнма
Ӗҫлемешкӗн вӗреннӗ.
Ӗҫленӗ те – юрӑ
Ӗшенсен те – ҫӗкленнӗ.
Ҫапла пурнӑҫ тунӑ,
Сӑхсӑхнӑ Турра.
Хӗн-хур,
Савнӑҫ курнӑ,
Ырра кӗтнӗ умра.
Сӑмахӑн хӑвачӗ
Панӑ кун-ҫул,
Унӑн тухачӗ
Пире сӗннӗ ыр ҫул;
Вӗлернӗ пӗр шелсӗр
Хаяр вӑр-сӑмах,
Ӳксессӗн те мелсӗр,
Пӗлмен аптрама.
Сӑмах – пирӗн пурнӑҫ,
Сӑмах – вӑл тӗнче.
Хамӑр пурте Туррӑн
Таса аллинче...
7.04.2002

**ЮРАТУ**

Чечек çине ларать вăл шăппăн,
Татать те каччă ăна лăпкăн,
Çак чечеке парать хĕре.
Тин çеç куççуллĕччĕ чĕре, -
Хĕр сăнĕ йăлкăшма пуçлать,
Куçăн шăрçи çине тухать
Никам пĕлмен илемлĕ ăшă:
Вăл халь ыт мар, вăл халь – тĕкел.
Шур хурăнсем те пăшăл-пăшăл
Пуплеççĕ хĕр çумсем пекех.
Чунри пăр ирĕлет, -
Туятăн.
Юрлас килет, -
Вĕçен хăлатăн.
Ăçта сăмах? Ăна тупаймăн.
Пĕлмен çул тăрăх утса кайăн.
Чи кирли çеç чĕлхе çинче:
«Эп юрататăп!..» – Çут тĕнче
Çавăрăнать хĕвеле майăн...
25.03.2002

* * *

Çуркунне пуçланать тумларан,
Пуçланать сар хĕвел куллинчен,
Кураксем ял йăмрийĕ çинче
Йăвасем çавăрма пуçласан.

Юрату мĕнлерех пуçланать?
Кун пирки кам калайĕ татса?
Куç шăрçи хĕлхемпе йăлтăрать,
Сăн çинче асам вăйĕ çунса
Чĕрене парать çĕнĕ хăват.
Çав хăват хĕр патне çул хывать.
Тен, çапла Юрату çуралать?

Куна пĕлĕ кун-çул...
Çут хĕвел
Ирхине пуçарать ыр кĕвве.
Çавă кĕвĕ çыхать пĕр тĕвве
Шăпасен çул-йĕрне ĕмĕре...
Сисме çук – кил-çурта кин кĕрет.
23.03.2002

* * *

Хум ҫине хум
Ывӑтать ирӗк Атӑл,
Хырсем тайӑлаҫҫӗ,
Хырсем кашлаҫҫӗ,
Ҫыранти ҫиле хирӗҫ
Пӗр шиксӗр тӑратӑп,
Кимӗҫсем те васкаҫҫӗ,
Хӳтлӗх шыраҫҫӗ.

Чун кӑна хӑйне евӗр
Пӑхать малалла,
Ҫитмелле ун ҫитес ҫӗре.
Тухсассӑн ҫула
Утас пулать:
Вӑй-хал пур чухне
Кӗреш те кӗреш, -
Ҫӗнтерет
Тапакан чӗре.
23.03.2002

* * *

Атӑлта хӗвел шыва кӗрет, -
Хӗвеле те пӑчӑ пулӗ ҫав?
Хум калла-малла кумса ҫӳрет,
Уҫӑ варкӑш кӑмӑла уҫать.

Хум ҫинче хӗлхемлӗн выляса
Йӑлтӑраҫҫӗ ҫеҫ пайӑркасем.
Ҫиле майлӑн канлӗн ярӑнса
Чӑйлатса илеҫҫӗ чарлансем.

Атӑл та канасшӑн пулмалла
Лӑпкӑ кунӑн ыр ытамӗнче.
Кун пек чух кӗтмест вӑл тӑвӑла, -
Ҫавӑнпа хӗрӳллӗн ҫупӑрлать
Каччӑ сар хӗре кимми ҫинче.

Хӗвел чӑмнӑ тейӗн Атӑла, -
Шӑрӑх чух хӗвел те уҫӑлать...
22.03.2002

* * *

Тӳсме пултарайманлӑх пӗтерет
Ыр шухӑша е ҫутӑ кӑмӑла,
Ним маршӑнах ҫын юхӑнса ҫӳрет,
Пӗлместпӗр калаҫма хӑш чух тусла.

Пӗлместпӗр тӑнлама ҫын сӑмахне,
Каятпӑр пӑрӑнса
Алла сулса.
Ҫынни, тен, пӗлтересшӗн кирлине,
Хӑй чӑтнине
Парасшӑн-тӑр уҫса.

Тӳсме пултарайманлӑх кун-ҫула,
Патшалӑха хурать сӑтӑрласа.
Ҫавӑнпала, туссем, пур вӑйпала
Тӗп шухӑша пурнасчӗ упраса.
17.03.2002

* * *

Тирпейсӗрлӗх ӑҫта кӑна вӑл ҫук?
Килте те урамра...
Юратура та,
Эп ҫавӑнпа тӑрап тӑлӑх-туратӑн
Пӗрле килӗштерсе ҫеҫ утас чух.

Тирпейсӗрлӗх калаҫура нумай:
Ҫӑратпӑр вырӑсла та, чӑвашла та.
Чӗлхемӗре пӗлместпӗр упрама, -
Куна пӗр пытармасӑр эп калатӑп.

Тирпейсӗрлӗх пӑсать пурӑнӑҫа,
Юлташлӑха та сиенлет куллен.
Тирпейсӗрлӗх ан пултӑрччӗ хуҫа
Пирӗн чунра...
Кӑклар ӑна хуллен.
18.03.2002

* * *

Илемре ҫӗн ҫӗр улми
Кӑларса уяв тӑваҫҫӗ.
Тутлӑ-ҫке ытарайми! –
Килӗ-йышӗпех савнаҫҫӗ.

Пан улми кукли Спасра
Сӗтеле илем кӗртет.
Питӗ техӗмлӗ сӑра
Тутанмашкӑн илӗртет.

Ҫурла уйӑхӗ уявлӑ,
Ҫурла уйӑхӗ - ӗҫҫи.
Уй-хирте ӗҫлетпӗр шавлӑн, -
Усӑлтар ӗҫчене, ҫил!

Ылттӑн тырӑ куҫ тулли,
Пӗрчисем янтарь тӗслех.
Апла ялӑмӑр пӳлми
Ҫӑкӑрпа кӗрет хӗле.

Ҫӑкӑр пур, - юрри пулать,
Сӳпҫере шӑрттан выртать.
Ӗҫ пӗтсен туй лартмалла,
Хӗртен арӑм тумалла.

Пурӑнӑҫ йӗрки ҫапла,
Ҫын пырать ӑна тытса.
Вӑхӑт ҫитрӗ - уявла,
Ан хӑвар ӗҫе манса.
16.07.2000

* * *

Пур юратнӑ вырӑн кашни ҫыннӑн:
Сад пахчи, уҫланкӑ е ҫаран...
Туссемпе унта хаваслӑн пынӑ,
Утнӑ унталла тунсӑхласан.

Уҫланка савнипеле тухсассӑн,
Татнӑ чечексем кӑшӑл ҫыхма.
Именсе йӑвашшӑн чуп тусассӑн,
Маннӑ чи хӗрӳ сӑмах тупма.

Пулнӑ, пулнӑ...Пытарса ларас-и?
Юн вылянӑ ӗнтӗ ҫамрӑк чух.
Яшлӑхран килет телейлӗ сасӑ,
Ҫав сасса асран кӑларас ҫук.

Ҫарана ҫулмашкӑн тухнӑ утӑ,
Хӗрсем тавӑратчӗҫ паккуса.
Ялалла хам савнипе эп утнӑ
Шӑкӑл-шӑкӑл ыррӑн каласса.

Сад пахчи те питӗ хапӑллатчӗ,
Сӗннӗ вӑл ҫырла та панулми.
Шӑппӑн ҫулҫӑсем пӑшӑлтататчӗҫ,
Пӑхнӑ хӗр ҫине ытарайми.

Кашни ҫыннӑн пур юратнӑ вырӑн,
Вӑл тӑрать ӗмӗрлӗхе асра.
Ҫавӑнпа аса илетӗп ыррӑн
Пӗтӗмпех...
Йӑлтах, йӑлтах чунра.
15.07.2000

* * *

Пурнăç савнăçне пĕлес тесен,
Хурлăхне те пĕлмелле иккен.
Çавăн чух кăна телей çинчен
Чунпала туйса илен, пĕлен.

Савнăçпала хурлăх юнашар,
Йĕрлесех çÿреççĕ пĕр-пĕрне.
Хурлăх вут пек çунтарать ăша,
Савнăçĕ сиплет чун-чĕрене.

Савнăç витĕр инçете пăхан,
Хурлăх пĕтерет кăна пуçа.
Эсĕ тав тăватăн туслăха
Уçнăшăн ĕмĕрлĕхех куçа.

Пурнăçра ÿкетĕн те тăран,
Юриех ура хуни пулать.
Ак, телей тупан юратура,
Вăл сана çĕнĕ вăй-хал парать.

Каялла вара чакас килмест,
Пултаратăн ĕнтĕ çĕнтерме.
Хатĕр эсĕ çулăма кĕме,
Сана, кур-ха, çулăм та илмест.

Йывăр çĕнтерÿ патне çитме,
Анчах йăлт килет-мĕн хамăртан.
Чăн таса этем ятне илтме
Вĕренес пулать-мĕн ачаран.
15.07.2000

## АСРИ АЛЕКСАНДР АЛКА

Чăваш литературин алăкне
Ман умра уçрăн юлташла.
Çулпа эс аслăччĕ. Çамрăксене
Утма хистеттĕн ăшшăн
Малалла.

Пĕр тан тытаттăн манпала хăвна,
Нихçан та эсĕ каçăртман пуçа.
Параттăн вуласа çĕн сăввуна, -
Сăвву ăсталăх меслетне уçать.

Вулаттăм эп те. Хăш-пĕр чух мана
Чараттăн та калаттăн: «Кăшт юса...»
Пĕр-ик кун пек ларса тăрăшсанах
Сăвва пыраттăм «Ялава» йăтса.

Тухаттăн вуласа.
Йăл-йăл кулса,
Куçран пăхса: «Яратăп пичете...»
Тееттĕн те хураттăнччĕ хушса: -
Çапла çырас пулать. «Ялав» кĕтет...»

Пит çăмăлах килмерĕ кун-çулу,
Хĕссе те илчĕç пĕр самант сана.
Çапсассăн вут чулне хастар çулу
Хĕм кăларать...Çапла-мĕн туптанать
Таса чĕре, - хăратма çук ăна.

Вĕрентекенĕм! Палăку умне
Пырса килетĕп эпĕ çулленех.
Умна эп хуракан чечексене
Эс кăмăллаттăн ху чĕрĕ чухне.

Пуçарсанах сăмах Алка çинчен,
«Вăл маттур сăвăç» теççĕ çиййĕнчех.
Хисеп те чыс сана, вĕрентекен.
Пурнать-ха халăх. Эс ун асĕнчех.
14.07.2000

* * *

Канашлама пĕлместпĕр.
Вĕренĕпĕр-ши эпĕр?

Канаш – пĕр çăвартан
Тăванлăн пурăнни,
Пĕçернĕ çăкăртан
Пит аслă пулманни,
Хăвна ыттисенчен
Мăнаçлăн тытманни,
Çĕр-шывăм умĕнче
Яваплăн пурăнни.

Канашлама пĕлни –
Тăнăçлăхшăн çунни,
Йывăрлăха çĕнни,
Кун-çулăмăр ăнни.

Çавăнпала чăваш
Тытать ялан канаш.
13.07.2000

* * *

Тӳрех ҫӗклет вӑл аллине:
Йӑвантарать хӑй арӑмне.
Алли мӗскерщӗн-ши ҫӳлте?
Тытаймӗ пурпӗр пӗлӗте.
Хӑлаҫланни ӑс пуррине,
Куратпӑр, пӗлтермест нихҫан.
Чӑмӑртаса хӑй чышкине
Юсаймӗ вӑл пурӑнӑҫа.
Апла пире хӗнеме мар,
Ӗҫ тума панӑ, пӗлмелле.
Хӗр арӑмпа ут юнашар,
Кунна ҫулна тек йӗркеле.
Ал ӑсталатӑр эрешсем,
Вӑл тӗлӗнтертӗр тӗнчене.
Чӑн-чӑн асаматла илем
Ҫӗклентӗр аслӑ тӳпене.
Ҫӗр чӑмӑрне тытса тӑма
Пултартӑр алӑ кулленех.
Сухалама, тырпул акма
Вӑл ҫирӗплеттӗр шӑнӑрне.
Ал ыталатӑр юратса;
Вӑл ан ҫӳретӗр хӑмсарса.
Ал пурнӑҫ тунӑ ӗмӗрех
Илем кӗртсе тӑван ҫӗре...
13.07.2000

## ШĂПЧĂКПА КĔЛЧЕЧЕК
Легенда

Чăнах та шăпчăк лайăх юрăç,
Хитри çуках кĕлчечекрен.
Шăпчăка итлĕн,
Чечеке курăн, -
Киленĕн пĕтĕм чĕререн.

Пĕрне-пĕри вĕсем саваççĕ,
Анчах та пĕр-пĕрин патне
Халь ĕнтĕ çывăха пымаççĕ, -
Пĕлмиш пулаççĕ сăлтавне.

Кĕлчечеке пĕрре-мĕн шăпчăк
Хуллен ыталаса илет,
Чечекĕ систермесĕр, шăппăн
Йĕпписемпе хуллен чикет.

Ак, шăпчăк пăрăнса вĕçет.
Çав вăхăтран вăл ирсерен
Кĕлчечеке килентерет
Тĕлĕнмелле юррипелен.

Кĕлчечеке мĕнех калайăн? -
Итлет пĕр вĕçĕмсĕр савса.
Куççуль пек сывлăм йăлтăрса
Çеске çинче тăрать хăй майлăн.
14.07.2000

* * *

Масар ҫинчи палăксене ватаҫҫӗ
Укҫа тăвас тесе
Е иртӗхсе.
Ма ҫылăх пуласса асра тытмаҫҫӗ? -
Хăрса ӳкесчӗ аллисем.

Хăйсем халь чӗрӗ-сывă та –
Пӗлмеҫҫӗ
Масар енне пӗрре ăсанасса.
Хӗрессене пӗр шелсӗр тӳнтереҫҫӗ
Ӳсӗр пуҫпа, эрехпеле урса.

Вӗсен пурах пуль амăшӗ те ашшӗ,
Вӗсене ҫын ҫуратнă пулӗ теп.
Пурах-ши пӳтсӗрсен таса малашӗ?
«Ăс пухӗҫ-ши мурсем?» шутлатăп эп.

Ырри пирки
Вӗсем йăлт маннă пулӗ?
Усал тăватăн – йăлт хăвна лекет.
Мӗншӗн тесен,
Ылханакан куҫҫулӗ
Ахаль иртмест, хаярлăхпа йӗрлет.

Вӗсем, - мӗн тăвăн? -
Ҫак сăвва вуламӗҫ,
Ҫавах та вулаҫҫех таса чунсем.
Вара ҫав мурсене иртӗхме памӗҫ,
Тинех шăп ларӗҫ пирӗн масарсем.

Анчах та мăнттайсен аллисем юнлă,
Пăшал кӗпҫи пăхать ҫынсем енне...
Чыса пӗлекенсем тӗнчере юлнă,
Кăкăрпа пӳлнӗ йӗксӗксен ҫулне.
12.07.2000

* * *

«Чăваш ятне ан яр»,
Тет ватă çын мана.
Ман халăх вăйсăр мар,
Туптать вăл çĕн куна.

Вăл аслă тӳпере
Кăйкăр пекех вĕçет,
Хăватлă тинĕсре
Чăн Улăп пек ишет.

Тăрсассăн ĕç умне
Йăлтах ăнса пырать.
Вăл хăйĕн кил-йышне
Куç шăрçи пек упрать.

Вăл курайманлăхпа
Сăтăр тумасть çынна.
Пĕлетĕп: çавăнпа
Таса тытать чуна.

Пур пирĕн хушăра,
Паллах, вăрă-хурах.
Пур хуракан ура,
Кĕвĕçӳпе урать.

Туятăп: вĕсенчен
Пит йывăр тасалма,
Çавах та çут тĕнче
Мала пăхать пĕрмай.

Историе тĕпчет,
Паянхилле ĕçлет.
Пĕр шутласа хурсан,
Чакмастпăр нихăçан.

Ĕмĕчĕ пысăк ун,
Чĕри те шĕл-кăвар.
Эппин, юлташăм, çун,
Чăваш ятне ан яр.
11.07.2000

* * *

Çырлапа мана сиплерĕ арăм:
Эп пĕлмен кун пек техĕмлĕхе.
Чун-чĕреçĕм юрлама пуçларĕ,
Ыталарăм: «Ку - ĕмĕрлĕхе!..»

Çамрăк чух та çĕр çырли çитертĕн
Утă çулнă вăхăтра мана.
Ун чухне те иртнĕччĕ хур-тертĕм...
Апла тавтапуç, çырла, сана.

«Ку - ĕмĕрлĕхе!»..чуп турĕ арăм.
Иксĕмĕр – каллех вун çиччĕре.
...Яшлăхри ытарайми çут ахрăм
Тепĕр хут кил-çуртăма кĕрет.
2.07.2000

* * *

Урамра юхӑм пек хумханаҫҫӗ,
Утаҫҫӗ ҫынсем, ҫынсем.
Кулаҫҫӗ вӗсем, калаҫаҫҫӗ,
Илтӗнмеҫҫӗ сӑмахӗсем.

Вӗсен хушшинче сана куртӑм.
Эсӗ ҫеҫ курмарӑн мана.
Кӗтет вӗт сана манӑн ҫуртӑм, -
Мӗн-ма ҫунтаратӑн чуна?

Сасартӑк сана мӗн пулчӗ?
Мӗскершӗн ҫӳрен пӑрӑнса?
Ӑшра хурлану ҫеҫ юлчӗ.
Пулать-ши пӗрле савӑнса?

Шанатӑп: эс килӗн-ха, килӗн.
Хӗр кӳренӗвӗ тивӗҫ иртме.
Кӗҫех ытама эп илӗп
Кӗнӗ майӑн санпа килӗме.

Ӑшӑмра каҫару ыйтатӑп,
Чӗркуҫленӗп пит кирлӗ пулсан.
Ма тесессӗн чунтан юрататӑп,
Ма тесен, пӗтӗмпех эп сан.

Урамра юхӑм пек хумханаҫҫӗ,
Утаҫҫӗ ҫынсем, ҫынсем.
Куҫӑмсем пӗр сана ҫеҫ шыраҫҫӗ.
Акӑ куртӑм: сиссе илсем...
10.07.2000

* * *

*Я люблю тебя, жизнь...*
*К. Ваншенкин*

Эп савап пурнăçа,
Савнăран ăнăçать.
Ĕçпе çылăх каçать,
Тăрăшу вăй парать.

Пурнăç çулĕн тертне
Эс куратăн, сисен,
Чул пусать чĕрене, -
Эс чăтатăн, тӳсен.

Хĕвел пирĕн пĕрре,
Çăлтăрсем çеç нумай,
Уйăх пур тӳпере
Каçсене çутатма.

Пур хĕрсем чуп тума,
Юратсан ыталан.
Вара эс йăх тăсма
Туй туса авланан.

Кун иртет, каç иртет,
Кĕскетет пурнăçа.
Пире ĕмĕт чĕнет
Ӳстерсе шанăçа.

Эп савап пурнăçа!
Хĕвел пирĕн пĕрре.
Савнăран ăнăçать
Манăн çак тĕнчере.
10.07.2000

* * *

Хисеппе чыс ялан упрантăр,
Хăв туйăмна пĕл упрама.
Ак, саншăн ăнăçу тапрантăр,
Умна сасартăк çăлтăр антăр, -
Çавах ан хăй пуç каçăртма.

Мухтавпа чап мĕнне туйсассăн,
Тӳсме пултар эс вĕсене.
Мăнаçланас килсе кайсассăн,
Мăнаçлăхна пӳл çирĕп саслăн, -
Аса илсем йăхна-тĕпне.

Тăри сассипеле вăраннă
Вĕсем ĕçе тухма хире.
Хресчен ачи...Çакна-и манăн?
Хĕвелпе çуннă та тарланă,
Кайран шыва кĕмешкĕн аннă,
Чӳхеннĕ ирĕк пĕвере.

Йăх-тĕп хисепĕпе чысне
Кашниййĕ упрамашкăн тăрăш.
Вара чăвашăмăр ятне
Ĕмĕрсем урлă пĕлсе тăрĕç.
10.07.2000

* * *

Тăвн ял çĕрĕ хытă та, çемçе те:
Выртмара чух эп çывăрнă выртса.
Кĕтмен çĕртен ак такăнса ӳкетĕп:
Ыраттарать çĕр мăкăль кăларса.
Çĕр тăрăх çӳреме те пĕлмелле,
Ӳксессĕн – тăр та ут эс этемле.
Тӳшекĕ те, минтерĕ те çĕр пулнă,
Çавăнпала ĕмĕр аса вăл юлнă.

Шăрăх чухне çĕр аптăрать пит хытă:
Вăл çурăлать, чул евĕр муклашки.
Çавах унпа юлташлăн эпĕ тытăп,
Чӳк тăвăп: курăн асамат пĕкки!
Çумăр çусассăн пылчăк тăрăх утăп,
Хам кăмăла хирпе пĕрле эп уçăп.
Тăпра хăвачĕ пысăк пулнăран
Юр-варсенчен эпир аптăраман.

Вĕçет шаланкă ешĕл вăрман çийĕн,
Ялта чĕкеç юрлать шерте çинче.
Хăй вырăнĕ пурах иккен кашниййĕн,
Кашниййĕн хăйне евĕрлĕ тĕнче.
Çăл куçĕ тăрна куçĕ пек таса,
Хĕр сассипе юрлать шăнкăртатса.
Эп туслă вĕсемпе ĕмĕрлĕхе,
Упрасчĕ чунăмра çак пĕрлĕхе.
9.07.2000

* * *

Çын прави пирки тек калаçатпăр,
Калăр-ха, ăçта вăл? Хăш тĕлте?
Аслă пĕлӳпе хăш чух ларатпăр
Ĕçлеймесĕр выçăхса килте.

Çĕнĕ ăрăва ӳссе çитме,
Вĕсене çынсен шутне кĕртме
Питĕ йывăр ашшĕ-амăшне, -
Çитерес пулать ачасене.

Вĕренетпĕр тӳлесе укçа,
Сипленме эмелĕсем пит хаклă.
Кам юсаса ярĕ пурнăçа?
Кун-çул пăсăккишĕн кам явапла?

Çĕр ĕçченĕ çĕрсĕр аптăрать, -
Кун пирки
Шавлатпăр темĕн тĕрлĕ.
Çынна çĕр ялан ирĕк парать,
Çĕр çинче этем çирĕп тăрать, -
Вăл ăна пурнăç тумашкăн кирлĕ.

«Халăхшăн тăрăшмалла» тесе
Сăмахсем çаптарнине илтетпĕр.
Эй, сăмах памасть çав ĕçлесе! –
Эпир пур, шанатпăр та кĕтетпĕр.

Çыннăн прави пур-и? Пур пулсан,
Ăна памалла пĕр тăхтамасăр.
Эп ĕçлем, çӳрем тĕнче курса,
Ялан кивçене, ыйтма каймасăр.
8.07.2000

* * *

Пуранчĕ вăл мул пухас шутпа:
Улталарĕ,
Хăшпĕр чух вăрларĕ.
Шухăшларĕ пулĕ: укçапа
Шурă çурт та хăвăрт ӳссе ларĕ.

Мул çынна мăнкăмăллăх кӳрет:
Юлташне те паллами пулать.
Ĕнтĕ укçапа çав çын пĕлет:
Уншăн кашни алăк уçăлать.

Тĕлĕкре те укçа çеç курать,
Кайнă вăл манса таса Турра.
Кивĕ арăмне улăштарать, -
Ăна кирлĕ çамрăк ӳт çумра.

Таса мар пуянлăх тавăрать,
Эп ăнлантăм çакă чăнлăха:
Ылттăн витĕр те куççуль юхать,
Юрамасть суймашкăн халăха.

Конфискаци...Çакă сăмаха,
Шел те, калаймарăм чăвашла.
Ултавпа пуçтарнă пурлăха
Çĕр-шыв пӳлмине-мĕн памалла.

Чăн, çапла!
9.07.2000

* * *

Чăваш çĕрне ĕмĕрлĕхе саватăп;
Саватăп эпĕ шур Шупашкара, -
Çеçпĕл Мишшин хастар сăнне куратăп;
Вăл çирĕппĕн утса пырать умра.

Çаранĕ те каш-кашлакан вăрманĕ
Пыллăхĕпе уçаççĕ чунăма.
Пур малтанхи сукмакăм
Кунта манăн,
Кунта пуçланă эпĕ юратма.

Йăх-тĕпĕме çак çĕр-çке панă канăç,
Шур Шупашкар мал еннелле чĕнет.
Вăрман кўллисене шур акăш аннă,
Тăри ирех йыхрать хĕвел патне.

Чăваш çĕрне ĕмĕрлĕхе саватăп:
Кунта вĕреннĕ чыслăн ĕçлеме.
Килес кунсемшĕн сăвăсем çыратăп, -
Туптамалла куллен чĕлхеçĕме.
7.07.2000

* * *

Ăнтавăшран Мускав таран
Шап-шурă,
Шупашкар та витĕннĕ юрпа.
Çавăнпа ялан эп таса курăп
Çакă тăрăха ялтра куçпа.

Юр çути шартсассăн та куçа
Нимĕн шикленмесĕр утăп эпĕ.
Ма тесессĕн, кунта эп хуçа,
Кунта тăван халăхăн хисепĕ.

Çакă тăрăхра çитĕнекен
Тӳрĕ кăмăлпа пурнать ялан.
Тырă акакан, ӳстерекен
Çынна нихăçан та хур туман.

Çĕр нуши – вăл халăх чунĕнче,
Нушана пĕлет пулсан чĕре, -
Вăрăм, тертлĕ ĕмĕр тăршшĕнче
Савăнма пĕлет çын тĕнчере.

Шур юр витĕр çуркунне енне
Утнă майăн ĕмĕтлĕн пăхатăп.
Ав, Ăнтавăшри кил-çуртсене,
Хам çуралнă килĕме куратăп.
7.07.2000

* * *

Урампа пынӑ чух пыл шӑрши:
Ҫӑкасем чечек ҫурнӑ иккен.
Ай, пылне тутанса пулӗ-ши
Кӗркунне, ӗҫ-пуҫа пӗтерсен?

Кашниех юрататпӑр тутла,
Никамах та савмасть йӳҫҫине.
Ҫын пӑхать малалла,
Вӑл шутлать
Ырӑпа ирттерме ӗмӗрне.

Хул пуҫҫи ҫийӗнче яланах
Выртать йывӑр ҫӗклем,
Пуслӑх пек.
Пуранмашкӑн пуҫлатӑн кӑна, -
Хупланать те хӗвел пӗлӗтпе.

Куҫ тулса та тулли куҫҫульпе,
Тӑрӑшаҫҫӗ кулма тутасем.
Пурӑнать ҫын ҫавах ӗмӗтпе, -
Вӑл кӗтет: килеҫҫех ыр кунсем.

Урампа пынӑ чух пыл шӑрши:
Ҫӑкасем чечек сарнӑ иккен.
Апла манӑн утас ҫул тӑршши
Питех хурлӑ та пулмӗ-и тен?
5.07.2000

* * *

Кашкăра вăрмантан
Хырăм выççи кăларать.
Ма тесессĕн чее куян
Хăвăла, шăтăка пытанать.

Хырăм выççи уттарĕ
Сурăх вити енне.
Кашкăр унта хăварĕ
Хăйĕн сăрă тирне.
30.06.2000

* * *

Çӳренĕрен çын евĕр тумланса,
Чăннипелех, этем пек курăнатăн.
Сасартăках тумна хывас пулсан, -
Хаярлăхпа, элекпе çеç юлатăн.

Ӳт-тирӳ витĕр палăрать йăлтах:
Кам иккенне час палласа илетĕн,
Пĕлесчĕ санăн именме кăштах:
Эс пирĕн хушăрах
Утса çӳретĕн.

Сан ӳт-пĕвӳ тĕшĕ паман чечекĕн,
Сисетĕп: хăрса типĕ ерипен.
Санра нихçан пулман пулас ĕренкĕ,
Тумланнăран — курнатăн этем пек.
12.07.2000

* * *

Çынна япала пек вăрлаççĕ,
Унтан чуралăхра усраççĕ.
Вăрлаççĕ те – укçа ыйтаççĕ,
Укçасăр ирĕке ямаççĕ.

Куна кам шутласа кăларнă?
Вăрри хăех саккун тăвать.
Хăй хыçĕнчен вăл йĕр хăвармĕ, -
Чăнни çавах тӳрре тухать.

Анчах унччен?.. Унччен чăтатăн.
Çĕр-шыв шăлне çыртса тӳсет.
Хăвна вĕлересрен хăратăн, -
Пăшалĕ вăррăн тĕл перет.

Ку иртĕхӳ хăçан-ши пĕтĕ?
Йĕрке кирлех тавралăхра.
Йĕркесĕр ыррине ан кĕтĕр,
Тасалăх пулмалла çынра.

Кĕтмен çĕртен элек сараççĕ:
Хăть выртса вил, хăть ӳк кайса.
Хисеп-и, чыс-и? - упрамаççĕ,
Хăй пултăр çиеле тухса.

Ютран ыр сунакан сахал,
Ютсем мула çеç хапсăнаççĕ.
Ĕçе вĕреннĕ халăха
Муталама кăна пăхаççĕ.

Пирĕн ăса илеççĕ сутăн,
Укçа халь вăйлă тĕнчере.
Вăл çук – ыйткаламашкăн утăн,
Вăй-хал пĕтсен - ӳкен çĕре.

Çавах та тĕрĕслĕх çĕнтерĕ!
Çăкăрпала хĕвел умне
Пире кун-çул илсе çитерĕ, -
Туптар çĕннишĕн чунсене.
7.06.2000

* * *

Итленĕ май Чайковский кĕввине
Чун савнăçпа е тунсăхпа тулать.
Вĕçетĕп эпĕ çӳл тӳпе енне,
Чĕреçĕм ман чăн-чăн çунат хушать.

Тен, пирĕшти хайланă çак кĕвве?
Пупленĕ пуль хайлавçă Турăпа?
Паллах, вăй-халне панă çут хĕвел,
Ăна пилленĕ çĕр çапла шăпа.

Хĕм кăларать клавишсенчен талант, -
Мĕнле тӳсеççĕ хĕлĕхсем, ачашкерсем?
Итлетĕп сывламасăр пĕр самант,
Ан сая кайтăр тĕнчери илем.

Чайковский асамлать тавралăха,
ĕмĕрлĕхе вăл тыткăнлать чуна.
Мана илсе кĕрет пуласлăха,
Курма вĕрентнĕ майăн чăнлăха
Эп ăнкаратăп ыранхи куна.
16.07.2000

* * *

Ытла та хăвăрт арканать çемье:
Çур çул пурнаççĕ, -
Уйрăлса каяççĕ,
Юратура шыранă телее,
Иккен,
Мăшăрлансан та тупаймаççĕ.

Малтан: «Саватăп. Ёмĕрлĕх эп сан!..»
Тесе хĕрўллĕн тупа тунă мар-и?
Халь, ак, кил-йыш йывăрлăхĕ пуссан,
Хăрса ларать тўрех çемье тымарĕ.

Тен, юратман вĕсем пĕрне-пĕри?
Савăшмалла кăна каç-каç вылянă?
Халь иккĕшин те сивĕннĕ чĕри,
Вĕсен сăмахĕсем те хаярланнă.

Ача çуралĕ...Ашшĕ ун ăçта?
Ма маларах
Шухăшлама пĕлмен-ш?
Хĕр мар, хĕр арăм пĕчченех утать,
Хăйне ыйту парать:
«Мĕскершĕн? Мĕншĕн?..»

Ыйту паратпăр пит кая юлса.
Шăкăртатать те кашăк: «Уйрăлатпăр!..»
Савса мăшăрланма пĕлмен пулсан, -
Юрать-и – çынлăха чунра упратпăр...

Хĕрсе кайсассăн çăмăл уйрăлма,
Ан тивтĕрччĕ кайран пуçа хыçма.
12.07.2000

* * *

Эп юратнӑ, эс юратнӑ,
Пӗр-пӗрне улталаман.
Эп ҫухатнӑ, эс ҫухатнӑ,
Пурпӗр аптраман.

Аптраман-и? Ыр ят илтнӗ
Эпир халӑхран.
Эс юратнӑ, мана ҫитнӗ,
Иртмен Турӑран.

Тӳрӗ пулнӑ манщӑн чӑнлӑх,
Пӑрӑнман ҫултан.
Пурнӑҫ утнӑ ырӑ сӑнлӑн,
Хаярпа пӑхман.

Тухнӑ пуль асар-писерӗ,
Килнӗ-тӗр инкек.
Эсӗ хӑраса ӳкмерӗн
Хӑшӗ-пӗри пек.

Пур чухне те ҫумӑмраччӗ.
Пултӑн ман тӗрек.
Вӑхӑчӗ, чӑнах, кӑраччӗ, -
Тӳснӗ вӗт чӗре.

Паян кун та юрататпӑр
Вун саккӑрти пек.
Хӗвел айӗнче пурнатпӑр
Пысӑк ӗмӗтпе.
19.07.2000

* * *

Республика лапамĕ. Сар хĕвел
Ку вырăна халь савăнăçлăн аннă.
Ав, Ленин та кĕресшĕн чиркĕве,
Ун еннелле утса пырать вăтаннăн.

Ашшĕпе амăш кĕртнине шыва,
Тен, аса илчĕ пулĕ ăнсăртран.
Пур Туррăн хăйне евĕр вăй-хăват,
Хăвачĕ кăлармасть ун çынлăхран.

Каçарттарасшăн пулĕ çылăхне:
Мĕн чул пуппа архимандрит пуçне
Вăл сĕннипе леш тĕнчене ăсатнă,
Чиркӳсене çĕр çийĕнчен тасатнă.

Халь чиркӳ чанĕ янăранине
Мĕнле итлет-ши? Бронзăн чунĕ çук.
Çынсем сахал пыраççĕ ун патне, -
Ĕлĕкхи мар çав, - аслă уяв чух.

Чиркӳсем çеç-и?..
Ăслă çынсене,
Вĕсем маттур та паттăр пулнăран,
Хӳтернĕ Раççейрен
Париж, Стамбул енне, -
Мĕскершĕн халăх майлă калаçан?
Е нумайрах пĕлетĕр çулпуçран?
Раççей çынни Раççейсĕр тăрса юлнă,
Ун чух шăпа, чăнах та, хаяр кулнă.
«Хĕрлĕ террор» çинчен мĕле манайăн?
Айăпсăрах ун чух пĕтсе нумайййăн.

Ма хуҫмаллаччӗ халăх кăмăлне?
Вӗлернипе пулать-и ҫӗнӗ пурнăҫ?
Ҫынсем кышлана Ҫӗпӗр шăн ҫӗрне, -
Этем нихҫан курманнине те курнă.

Ҫавах, ҫулсем ҫӗнелсе пынă май,
Тек тăвас марччӗ хăрушла ӗҫсем.
Ҫынна парасчӗ часлăн пурăнма,
Пире хăтарса пытăр чăн Илем.

Эпир вӗреннӗ ӗнтӗ ӗҫлеме,
Хăравҫăлăх та сирӗле пуҫларӗ.
Кашнин пур ирӗк чиркӗве кӗме,
Кашни хăй евӗр пурăнма пултарӗ.
23.07.2000

## КАЯ ЮЛСА ПУЛСАН ТА...

Хам куртăм эпĕ турăш йĕнине:
Ик куçĕнчен куççуль юхать, юхать.
Илмест-ши пирĕн çылăха
Вăл хăй çине?
Е вăл шеллет асаплă халăха?

«Пире çук Турă кирлĕ мар текех»
Тесе мĕн чул чиркӳ эпир аркатнă?
Чыса пĕлмесĕр, тискерсем пекех,
Кĕлтăвакан çынна вăрçса хăратнă.

Чиркӳсенче тырпул упранине
Пĕлетĕп эп. Тырпул – вăл хамăр çăкăр.
Чиркӳсенче лаша усранине
Курсассăн, - хытă ырататчĕ кăкăр.

Çавах та халăх вăрттăн пурпĕрех
Пăшăлтататчĕ кĕлĕ, сăхсăхатчĕ.
Пĕр-пĕр чиркӳ, пулсан ат инçетре,
Ача шыва кĕртетчĕ, ят хуратчĕ.

Çĕршер çулсем хушши ĕненĕве
Эпир упранă хамăр чунсенче.
Чĕресене вăл çыхнă пĕр тĕвве:
Тĕк тăтăр тенĕ яланах тĕнче.

Аркатнă чиркӳсем ӳпкелесе
Сăмахсăррăн пăхатчĕç тек пире.
Чăн Ĕненӳ çĕре пиелессе
Шанатчĕç таса Турă ачисем, -
Паян тăратăп эп çĕн чиркӳре.

Çавах та турӑш куççульпех йӗрет.
Апла тасалмалла çылӑхсенчен.
Чӑн Ӗненӯ вӑрантӑр чӗрере,
Чан сассипе илемленен тӗнче
Тасан ал патӑр çӗнӗ ӗмӗре.

Кая юлса пулсан та, каçару
Ыйтатӑп ӑссӑр пулнӑшӑн çынсем.
Пӗлетӗп: çӗнӗ ӗмӗрти ӑру
Килет пуль пысӑк Ӗненӯ илсе...
22.07.2000

* * *

Иртни иртнех.
Ăна калла çавраймăн.
Апла пĕрлех пăхар-ха малалла.
Чупсан та – хăвăнтан иртсе каяймăн,
Тĕрек тени çумра вăл пулмалла.

Çакна пĕлетпĕр:
Юнашар тăратпăр,
Пĕр кĕвĕллĕн пусатпăр урана.
Йывăрлăхпала хĕн килтĕр, -
Ал паратпăр.
Хăш чух, ав, шĕшкĕсем те юмана
Хӳтĕлесе тăраççĕ яланах.
9.09.2000

* * *

Пĕлетĕп эп мĕскер вăл тунсăх,
Пĕлеп пĕчченлĕх нушине.
Мĕнле-ха пурăннă эп унсăр,
Мĕнле кĕскетнĕ кунсене?

Шăпа...Пĕлтерĕшĕ ун анлă:
Вăл пурнăçпа çумра пырать,
Юратупа утса тăванлăн
Килес кун алăкне уçать.
9.09.2000

* * *

Чăваш çĕр-шывĕ вăл пуян:
Мĕн чул чечек, мĕн чул вăрман!
Тухаççĕ лĕпĕшсем вăййа
Хĕвеллĕ кун чухне ялан.

Чăваш çĕр-шывĕ вăл пуян:
Çук пултăр ылттăн-кĕмĕлсем.
Ку таранччен нефть кăларман,
Анчах – маттур ĕçченĕсем!

Шăпчăкĕсем çĕмĕртлĕхре
Пырне усаççĕ сывлăмпа.
Тухатăп та тăван хире –
Вылять çеç çил тырпулăпа.

Сар хĕрĕсем ял урамне
Тухсан тĕрленĕ кĕпепе
Кўрсе тавралăх илемне
Пыраççĕ шурă акăш пек.

Каччийĕсем кашни маттур,
Ĕç вĕресе тăрать алра.
Вĕсен чăн улăпла вăй пур,
Ыр ячĕ те пур халăхра.

Йăх пуçĕсем – шур ватăсем –
Пире параççĕ ăс-халне.
Пуласлăха кĕртме илем
Сĕнеççĕ ыр йăлисене.

Чухăнлăха курайманран
Калатăп эп: чăваш пуян.
Мĕнле пулсан та – нишлĕхе
Манас килет ĕмĕрлĕхе.

Чăваш çĕр-шывĕ чунăма
Парать тĕрек яланлăха.
Таятăп эпĕ пуçăма
Мана çул уçнă халăха.

13.XII. 2002

* * *

«Халь мĕнле-ха ĕнтĕ?» – ыйтрăн эсĕ,
Эп каларăм: - «Пурăнас пулать...»
...Масарта ун юлчĕ çĕн хĕресĕ.
Чĕррисен çĕр тăрăх утмалла.

Пурăнма пулать. Куна пĕлетпĕр.
Ĕç те тытмалла алла куллен.
Ырă курасса ĕмĕтленетпĕр, -
Телейне те курĕ кĕтекен.

Пĕччене пусса илет те тунсăх,
Тĕлсĕррĕн тухса унтан килтен.
Санăн патналла утатăп...Чунсăр
Пурăнмашкăн питĕ хĕн иккен.

Алăкна уçса мана кĕртетĕн,
Сирĕлет пĕччченлĕх умăмран.
Чейпе ăшă кукăль çитеретĕн,
Кăмăла йăлтах уçса яран.

Акă çуралать ĕмĕрхи туслăх,
Туслăх парнелет чăн юрату.
Чĕрене пусмасть тек йывăр пуслăх, -
Чунăмра янрать таса яту.

Çавă кунсене асран кăлармăп, -
Çĕнĕрен çуралнă кунсене.
Хам çумран сана ниçта та ямăп,
Эсĕ килнĕ маншăн çĕр çине.

«Халь мĕнле-ха ĕнтĕ?» ыйтрăн эсĕ,
Эп каларăм: - Пурăнас пулать...
...Çавăнпа хулан кашни кĕтесĕ
Паян маншăн тус пек туйăнать.

1.XII.2002

* * *

Ырӑ сӑмах ҫӳпҫи ӑҫта-ши?
Сана
Парнелӗттӗм ӑна.
Ҫаптарӑттӑм саккӑрла ташӑ
Санпа кӑна, санпа кӑна.

Эх, ӗмӗтӗм, ӑҫта ҫӳретӗн? -
Ҫӑварлӑх парӑттӑм пӗрре.
Калаҫнӑ хыҫҫӑн куҫкӗретӗн
Лӑпланнӑ пулӗччӗ чӗре.

Ҫунат та тупӑп ярӑнмашкӑн
Таса та уҫӑ тӳпере.
Вӑй-хал та тупӑп таврӑнмашкӑн
Анне пек юратан ҫӗре.

Ҫавӑнпала чӑн ыр сӑмахӑн
Ҫӳпҫи кирлех иксӗмӗре.
Сӑмах ялтравӗ ҫут ахахӑн
Выляса тӑтӑр ӗмӗрех.
1.XII.2002

* * *

Хӗвел-хӗвелӗм – тӗнче тытӑмӗ,
Сан тавралла ҫӗр ҫаврӑнать.
Эс чунӑн кӑмӑлӗ те ылттӑнӗ,
Кун-ҫул кӳрен кашни ҫынна.

Сан патналла чечек те курӑк
Тухать шӑтса,
Куҫне уҫса.
Кун кунласан, каҫне те курӑп, -
Йӑлтах эп курӑп эс пулсан.

Ҫӳрекенни, шӑваканни те
Сан пайӑркун вӑйне туйса
Пуҫланӗ, ӗмӗр вӗҫне ҫитӗ, -
Хӑварӗ йӑх-тӗпне савса.

Хӑшӗ-пӗри ҫухалӗ ӗмӗрлӗх,
Апла ӑна эс кун сунман.
Шыв типӗ, ҫӳлӗ ту та ҫӗмрӗлӗ, -
Ҫапла хӑватлӑн хал пур сан.

Хӗвел-хӗвелӗм!
Ҫавах эсӗ
Этемлӗхе ҫул-йӗр паран.
Ҫын юлмӗ санпала хевтесӗр,
Мӗнпур аталану – санра!
11.XII.2002

## АН ПĂШĂРХАН, ТĂВАН...

Ан пăшăрхан, тăван, ан пăшăрхан,
Пĕлĕтлĕ кун тăрать пулсан ыран,
Хĕвелĕ тухатех пуль виçмине.
Ан кулянсам, чĕре, ан кулянсам,
Паянхи кун телейлĕ пулмасан,
Пĕрле шанса пурнар килессине.

Ан пăшăрхан, тăван, ан пăшăрхан,
Яш ĕмĕрĕм иртсе каять тесе.
Яш ĕмĕрĕ пĕрре килет пулсан,
Вăхăтĕнче юлсам хĕпĕртесе.
Çамрăклăхпа ыталанса, кулса
Чунри йывăрлăха эс ирттерсем.

Ан пăшăрхан, тăван, ан пăшăрхан,
Хăвна валли ачаш мăшăр тупсан,
«Эх, пĕтрĕ манăн ирĕклĕх...» тесе.
Килте ача-пăча сасси тухсан,
Малашлăха çутă куçпа пăхан,
Шанатăн ырă пурнăç килессе.

Ан пăшăрхан, тăван, ан пăшăрхан,
Пуçу шуратнă пир пек шуралсан, -
Пирĕн çеç мар пуç шуралать юрпа.
Эпир çынсем, - мĕн курмалла, - курар,
Халăхпала пĕрле йăлтах курар,
Анчах кашнин хăй евĕрлĕ шăпа.
11.XII.2002

## ВЕНЧЕТ ÇĔРРИ

Венчет çĕрри –
Кун-çул Турри,
Юратăвăн иксĕлми хĕмĕ.
Çав çĕрĕре – ыр хĕр йĕрри,
Йăх тăсăмĕ, вăл – пирĕн ĕмĕр.

Унпа эпир тупа туса,
Çаплах çунать алри çурта.
Пуласлăха тасан курса
Ĕмĕтĕмĕр мала туртать.

Урамăр айĕнчи шур пир
Çутăлăха кăна чĕнет.
Вăрманĕ, улăхĕ, уй-хир
Пире ĕçлĕ кунсем сĕнет.

Венчет çĕррин –
Çук вĕç-хĕрри,
Тытса тăрать çĕр тĕнĕлне.
Çавăнпала ик çын чĕри
Тăрать хĕрӳ хĕвел айне.

Хĕвел те çĕр пирĕн йăха
Аталану сунса тăрать.
Несĕлĕмри тасалăха
Хастар тытса пыма калать.
Венчет çĕрри юратăва
Упратăр ĕмĕр-ĕмĕрех.
Вăл пирĕн чунсенчи хăват,
Унпа çирĕпленет чĕре.

11.XII.2002

* * *

Хулпа хул перĕнни,
Питпе пит сĕртĕнни
Пит аван.
Эп çавна халиччен,
Паянхи кунччен,
Ăнланман.

Çамрăк çыннăн чĕри
Калама çук вĕри, -
Пит аван.
Йăппăн çеç ыталан,
Вĕçен уйăх таран, -
Чуп тăван.

Эй, тĕнче!.. Çĕкленсе
Эс каятăн хĕрсе, -
Пит аван.
Кун пекки тĕнчере
Пулать теççĕ пĕрре, -
Чун, ан ман!..

Эй, яш ĕмĕр! Çакна
Упрасам ялана
Чысласа.
Юрату хăватне,
Ун хĕрӳ туйăмне,
Тыт таса.

10.XII.2002

* * *

Пур лайăх çын,
Пур аван çын,
Пур маттур çын,
Пур лăпкă çын,
Пур кăмăллă çын, -
Каласа та пĕтереймĕн
Ыттисем çинчен.
Мĕнех...
Пур юлхав çын,
Пур урмăш çын,
Пур хаяр çын,
Пур куштан çын,
Пур вĕçкĕн çын,
Пур усал çын, -
Вĕçне-хĕрне тухаймăн.
Мĕнех...
Çавах та пĕрине мухтаса,
Теприне хурлаймăн.
Çавах та пулмалла
Чăн-чăн Çын!
Этемле пурăнмалла.

10.XII.2002

* * *

Кам пĕлет пурăнма,
Пултарать юратма:
Савăнма, юрлама,
Хĕм сапса ташлама.

Тарăхни те пулать,
Макăрни те пулать,
Çав-çавах асăма
Ырă кун çеç юлать.

Усала чĕрере
Юрамасть усрама,
Ун чухне тĕнчере
Пăрахать сан ăнма.

Ăнăçу – вăл телей,
Унпа ырлăх килет,
Тĕллев тытнă тĕле
Тăрăшсан çитерет.

Пурнăçра кукăр-макăр
Пулатех, пулатех.
Çавăнпа çулна такăр
Тăваканĕ хăв çех.

Кам пĕлет юратма,
Пултарать пурăнма.
Çавăнпа суйлама
Пĕлмелле арăма.

9.XII.2002

* * *

Вăхăт, вăхăт! Мĕнле ĕнентерĕп
Эпĕ сан хуралçу пулнине?..
Хулара тротил шавĕ кĕрлерĕ, -
Сирпĕтеççĕ иккен çуртсене.

Кантăрпа хитре мăкăнь уй-хирĕ
Аркатать çамрăксен ӯт-пĕвне.
Гашишпа героин хăруш чирĕ
Çул тытать ял-хула урамне.

Вăхăт, вăхăт...Капла пурăнмашкăн
Мĕнле пăрахар? Пĕлтерсем.
Çирĕп, йăрăс, вăй-халлă пулмашкăн
Пирĕнтен кашнине вĕрентсем.

Паттăр йыш пулнине халь манар-и?
Уçлăхра,
Çерем уçнă çĕрте
Малта пулнă çынсем эпир мар-и?
Кам пире усала вĕрентет?

Пуç усса, хурланса лармалла-и?
Эп пĕлеп: ĕçлемешкĕн манман.
Умăмра вĕçекен ăмăрт кайăк
Чĕререх, - вăл çынна пăрахман.

Вăхăт, вăхăт!.. Сана йыхравлатăп
Хастарпа алран-ал пурăнма.
Малалла таса куçлăн пăхатăп,
Юрамасть каялла çаврăнма...
9.XII.2002

* * *

Шур юр пӗрчи хӗвел шевлипеле
Ялтра-ялтра, выля-выля ташлать.
Таса тӳпен хитре кӗввипеле
Тавралӑх ӑрӑм такмакне калать.

Кун пек илемлӗх тӑрӑх эп курман:
Талккишӗпех шап-шурӑ та таса.
Ман пӑшал ҫук та – шикленмест куян,
Каять утӑ капанӗ патнелле чупса.

Мӗнле паха хир варринче тӑма:
Туян ҫӗрпе хӗвелӗн туслӑхне.
Тасалӑхра пуҫлатӑн ӑнланма
Тӗнче малашӗпе ун ырлӑхне.
6.XII.2002

* * *

Ҫуралса ӳснишӗн хурланас-и?
Пурӑнатӑп хӗвеле курса.
Уй-хирте выртать ман чылай касӑ,
Тырӑ та ӳстернӗ эп акса.

Пӳлмере те пур ман кирлӗ чухлӗ,
Нумай панӑ эп патшалӑха.
Маччаран ман шыв тумламӗ, юхмӗ,
Ӳстерсех пыратӑп эп йӑха.

Ҫавӑнпа кун-ҫулшӑн хурланас-и?
Вӑхӑта ахаллӗн ирттермен.
Халӗ те, паян та ӑшри сасӑ
Хистесех тӑрать шав ӗҫлеме.
8.XII.2002

* * *

Тĕрĕленĕ шурă кĕпепе
Вăл пырать хула урамĕпе
Уйăх витĕр курнакан хĕр пек.
Вăл пăлан пăрушĕ евĕр стайлă,
Атăлти шур акăш евĕр, майлă, -
Пăхса пынă майăн
Ăсран кайăн.

Чăваш хĕрĕ, чăн та, пит хитре,
Çутă хĕвел сăнĕ пур питре,
Пурăнать ялан вăл ĕмĕтре.

Уттинче – тĕлĕнмелле сăпайлăх,
Хĕр çине пăхакансем нумайййăн, -
Унпала тĕнче хĕрне те кайăп.

Çук, Шупашкартах пурăнмалла! –
Пике килĕшсен...ăнтармалла, -
Чăваш çĕрĕнчен ма каймалла?

Хĕр утать...Вăл нимĕн те сисмест,
Ман чĕре çунни çинчен пĕлмест...
5.XII.2002

* * *

Малти Ăнтавăшăн çăлкуçĕ
Çаплах юхать-ха валакран.
Тăп-тăрă вăл, сипетлĕ, усă
Манпа вăл туслă ачаран.

Çăл куç – çуралнă çĕр сĕткенĕ,
Вылять вăл юнăмра куллен.
Ун шывĕпе яшка пĕçернĕ,
Сăра туса уяв çитсен.

Ак эпĕ мĕншĕн вăйлă-халлă,
Çĕрпе тăратăп çыхăнса.
Кун-çулăм та пырать кал-каллăн,
Ĕç-пуçăм та пырать ăнса.

Антив, хăш чух пулать пит йывăр,
Чун макăрать, чĕре сурать.
Çавах та эпĕ чĕрĕ, сывă,
Ура утать-ха, куç курать.

Хĕвел те тӳпере ялтрать,
Килсессĕн каç – тухать çут уйăх.
Ӳсет яш-кĕрĕм ялăмра, -
Кĕр еннелле кĕрлет туй-çуйĕ.

Шăнкăртататать ман ял çăл кусĕ
Вăй-хал парса ман чĕрене.
Кун-çулăма куратăп уççăн,
Сиретĕп хам нушасене.
5.XII.2002

**ТУПА**

Хура çăкăр тытса,
Тăвар сапса
Алла тытатăп.
Турăш тытса,
Чунтан сăхсăхса
Тупа тăватăп.

Хура çĕр çыртса,
Тухăçа пăхса,
Тӳпене алла çĕклетĕп.
Уй-хире савса,
Тыр пула курса
Чунтан яланах киленетĕп, -
Çĕрĕме саватăп,
Тупа тăватăп.

Хĕвеле уççăн куратăп,
Ун çутипе,
Ун ăшшипе
Ăшăнатăп,
Пĕтĕм ӳсен-тăран
Ун патнелле туртăнать ялан,
Эп те туртăнатăп, -
Тупа тăватăп.

Йăха-тĕпе,
Ун ачи пек,
Тупа тăватăп.
Хамăн ăрăва
Кĕртсе хăват
Малаша куратăп, -
Йăх-тĕп ячĕпе,
Чĕрем таппипе
Тупа тăватăп.
14.XI.2002

# АСА ИЛӲСЕМ

## «ТУССЕМ ПУР ПИРЁН, ЛЕОНИД...»

Леонид Агаков пӗр хушӑ Ярославски урамӗнчиултӑ пӗçмехлӗ йывӑç çуртра пурӑнатчӗ. /Л. Агаков хыççӑн ку çуртра И. Д. Кузнецов историк, критик, каярахпа Василий Алендей писатель пурӑнатчӗç./ Халӗ ку çуртӑн йӗрӗ те тӑрса юлман. Шел. Çуртӑн картишӗ аслӑччӗ. В. Алендей кунта чӑх-чӗп те усратчӗ, - ачисем йышлӑччӗ çав унӑн.

Çу /май/ уйӑхӗн пуçламӑшӗнчи уявсем иртсе пӗтсессӗн, писатель мӑшӑрӗ Александра Лазарева икӗ ачипе тӑван ялне, Муркаш районне, тухса каять. Çакна Илле Тукташ пӗлет. Вӑл яланах шӳтлеме юрататчӗ. Хӑш-пӗр чухне Илья Семеновичӑн шӳчӗсем кӑнттамрах та пулнӑ пулӗ, çавах та ӑна пирӗнтен пӗри те кӳренместчӗ.

Акӑ, хайхи ултӑ пӗçмехлӗ йывӑç çурта Нестор Виноградов артист пырса кӗрет те сӗтел çине çур литр кӗленчине лартать тата пӗр-икӗ пулӑ консервисен банкине кӗсйинчен кӑларса хурать. Унтан Леонид Агакова ыталаса илет те чуп тӑвать. Çуралнӑ кун ячӗпе хӗрӳллӗн саламлать. Унтан Нестор Виноградовла пӳрте янраттарса кулса ярать.

-Çуралнӑ куна туссенчен пытарма юрамасть! — тесе çурӑмран çапса илет.

- О,Нестор! — аллисене сарать Леонид Агаков. —Манӑн çуралнӑ кун иртсе кайнӑ ӗнтӗ. Пишпулекре санпа пӗрле эпир пӗрре çеç уявламан çав куна. Эсӗ ас тума тивӗçлӗ ӗнтӗ! Тӗлӗнтеретӗн эсӗ, Нестор! — аптӑраса ӳкет Л.

Агаков. –Эпӗ апрелӗн вуннӑмӗш кунӗнче ҫуралнӑ, каттӑршнӑй ачи!..

-Ҫапла, ҫапла...Пушкӑрт ҫӗрӗнче сан ҫуралнӑ кун тӗлӗнче юр выртнине ас тӑватӑп...- ҫамкине ҫапса илет Нестор Виноградов.

Агаковпа Виноградов Пушкӑрт республикинчи Пишпулекри колхоз театрӗнче вӑрҫӑ умӗн пӗрле ӗҫленӗ. Ун чухне чӑваш театрӗсем йышлӑччӗ: Пушкӑртра, Тутарта, Сӗнтӗрвӑрринче, Патӑрьелӗнче, Йӗпреҫре, Калининора...

-Нестор юлташӑм, кала-ха, манӑн ҫуралнӑ кун пирки кам пӗлтерчӗ сана? - тем сиссе ыйтать Леонид Яковлевич Виноградовран.

-Хӗрлӗ площадьре Илья Семенович Тукташа тӗл пултӑм. «Эсӗ мӗн туса ҫӳретӗн? тет мана. Агаковӑн паян ҫуралнӑ кунӗ. Пӗчченех. Арӑмӗ ачисемпе яла кайнӑ. Мана хӑй юлташӗсене пӗлтерме хушрӗ, хам кӑштах ҫимелли хатӗрлетӗп», терӗ. Эсӗ пулӑштух туян та вӗҫтер... Эпӗ сан хыҫҫӑнах персе ҫитетӗп», тесе хушрӗ. Акӑ, эпӗ ҫитрӗм.

-Ай, Тукташ!.. Пултарать Тукташ! – савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ярать Леонид Агаков. – Эпӗ ӗнер кӗнеке издательствинче унпа пӗрле гонорар илнӗччӗ...Ай, Тукташ! – кулса ярать Агаков хыттӑнах.

Каласа хӑварам: Нестор Виноградов чӑваш академи театрӗнче Айдар рольне питӗ ӑста вылянӑ теҫҫӗ. Куракансем, артист вылянине курнисем: «Айдара Виноградов пек лайӑх вылякан пулман-ха», тетчӗҫ. Л. Агаков театрпа яланах кӑсӑкланнӑ. Нестор Виноградова ҫавӑнпа юратнӑ ӗнтӗ писатель. Кун пирки И. Тукташ аван пӗлнӗ.

Вӑхӑт нумаях та иртмест, - пӳлӗме Георгий

Фадеев артист, Михетер рольне ăста вылякан-скер, кĕрсе тăрать. Сĕтел ҫине чĕрĕк кĕленчине кăларса лартать:

-Каҫар, Леонид Яковлевич, Тукташ питĕ васкатрĕ. Ну, театровед юлташ, ҫуралнă кун ячĕпе, кил, ыталам! – ҫупăрлать писателе паллă артист.

-Тавтапуҫ, Георгий! Туссем мана ҫапла хисеплени питĕ хавхалантарать, - ытарлăн выляма тытăнать писатель.

Пуҫлаҫҫĕ пуҫтарăнма ҫынсем. Акă, Михаил Кондратьевич Костин, Валентин Урташ, Михаил Нямань журналист-сăвăҫ, Николай Евстафьев, Иван Пиняев – вунă ҫынран та ытла иртсе каяҫҫĕ Леонид Яковлевич хăнисем. Пурте кучченеҫсемпе, пурте тенĕ пекех: «Тукташ ытлашшиех ан тăккалантăр: ҫуттипе ҫыртмаллисем илнипех ҫырлахать вăл», терĕ теҫҫĕ.

Акă, Илья Семенович Тукташ та ҫитет.

-Эпĕ йыхăрнисем пурте ҫитнĕ, - тет те кĕсйинчен чекушкине кăларса сĕтел ҫине лартать.

-Ай, Тукташ!..Ну, Тукташ!.. – текелесе ҫеҫ тăрать Леонид Агаков. Сăмах тупаймасăр аптăрани те сисĕнет унăн.

-Леонид Яковлевич, ан кӳрен. Эпĕ пирĕн юлташсем пур-и, вĕсем пире епле хисеплени-не ҫеҫ тĕрĕслесшĕн пултăм. Туссем пире хисеплеҫҫĕ иккен, туссем пур пирĕн, Леонид! Апла, атьăр, чăн юлташсемшĕн курка ҫĕклер! – хаваслăн йăл кулать Илья Семенович Тукташ.

22.07.02

## ЯТНЕ МАННĂ...

Кашни çул тенĕ пекех, атте-анне пуранна чух, эпĕ яла каяттăм. Пирĕн урам çеремлĕччĕ. Çарран çӳреме те аванччĕ. Сывлăм тăрăх çарран утни сывлăхшăн питĕ усăллă иккен.

Яла таврăннă май мунча хутса кĕрес шут пырса кĕчĕ пуçа. Мунча хутса ятăм. Хура мунча тĕтĕмĕ алăкран çăран йăсăрланса тухать. Малтанлăха çапла çав. Кайран, кăмака хĕрӳллĕн çунма тытăнсан, тĕтĕмĕ пачах та çук тейĕн.

Акă эпĕ кĕвентепе шыв ăсма каяс тесе тăнăччĕ кăна, мунча патне кӳршĕри Иван çитсе тăчĕ. Хăйĕн пичĕ çу сĕрнĕ икерчĕ евĕр çуталса тăрать, тути хупăнма пĕлмест тейĕн, хы-ык! хы-хык! сасă çеç илтĕнсе тăрать.

-Сывлăх сунатăп, Георги, - терĕ Иван мана алă парса.

-Ырă кун пултăр, Иван, - алă патăм ăна. – Акă, мунча хутса ятăм-ха, пулса çитсен – кĕме кил, - тетĕп.

-Хы-хык! – терĕ каллех Иван. Унтан: - Сана савăнăçлă хыпар пĕлтерме килтĕм эпĕ, - терĕ мана.

-Кӳршĕсем вĕт, пĕлтер-ха...

-Эпĕ автантăм вĕт. Вăт...Мунча ĕнер маткапа кĕнĕччĕ-ха, - кăлтăртаттарса кулса ячĕ Иван.

-Арăму мĕн ятлă-ха, Иван, - ыйтатăп эпĕ.

Иван сăнĕ сасартăк тĕксĕмленчĕ. Çамкине ывăç тупанĕпе ярса илчĕ. Тарăн шухăшлăн тӳпенелле пăхма тытăнчĕ Иван. Унтан:

-Георги, ятне манса кайнă...Арăм манăн йывăр ятлă... – хурланчăклăн каларĕ Иван. – Эсĕ кĕт-ха...Эпĕ киле кайса ыйтса пĕлем ятне, вара пĕлтерĕп сана...- килĕ еннелле мĕскĕннĕн

уттарчĕ манăн кÿршĕ.

Мунча хутнă çĕрте мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ мар-ши тесе ман патăма анне пычĕ.

-Анне, Иван авлантăм тет, ав. Арăмĕн ячĕ йывăр тет. Виоленчелă ятлă мар пулĕ те? - Ыйтрăм эпĕ шÿтлесерех.

-Кай, кай, апла ят та пулать-и? - тĕлĕнчĕ анне. – Иван арăмне Мархва тесе çеç чĕнеççĕ.

Çаплаччĕ çав Иван.

## ПУРНЕ ТЕ ЧĔНМЕЛЛЕЧЧĔ...

Эпир – П. Хусанкай, В. Давыдов-Анатри, А. Лукин, Ю. Петров тата эпĕ - Елчĕк районне темиçе кунлăха литература каçĕсем ирттерме кайрăмăр. Ялти шкулсемпе клубсенче, библиотекăсенче пултăмăр, халăхпа уçăмлăн та кăмăллăн калаçрăмăр. Аван йышăнчĕç пире. Сăвăсем вуларăмăр, чăваш литературинчи çĕнĕ пулăм пирки калаçрăмăр, çĕнĕ кĕнекесем çинчен пуплерĕмĕр. Итлекенсем мĕнле ыйтусем параççĕ - йăлтах хуравларăмăр.

Акă, эпир пурсăмăр та – Елчĕкре. Кăнтăрла шкулта тĕл пулу ирттертĕмĕр, каçхине – клубра.

Клубран тухсан, каçхи апат турăмăр. Пĕрер çĕр грамм эрех те сыпнăччĕ. П. Хусанкай çеç чейпе çырлахрĕ. Пирĕн йыша Елчĕк райхаçатĕнче ĕçлекен З. Митрофанова сăвăç та хутшăнчĕ.

Каçхи апатран тухрăмăр та урамра тăратпăр, уçă сывлăшпа сывлатпăр. Çак самантра З. Митрофанова:

-Петр Петрович, атьăр ман патăма, килте

манӑн веҫех пур, - тесе йыхравларӗ.

-Ҫук, йӑмӑкӑм, эпӗ Атнер амӑшӗпех ӗмӗрлӗп ӗнтӗ, - хуравларӗ кӗскен.

Унтан Давыдов-Анатрие шак хучӗ З. Митрофанова.

Василий Иванович та Хусанкай евӗрлӗрех:

-Мария Максимовнана кӳрентерес килмест манӑн, - тесе хучӗ. Кӑштахран: -Ак, Аркадий Лукин пур, тен, вӑл пырӗ, - аллипе сӑвӑҫ еннелле сулса кӑтартрӗ вӑл.

-Эпӗ парторганизаци секретарӗ, манӑн унталла-кунталла пӑрӑнма юрамасть, - тесе кулса ячӗ те Юрий Петрова илсе кайма сӗнчӗ.

Юрий Петров айӑпа кӗнӗ ача пек:

-Хӑратӑп эп... – тесе персе ячӗ те П. Хусанкай хыҫне кайса тӑчӗ, сыхлӑх ыйтнӑн.

-Эх, пике, пике, - персе ятӑм эпӗ хам ҫине ан тӗллесе кӑтартчӑр тесе. –Санӑн пурне те чӗнмеллеччӗ...Кайран, тен, хӑшӗ те пулин юлма пултаратчӗ...-Ҫапла пулчӗ манӑн сӑмахӑм.

-Сирӗн сӗнӗве ӳлӗмрен шута илӗп, - тесе аллипе сулчӗ те З. Митрофанова пирӗнтен пӑрӑнса утрӗ малалла.

## «ҪИЕЛТЕН ПӐХАТӐП...»

Ҫемен Элкер «Шурӑмпуҫ килсен» повеҫне иккӗмӗш кӑларӑмпа кӑларсан, повеҫе вуласа пӑхма, рецензи ҫырма Аркадий Эсхеле панӑ.

Вӗсем иккӗшӗ ӗлӗкхи Пичет ҫуртӗнче тӗл пулаҫҫӗ.

С. Элкер А. Эсхелтен ыйтать:

-Повеҫе вуласа тухрӑр пулӗ, Аркадий Александрович? Мӗн калама пултаратӑр?

-Вуласа тухрăм, Семен Васильевич. Малтанхи кăларăмра сирĕн повеçре юрату та анлăрах вырăн йышăнатчĕ, халĕ, иккĕмĕш кăларăмра, юратуллă вырăнсене катертнĕ пек эсир, - хурав парать А. Эсхел аслă юолташне.

-Халĕ эпĕ, Аркадий Александрович, юрату çине çиелтен пăхатăп ĕнтĕ, - тесе хурать С. Элкер.

-Юрать, Семен Васильевич, эпĕ çаплах çырăп, - тет А. Эсхель йăл кулса.

## ĂСАТАÇÇĔ

Эпĕ пĕр çулталăк каялла тенĕ пек çеç Мускаври Максим Горький ячĕллĕ Литература институтĕнчен вĕренсе тухнăччĕ-ха. Мана Чăваш писателĕсен Канашне литература консультантĕнче ĕçлеме хушрĕç. Пуçларăм тăрăшма. Мана Степан Аслан хăйĕн «Алла-аллăн» романне килсе пачĕ.

-Перо вĕçĕнчи чернил та типсе пĕтмен пулĕха. Вуласа тух та хăвăн шухăшна пĕр пытармасăр кала. Эпĕ сана ĕненетĕп, - терĕ Степан Аслан уçăмлăн.

Кайран ку романа проза секцинче те сӳтсе яврăмăр писательсен Канашĕнче. «Алла-аллăн» романа пичете сĕнчĕç.

Степан Аслан Шупашкарта Николай Евстафьев сăвăç патĕнче çĕр каçрĕ. Сӳтсе яву ăнăçлă иртнĕ ятпа Евстафьев арăмĕ Лиза пельмен те пĕçернĕччĕ. Каçĕ питĕ лайăх иртсе кайрĕ. Степан Аслан пурне те тав турĕ.

Тепĕр кунне эпĕ ĕçрен иртерех тухнăччĕ. Карл Маркс урамĕпе анаталла анатăп. Мана

хирĕç Степан Абаш, Николай Евстафьев, Степан Аслан килеççĕ.

Пĕрне-пĕри сывлăх сунатпăр.

Виççĕшĕ те хаваслă. Çул курки сыпни паллă.

-Ăçталла çул тытать виçĕ пăхаттир? - ыйтатăп эпĕ шӳтлĕн.

-Аслана яла ăсататпăр-ха, - хурав парать Степан Аслан.

Пурте кулса яратпăр.

## ВАСИЛИЙ АЛАКĔР ХĂНАЛАТЬ

Ăçта тата хăçан шӳтлемеллине те пĕлес пулать иккен.

Акă, эпир виççĕн – Александр Алка, Василий Алакĕр, эпĕ - пасара çитрĕмĕр. Ун чухне вăл пасар Ленин урамĕнчеччĕ. Ăна шӳтлесе «Симĕс пасар» /»Зеленый базар»/ тетчĕç. Темĕн те сутатчĕç унта.

Çав пасарта сăра киоскĕсем нумайччĕ. Пĕр киоскĕнче Макар Хури сăвăçăн арăмĕ сăра сутатчĕ. Паллах, эрехĕ те пурччĕ. Эпир çак киоск умĕнче чарăнтăмăр.

Василий Алакĕр Алкана шӳтлесе:

-Паян эпĕ саперсене ĕçтерĕп, ĕнер артиллеристсене сыптарнăччĕ-ха, - терĕ, Алка вăрçăра сапер пулнине аса илсе.

Пирĕн çывăхра тăракан икĕ çын В. Алкĕр патне пырса тăчĕç:

-Эпир саперсем...

Тапранса кайрĕ хайхи. В. Алакĕр пире пĕрер çĕр граммпа пĕрер курка сăра туянса пачĕ, лешĕ икĕ çын та пайсăр юлмарĕ. Пирĕн йыш хушăннăçемĕн хушăнма тытăнчĕ. «Саперсен»

йышӗ ӳссех пырать...

Василий Алакӗр:

-Юлташсем! Манӑн укҫа пӗтрӗ, - тесе ячӗ.

-Эпир пайсӑр юлтӑмӑр-и? - хаяррӑн ыйтрӗ пӗри, хӗрлӗ сӑмсаллӑскер.

Хирӗҫӳ хӗрсех каятчӗ пулӗ. Макар хури арӑмӗ тавҫӑруллӑ пулчӗ. Вӑл киоск чӳречи умне «Тавар йышӑнатпӑр» текен хӑмана тӑратрӗ те чӳречене хупса хучӗ.

Ҫапла хӑтӑлтӑмӑр эпир «саперсенчен».

-Сӑра киоскӗ патӗнче ҫапла шӳтлеме юрать-и вара, Ваҫҫа! – терӗ Александр Алка йӑл кулса.

## «ХӖР ТУПӐНЧӖ!..»

Чӑваш халӑх писательне – Петр Николаевич Осипова – пӗлмен ҫын чӑваш тӑрӑхӗнче ҫук та пулӗ тетӗп эпӗ. Унӑн «Айдар», «Икӗ каччӑн пӗр шухӑш», «Кушар», «Кулленхи симфони», «Ылханлӑ йӑх» тата ытти нумай пьесине миҫе пин ҫын сцена ҫинче курнӑ-ши? Курман-пӗлмен ҫын сахал пулӗ. Пирӗн чӑваш гимнӗ те чи малтан Петр Осиповӑн «Тӑван ҫӗршывра» пьесинче пуҫламӑш хут чӑваш академи театрӗн сцени ҫинче янӑранӑ. Пьеса ҫав юрӑпа пӗтетчӗ. Халӑх ура ҫине тӑрса тӑвӑллӑн алӑ ҫупатчӗ.

Эпӗ те, театр студийӗн студенчӗ, сцена ҫине пуҫласа сӑмахлӑ рольпе – Петӗр ролӗнче – «Кушар» пьесӑра тухнӑ. «Кӗт-кӗт сире...» тесе лапӑстатса тухаттӑм. Мӗн калӑн, - тӑрӑшнӑ. Ҫамрӑк пулнӑ мар-и?..

Хула урамӗсемпе эпӗ ҫуран ҫӳреме юрататӑп. Иртнӗ ӗмӗрӗн сакӑрвуннӑмӗш ҫулӗ умӗн

Республика площадӗнче Петр Николаевичпа тӗл пулатӑп. Алӑ тытса сывлӑх сунатпӑр. Пирӗн тӗл пулусем яланах кӑмӑллӑ иртетчӗҫ. Калаҫса кайрӑмӑр. Унпа калаҫма ҫӑмӑлччӗ, тытӑнчӑклӑх ҫукчӗ, унпа чун уҫӑлса каятчӗ. Кӑштахран Петр Николаевич:

-Хык, Якур! – тесе кулса ячӗ.

«Мӗн мыскари сиксе тухрӗ-ши?» тесе шухӑшласа илтӗм.

-Хык! – терӗ драматург тепӗр хут. – Манӑн хӗр тупӑнчӗ вӗт, Якур!... – Петр Николаевичӑн куҫӗсем йӑлтӑраҫҫӗ. – Эпӗ кун пирки мансах кайнӑччӗ. Хӗр мана хӑй шыраса тупнӑ!

-Петр Николаевич, сирӗн хӗрӗ Мускавра пурӑнать вӗт. Нумаях пулмасть Америкӑна кайма шут тытнӑ терӗр мар-и? - тесе ыйту паратӑп.

-Вӑл тӑван хӗр!.. Ку турпӑнчӗ!..Пӗлетӗн-и, Якур?

Эпӗ нимӗн калама та пӗлместӗп. Тӗлӗннипе сӑмах чӗнейместӗп.

-Ҫапла, Якур, - мана хул пуҫҫирен ҫапрӗ паллӑ драматург, РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗ Петр Осипов. – Хӗр тупӑнчӗ! – тепӗр хут каларӗ, ҫирӗплетрӗ.

Иккен, вун ҫичӗ ҫул каялла Петр Николаевич больницӑра дежурствӑра тӑнӑ. Ҫавӑн чухне больница пусми-картлашки ҫинчен ҫыхӑ тупса кӗрет медицина сестри. Ҫыхха салтаҫҫӗ те... – чӗрӗ хӗр ача вырта парать. Хут тавраш ҫук, иҫмасса. Больницӑра ӗҫлекенсем тупсан, ача чӗрӗ юлӗ тенӗ пулӗ ӗнтӗ хӗр ача амӑшӗ.

Чӑнах ҫапла пулса тухнӑ. Петр Николаевич хӗр ачана ят парать, вӑл ҫеҫ те мар, ашшӗ те пулать, Осипов хушаматлӑ ҫыртарать.

-Килте инкек-синкек сиксе тухасран шикленмерĕр-и? - ыйтатăп эпĕ аслă юлташран.

-Ун чухне, вăл вăхăтра, апла-капла шухăшласа тăма вăхăт пулман, Якур...Чĕрĕ çын вĕт...Чĕрĕ чуна хĕллехи каç урама пăрахса хăварнă. Шухăшласан халĕ те çӳç вирелле тăрать.

-Хĕр ача амăшĕ тупăнмарĕ-и кайран?

-Тупăнмарĕ...Тупăнас-тăк...хык! пăрахса хăварман пулĕччĕ ачине, - аллипе сулчĕ тухтăр.

-Халĕ вара хĕр ачăр килех пычĕ-и?

-Çук, Якур...Больницăна мана шыраса килнĕ. Наталья Петровна Осипова...Паспорт илнĕ. Куртăн-и? Эпĕ - атте!.. Наташа качча кайсан, иккĕмĕш хут асатте пулатăп. Савăнатăп, Якур! Чăннипех савăнатăп...Хĕр ачи чиперскер. Киле те пырса çӳрекелеме тытăнчĕ. Арăмпа лараççĕ вара шăкăлтатса. – Сăмах чĕнмесĕр чылай утса пытăмăр. Унтан: - Аван вĕт хĕр ача тупăнни, Якур? - кăмăллăн ыйтрĕ Петр Николаевич.

Шупашкар урамĕ асамлă çутăпа çуталса кайнăн туйăнчĕ мана. Петр Осипов пек çынсем илем кӳреççĕ те пурнăçа...

## «П»ă, «Г»ă

Хушма хушамата çын хăйне валли хăй тупать. Е çав хушма хушамат йăх-тĕпренех тăсăлса пырать. Калăпăр: Куян Микки, Кашкăр Нямукĕ, Кăйкăр Ваççи...т. ыт. те. Кайран çав хушма ятсем ырăсла куçарăнаççĕ те – Зайцев, Волков, Соколов – чăн-чăн тĕп хушаматсем пулса тăраççĕ.

Шупашкар юханшывĕ /Чебоксарка/ хĕрринче ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ ларатчĕ.

Пĕр-пĕр купса çурчĕ пулнă ĕнтĕ вăл. Икĕ хутлăччĕ. Çав институтăн директорĕнче Петр Григорьевич истори ăслăлăхĕн кандидачĕ ĕçлетчĕ.

Чăваш академи драма театрĕнче парти конференцийĕ ирттереççĕ.

Писательсен Канашĕнчен Леонид Агаковпа мана делегата суйланăччĕ. Акă, регистраци сĕтелĕсем умне пыратпăр. Л. Агаков умĕнче П. Г. Григорьев историк тăрать. Историк хăй документне кăларнă та – хăй пурри, килни çинчен пĕлтерсе, регестрациленет.

Сĕтел хушшинче ларакан хĕр арăм ун хушаматне шыраса тупрĕ те: «Инициалы?» тесе ыйтрĕ вырăсла.

П. Г. Григорьев тӳрех:

-«П»ă, «Г»ă, - тесе хурав пачĕ.

Ун хыççăн тăракан Л. Агаков «хык» тесе кулса ячĕ. Мыскараллă япаласене тӳрех ярса илетчĕ писатель. Тата чăвашсем темшĕн «П»э «Г»э теме пултараймаççĕ. «А», «Б»э, «В»э, «Г»э тесе калас чух «ă» саспалли кĕртсе лартатпăр.

Сĕтел умĕнчен пăрăнтăмăр. Л. Агаков мана тӳрех:

-Ав, «Пăкă» пырать, - тесе хучĕ П. Г. Григорьев еннелле пусĕпе сĕлтсе йĕкĕлтевлĕн.

Çак кунран Ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн директорĕ «Пăкă» пулса тăчĕ, - паллах, писатель тăрăшнипе. Институтра ĕçлекенсем те, куç хыçĕнче ĕнтĕ, çапла чĕнетчĕç.

П. Г. Григорьев хăлхине те кĕнĕччĕ ку хушма ят. Вăл вара:

-Мĕн тăвăн, Агаков юморист çав вăл, - тенĕ пулать.

## ЗОЯ СЕЛИВАНОВА ЮРĂÇĂ ÇИНЧЕН ПĔР—ИК СĂМАХ

Зоя Павловна Селиванова юрăçпа эпĕ 1946 çулта паллашнă, унпа куçа-куçăн калаçнă. Сăнĕ-пуçĕ чиперччĕ унăн, куçĕсем асамлăн йăлтăртататчĕç. Калаçнă чухне çеç вăл Куславкка енче çуралнине пĕлме пулатчĕ - чăвашла пупленĕ чухне ĕнтĕ / «кмокă» т. ыт. те./. Вырăсла тасаччĕ унăн сăмахĕсем, чăваш хĕрĕ теейменĕн çав.

Юрланă чух унăн сассине ыттисенчен тӳрех уйăрса илеттĕн. Ирĕклĕн те сарлакан шăрантаратчĕ Зоя Павловна. Сасса ирĕк паратчĕ, хĕсместчĕ. Консерваторирен вĕренсе тухнă пĕрремĕш чăваш хĕр арăм-юрăçăччĕ. Свердловскри консерваторинчен лайăх дипломпа вĕренсе тухнă Зоя Селиванова. Ăна опера театрĕсене те йыхăрнă, чĕннĕ, çавах та вăл чăваша таврăннă.

Чи малтан Зоя Селиванова Хусанти радиора редакторта ĕçленĕ, чăвашла передачăсем йĕркеленĕ. Çав передачăсенче вăл чăваш юррисене юрланă, халăх хушшинче ырă ят илнĕ. Ун пирки Александр Кăлкан драматург, ЧАССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, яланах кăмăллăн пуплетчĕ. Драматургăн куçĕсем йăлтăратчĕç, тути йăл-йăл кулатчĕ. Иккĕшĕ тĕл пулсан:

-Питĕ юратнă вĕт эп сана, Зоечка, - тетчĕ вара Александр Кăлкан. –Темшĕн мана тиркерĕн? Каччи эп начарах марччĕ те...

-Ытла чиперччĕ çав эсĕ, Саша. Сан тавралла хĕрсем явăнсах çӳретчĕç те...Иккĕленнĕ пулĕ ĕнтĕ, - кулса яратчĕ Зоя Павловна.

-Эпĕ халĕ те сивĕнмен, çаплах хытă юрататăп. Пĕлнĕ пул! - ĕнентерме пăхатчĕ Александр Дмитриевич.

-Халĕ ĕнтĕ пурте ĕнере юлнă... Эсĕ мăшăрланнă, эпĕ - ватăлнă, - сасăпах кулатчĕ юрăçă хĕр.

-Эсĕ вун саккăртисенчен те ирттеретĕн-ха. Пит çăмарти яп-яка, куç айĕнче те пĕркеленчĕксем палăрмаççĕ-ха, - куçлăх витĕр тимлесе пăхнă пек хăтланатчĕ драматург.

-Тавтапуçах ыр сăмахна! – Унтан сăмаха тепĕр еннелле пăрса ярать Зоя Павловна. – Паян радио итле. Концерт пулать. Геннадий Воробьев юррисене юрлатăп.

-Хаваспах...

Икĕ паллакан çын кăмăллăн уйрăлать.

Зоя Павловна Валентин Урташ сăввипе «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» юрра пуçламăш хут Чăвашрадиопа янраттарсан, В. Урташ тӳпере вĕçменни çеçчĕ. Унтан Аверий Токарев В. Урташ сăввипе «Ман бригада» юрă кĕвĕлерĕ, ăна та З. Селиванова радиора юрласа пачĕ.

-Сан патна шампанскипе пыратăпах! – хавхаланатчĕ Валентин Урташ. – Те пынă вара – пĕлместĕп.

Чăваш композиторĕсемпе туслă пурăнатчĕ юрăçă.

Зоя Павловна Селиванова Куславкка районĕнчи Чашлама ялĕнче çуралнă. Сас паллипе Чашламара паллашнă. Çĕнĕ самана – совет тапхăрĕ пуçлансан, Зоя ашшĕне килĕ-çуртĕнчен хăваланă, вĕсем Хусанта пурăнма тытăннă, çав хуларах малтанхи пĕлӳ илнĕ. З. П. Селиванова мĕншĕн Свердловскри консерваторире вĕреннĕ-ха теме пăхĕç. Ун чухне, вăл вăхăтра,

Хусанта консерватори пулман-ха.

Тăван ен тăванла туйăмсем вăратсах тăнă ĕнтĕ. Юрăçă Шупашкара çитнĕ. Чăвашрадио хорĕнче солистка пулса ĕçлетчĕ вăл, хорта вăй хуратчĕ. Чăвашрадио хорне Г. Я. Хирбю композитор ертсе пыратчĕ, хăй те тин çеç Ленинградри консерваторинчен вĕренсе килнĕччĕ. Хорĕ, чăнах та, питĕ лайăхскерччĕ. 1950 çулхи чӳк уйăхĕнче чăваш литературипе ӳнерсен эрнине Мускавра пĕрремĕш хут ирттернĕ чух çак хор Колоннăллă зал сцени çинче хăй пултарулăхне кăтартрĕ. Çаплаччĕ вăл вăхăтра.

Зоя Селиванова П. Чайковский, С. Рахманинов, А. Даргомыжский, А. Гречанинов романсĕсене киленсе те пысăк ăсталăхпа юрлатчĕ. М. Глинкăн «Иван Сусанин» оперинчи Антонида арине епле витĕмлĕ юрлатчĕ! Юрăçă сасси паян кун та хăлхара янăрать. /А. Гречаниновăн «Сирень» романсне юрăç валли чăвашла ятарласа куçарса панăччĕ./

Каярахпа, Чăвашрадио хорне салатса ярсан, Зоя Селиванова Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕнче вăй хучĕ. Унтан юрăçă Ф. П. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче педагог пулса чылайччен ĕçлерĕ. Унта чăваш каччисемпе хĕрĕсене юрăçă пулма вĕрентсе пурăнчĕ. Уйрăмах Зоя Павловна Екатерина Максимова вĕренекене мухтатчĕ. Е. Максимова ЧАССР тава тивĕçлĕ артисткин ятне илсен З. Селиванова чун-чĕререн савăннине те курнă эпĕ. Куçĕнче савăнăç куççулĕ те тумлатчĕ унăн.

Çапла Зоя Селиванова юрăçăн вĕренекенĕсем хисеплĕ ятсем, чăваш халăх артисчĕ ят илнисем таранах пур. Ку питĕ аван. Апла Зоя Павловна юрăçă ăста педагог та пулнă. Куншăн

савӑнмалла ҫеҫ пирӗн. Пирӗн юрӑҫсен культурине кирлӗ шая ҫӗклесшӗн хытӑ тӑрӑшнӑ вӑл. Ҫавах та Зоя Селиванован хӑйӗн хисеплӗ ят ҫук, тивӗҫеймен ӑна юрӑҫӑ. Мӗншӗн-ши?

Ара, вӑл сутуҫӑ хӗрӗ пулнӑ вӗт. Вӑл тапхӑрта сутуҫӑ-купсасене «халӑх юнне ӗмекенсем» тесе хӑртнӑ. Унӑн хӗрне хисеплӗ ят пама юрать-и вара?

Пӗррехинче кун пирки эпир Зоя Павловнапа хӑйӗнпе калаҫса кайрӑмӑр. Мана вӑл кӗскен ҫапла хуравларӗ:

-Анна Казакова юрӑҫа Филипп Лукин композитор ҫине тӑнипе Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артистки ятне аран-аран пачӗҫ. Ара, унӑн упӑшки «халӑх тӑшманӗ» пулнӑ вӗт. Юрать-ха Филипп Миронович авторитечӗ пысӑкчӗ. Ӑна никамах та хирӗҫ кайман. Каярахпа, Сталин вилсен, унӑн ывӑлӗ хула ӗҫтӑвкомӗнче пай пуҫлӑхӗнче те ӗҫлерӗ. Маншӑн хамсӑр пуҫне никам та сас паман. Хура вӑрӑм каҫсенче йӗнисем те пулнӑ. Ҫавах та пуян атте-аннене ятламан. Вӗсем мана ҫутӑ кун кӑтартнӑ. Зоя Селиванова ятне Тутар республикинче те, Чӑвашра та хисеплӗ ятсӑрах ырӑпа асӑнаҫҫӗ. Авӑ, пӗр солистӑн чыслӑ ячӗ те пур, эрех ӗҫсе, табак туртса сассине пӗтерчӗ те — кам пӗлет ӑна? - ыйту пачӗ мана юрӑҫӑ. Кам пирки каланине тавҫӑрса илтӗм. /эпӗ тавҫӑрнӑ тӑрӑх Симуллина хушаматне каларӗ пулӗ тетӗп./ Юрӗ, ку тарама-ха. Кирек мӗн каласан та чунӗ ырӑччӗ те тасаччӗ Зоя Селиванован.

Чӑвашрадио хумӗ ҫинче Зоя Павловна сассине час-часах илтетпӗр. Апла юрӑҫӑ - пирӗнпе пӗрле, пирӗн хушӑра. Унӑн ӑсталӑхне, унӑн уҫӑ сассине хисеплекенсем ӑна асрах тытаҫҫӗ.

Эпĕ те манăн сăвăпа Т. Фандеев композитор кĕвĕленĕ «И, улми, сад улми» юрра З. Селиванована О. Агакова пĕрле юрланине хаваспах итлетĕп. Тата çакна та каласа хăварам: мана юрăçă «Туй» калавăн йĕрĕ çине тухма пулăшнăччĕ. Çав калавра чылай пулăмсене вăл каланисемпе усă курнă. Ял ятне те Чашлама тенĕ.

Çак кĕске çеç аса илӳ Зоя Павловна Селиванова юрăçă тăпри çине хунă чечек кăшăлĕ выраннe пултăр

4.08.2002

## ПАЛЛĂ ПОЭТ ПАТĔНЧЕ

Мускаврa М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнче вĕреннĕ чухне манпа пĕрле, пĕр курсрах, Иван Ганабин вырăс сăвăçĕ вĕренетчĕ. Шел, сăвăç çамрăклах çĕре кĕчĕ. Кайран, унăн сăввисене пухса, пирĕн юлташăмăр Константин Ваншенкин поэт, паллă сăвăç, «Я люблю тебя, жизнь» тата ытти юрă сăввисен авторĕ «Советский писатель» издательствăра уйрăм кĕнекепе кăларчĕ.

Иван Ганабин та юрра хывма чылай вăй хуратчĕ, сăвăсем çыратчĕ. Гитарăпа каласа хăй те юрлатчĕ. Вăл çарта моряк пулнă, Иван Ганабина пирĕн чăваш писателĕ Валентин Бурнаевский те лайăх пĕлет, паллать.

Ку умĕн калани, кĕскен паллаштарни пултăр.

Эпир, Литература институчĕн студенчĕсем, ун чухне Переделкинори писательсен хулинче пурăнаттăмăр.

Студентсем мĕнле пурăннине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ: пур чухне – пылпа, çук чухне – шывпа.

Стипенди илесси тата виçĕ кун юлнăччĕ. Кĕсье тĕпĕ - яп-яка.

Эпĕ Иван Ганабин патне анатăп. Эпир икĕ хутлă дачăра пурăнаттăмăр. Вăл кравать çинче гитара каласа выртать.

-Юрлама вăй çук вĕт, - тет сăвăç-студент.

-Çапларах çав, - хуравлатăп эпĕ ăна кĕскен.

Темĕнле эпĕ пĕлмен кĕвĕ пăнтăртаттарать хăй çаплах гитарăпа. Унтан тăрса ларчĕ те:

-Пулчĕ, - тесе куçĕсене йăлкăштарса. – Манпа пыратăн-и? Иккĕн шанчăклăрах, пĕри ӳксен, тепри ура çине тăратĕ, - шӳтлеме пăхрĕ хăй тунсăхлăн. –Михаил Васильевич патне каятпăр...Хăй килте çук-тăк, Лида аппаран укçа кивçен илетĕп...- Çирĕппĕн каларĕ унтан.

Çапла, ун чухне Внуковăри дачăра М. Исаковский пурăнатчĕ. Унăн юррисене пĕтĕм çĕршыв пĕлет. И. Ганабин хул хушшине папка хĕстерчĕ. Апла вăл М. В. Исаковские юрра хывма çырнă хăйĕн сăввисемпе паллаштарасшăн.

Переделкинăран Внуково еннелле тухса утрăмăр.

Çитрĕмĕр. Пире дача хуралçи «ятне астумастăп» асăрхарĕ.

-Э-э, Ваня, здравствуй! – алă пачĕ вăл сăвăç-студента.

-Привет, привет! – ыталарĕ сухаллă хуралça. Унтан ман еннелле çаврăнчĕ те: -Ку манăн юлташ Гоша, чăваш сăвăçĕ, - терĕ.

Хуралçă алă пачĕ мана, вара И. Ганабина:

-Хуçи те, арăмĕ те килтех, - хуллен пĕлтерчĕ.

-Тавтапуç, - йăл кулчĕ Ганабин, дачи патнелле утнă май: - ĕç тухать апла, - тесе пăшăлтатрĕ.

М. Исаковский хăй кĕтсе илчĕ. Залалла кĕме йыхăрчĕ. Пушмаксене хывса кĕретпĕр.

-Ваня килнĕ!.. –Исаковский арăмĕ алă пачĕ студент-сăвăça.

Эпĕ те паллашрăм.

-Твардовский тусĕ Яша мĕнле пурăнать унта? - ыйтрĕ паллă сăвăç. «Яков Ухсай пирки ыйтнине тӳрех тавçăрса илтĕм.»

-Пурăнать... Аванах, - кĕскен хуравларăм ăна.

-Сыпакан çын пурăнать вăл, сыпаканăн вăй пур! – йăл кулчĕ Михаил Васильевич.

Эпир выçă пулнине Исаковскин мăшăрĕ асамçă евĕр сиснĕн туйăнчĕ:

-Мишенька, кухньăра ларатăр-и е чейне кунта илсе килмелле? - ыйтрĕ мăшăрĕнчен.

-Кухньăрах ларăпăр. Ваня турткалама юратать...

Кайрăмăр кухньăналла.

Сĕтелĕ тулăх пек курăнчĕ. Темиçе тĕрлĕ кăлпасси, сыр, помидор, хăяр, ăшаланă аш, котлет...

Михаил Васильевич буфетран графин илчĕ.

Арăмĕ тӳрех хыпăнса ӳкрĕ:

-Мишенька, мĕн хăтланатăн? Санăн диабет!..

-Лидушенька, ăнлан: сахăрпа холестерин тавраш спиртра нимĕн юлми ирĕлсе пĕтнине пĕлетĕн-ха вĕт эсĕ. Хăрама кирлĕ мар, кил, ху та пĕрле лар, - шӳтлĕн сĕнчĕ арăмне паллă сăвăç.

-Ах, сирĕнпе!.. – сасăпах кулса ячĕ арăмĕ.

Пуça кайрĕ çутă шĕвек. Ара, апат çименни хăйĕннех тăвать ĕнтĕ.

Иван Ганабина гитара пачĕç. Юрларăмăр вара тăваттăн. Мана чăвашла юрласа пама

ыйтрĕç. Виçĕ юрă юрларăм вара.

-Кĕввисем аван...Сăмахĕсем хитрен илтĕнсе янăраççĕ, -кăмăллăн каларĕ М. Исаковский.

## «САСПАЛЛИСЕНЕ ХИТРЕ ÇЫРАТĂН...»

Мускаври Литература институчĕн общежитийĕнче ларатпăр. Слава Костыря, Казахстанран килнĕскер, вырăсла сăвăсем çырать, кравать çинче вуласа выртать. Владимир Тендряков сĕтел хушшинче темĕн çырать. Ун чухне унăн ячĕ çĕршывĕпех сарăлса ĕлкĕрейменччĕха.

Тепĕр сĕтел хушшинче Александр Парфенов ларать. Вăл хăйĕн сăввисене тепĕр хут юсаса çырать. Çыра-çыра йăлăхрĕ-ши? - пуçне çĕклерĕ те:

-Володя, а, Володя! – терĕ темĕнле чаплă шухăш пĕлтернĕн.

-Мĕн сиксе тухрĕ, Саша? - ыйтрĕ унран Владимир Тендряков.

-Шухăшларăм-шухăшларăм та, сăвă çырма пăрахса, калавсем çырма тытăнас терĕм. Э? Кун пирки мĕн шухăшлатăн, тусăм? - Чăнах та, сăвăç пурнăçĕ тепĕр майлă çаврăнса ӳкет вĕт. Калавпа ăнăçтарсан унăн ячĕ-шывĕ тĕнчене саланать!

Владимир Тендряков чылайччен чĕнмерĕ. Пуçне вăрахран çĕклерĕ. Вара:

-Саша, эсĕ саспаллисене хитре çыратăн, пуплевсем «предложенисем ĕнтĕ» тикĕс пулĕç, - тесе хучĕ.

Слава Костыря ахăлтатса кулса ячĕ.

Александр Парфенов:

-Тупнă ахăрмалли, - терĕ те алăк патнелле утрĕ. Алăк хупăннă чух: -Тупнă кулăш, çын нушине ăнланасшăн мар...-тарăхуллăн калани çеç илтĕнсе юлчĕ.

## ИРХИНЕ

Çуллахи ăшă ир. Темĕншĕн ир вăраннă эпĕ, калама пултараймастăп.

Алăка шăнкăравлаççĕ. Уçатăп. Николай Евстафьев тăра парать.

-Якур, пулăш, - кĕске пулчĕ унăн сăмахĕ.

-Мĕнле пулăшу кирлĕччĕ? - ыйтатăп эпĕ тавçăраймасăр.

-Пар вун тенкĕ...

-Ирт тĕпелелле.

-Санăн юлман пулĕ? Магазин тата икĕ сехетрен тин уçăлать, - куçĕсем питĕ йăлăнăçлă хăйĕн.

Мĕн ыйтнине тавçăрса илетĕп.

-Пурччĕ манăн пĕр çĕр грамм пек, - тетĕп ăна.

-Пар, эппин, - чăтăмсăррăн персе ячĕ Евстафьев.

Кухньăналла каятпăр. Стакана тултаратăп. Николай ăна илчĕ. Алăри стакан хыттăн чĕтреме тытăнчĕ, унтан шăл çумне лексе шăкăр-шăкăр! шăкăртатма тытăнчĕ. Стаканри эрех хытă чӳхенет.

-Çак пĕтерет пулĕ те-ха, - пăшăрханчĕ Николай, куçĕ шывланчĕ.

Вара эпĕ стакан тытрăм та - ăна ĕçтертĕм.

-Халĕ çăкăр çырт ĕнтĕ, эрех тути пĕттĕр, - тетĕп ăна.

-Тути ан пĕттĕр-ха, юлтăр, - шăппăн каласа

хучĕ Евстафьев.

Кĕçех кулса яраттăмччĕ, - юрамасть.

Хăш чухне асапăн та хăйне евĕр ырлăхĕ пур иккен.

## ЗАЧЕТ ВĂХĂТĔНЧЕ

Литература институтĕнче авалхи грексемпе Рим тата Чĕрĕлӳ тапхăрĕпе анăçри искусствăсен историне вĕрентетчĕç пире. Вĕрентекенĕ - ӳнер ăслăлăхĕн докторĕ И. Тарабукин профессорччĕ.

Пире вăл Третьяков галерейине, А. С. Пушкин ячĕллĕ музее илсе каятчĕ.

Чи чаплă художниксен картинисемпе паллаштаратчĕ, вĕсене епле ӳкерни пирки, çав картинăсем мĕнле çурални çинчен тата вĕсен историне каласа паратчĕ. Итле, ăша ил ĕмĕрлĕхе.

И. Тарабукин, чăннипех те, тăрăшуллă, тарават профессорччĕ, хăй вĕрентнине тимлемен студент-литераторсене хисеплесех каймастчĕ. Ара, тăрăшни харама кайнăн туйăннă-тăр.

Çак предметпа зачет çеç памаллаччĕ. Çавăнпах-ши хăшĕ-пĕри питех тимлесе вĕренментĕр? Зачет вăхăтĕнче кăсăклă самантсем те сике-сике тухатчĕç.

Акă Нинель Громыко, унăн икĕ кĕнеке пичетленсе тухма ĕлкĕрнĕччĕ. Ĕнтĕ, хăйне танлăрах тыткалатчĕ. Ятлă-сумлă журналсемех ăна очерк çырма тесе командировкăсене кайма та сĕнетчĕç.

Профессор Н. Громыко умне пĕр портрет репродукцине хурать те, художник ятне аллипе хупласа:

-Кам ӳкернӗ? Картина ячӗ? - тесе ыйтать. Профессора Н. Громыко:

-Женская головка, - тесе хуравлать-хурать.

-Конечно, не кобылья, - персе ярать Н. Тарабукин.

Хӑйне шанӑҫлӑ тытакан, тимсӗр вӗреннӗ студентӑна зачет лартмасть.

Михаил Кильчичаков черечӗ ҫитет. Вӑл – хаккас писателӗ. Пьесӑсем ҫыратчӗ. Унӑн «Упа варӗ» («Медвежий лог») пьесипе чӑваш театрӗ гастрольте ҫӳренине те астӑватӑп. Каярахпа Мускавра сӑвӑсен кӗнекисем те кӑларчӗ. Унӑн сӑввисене Я. Козловский, А. Николаев паллӑ тӑлмачӑ-сӑвӑҫсем куҫаратчӗҫ. Шел, хаккас поэчӗ фронтри суранӗсем канӑҫ паманнипе вӑхӑтсӑр пирӗнтен уйрӑлса кайрӗ.

Поэт умне профессор каллех репродукци кӑларса хурать, художник ятне аллипе хуплать.

Михаил Кильчичаков ӑна:

-Фрукты, - тесе хуравлать кӗскен.

-Какие гастрономические вкусы! – тесе хурать профессор кӑмӑлсӑррӑн.

Студентӑн, хӑй темле ятлӑ-сумлӑ пулсассӑн та, вӗренме тытӑннӑ-тӑк, тӑрӑшмаллах, вӑй хумаллах-тӑр.

## ХИРПӲ КАЛАҪАТЬ

Хӑшпӗр чухне эпир хамӑр калаҫу ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмастпӑр. Ку вара пире сӑтӑрлать, тепӗр чухне хамӑртан хамӑр култаратпӑр, тӑрӑхлаттаратпӑр. Ҫыннӑн тӑван чӗлхепе калаҫма вӗренмеллех ӗнтӗ. Эпир пур, тӑрӑшсах

вырăсла калаçма вăй хуратпăр, анчах кăлăхах: калаçаймастпăр, перкелешетпĕр.

Григорий Хирпӳ композитора пĕлмен чăваш çук та пулĕ? Унăн юррисене кашни-пĕри хапăлласа йышăнать, юратса юрлать. Юррисем - ĕмĕрлĕх. «Нарспи» оперăна сцена çинче куратпăр-итлетпĕр.

Кĕнекесен шкафĕнче унăн «Русско-английский», «Русско-французский», «Русско-итальянский», «Русско-немецкий» тата ытти словарьсем чаплă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Пĕр хушă Григорий Яковлевич Чăвашрадио хорĕнче дирижерта ĕçлерĕ. Питĕ хастаррăн ĕçлетчĕ. Радио хорне Шупашкарта çеç мар, Мускавра та хисеплетчĕç.

Çав хорпа ĕçленĕ чухне, хористсене ăс е сĕнӳ панă чух, вăл çапларах калатчĕ; акă, хорта ĕçлекенсен шăппăн та тикĕссĕн юрламалла. Вăл вара вĕсене:

-Бойте, бойте ка тоштик сикает, - тетчĕ. Чăвашла «çумăр лăпăс-лăпăс çунă евĕр юрлăр», тесе сăнарлă калама тăрăшнă-тăр.

Тепрехинче:

-Бойте так, как украинки сметану едят, - тесе персе ярать композитор.

Çапла каланине те илтнĕ:

-Что хохочете, что в заду куляете?

Хористсем кулатчĕç вара вăрттăн.

1950 çулта Мускава чăваш культурин эрнелĕхне irттерме каятпăр.

Купере тăваттăн, вăхăт ирттермелле, картла вылятпăр. Хирпӳ купене кĕрет те:

-Айтăр, шестăн-шестăн выляр, - тесе хурать.

Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай ахальтен мар-тăр:

-Хирпӳ музыка чӗлхине ҫеҫ аван пӗлет, - тетчӗ йӑл кулса.

Ҫапла пулнӑ ҫав.

## «ТАК...»

Малтан ҫакна каласа хӑварас пулать. Яков Ухсайӑн ҫапла йӑла пурччӗ. Калаҫура-мӗнре: «Ху пӗлен, так-ну», «Так, ну»...текелесе хуратчӗ. Те каламалли ҫукчӗ унӑн, те, ҫапла каласа, пӗлтерес шухӑшне хӑй ӑшӗнче хӑваратчӗ сӑвӑҫ.

1950 ҫул. Чӑваш культура эрни – Мускавра. Писательсем Пӗтӗм Союзри писательсен ҫуртне пуҫтарӑннӑ.

Акӑ, А. А. Фадеев хӑйӗн ӗҫ пӳлӗмнелле утать. Яков Ухсайпа Александр Александрович хирӗҫ пулаҫҫӗ. Я. Ухсай сывлӑх сунас вырӑнне:

-Ну, Саша, так... – тесе калать-хурать.

А. Фадеев чарӑнать те:

-Что, Яша, так?.. – тесе ыйтать.

Я. Ухсай нимӗн те калаймасть. Вара Александр Александрович:

-Ну, что ж, так-так, так...-тет те малалла уттарать.

## ҪИРӖМ ПИЛӖК ХУТЛӐ ҪУРТ...

Акӑ, чӑваш культурин эрнелӗхӗ вӗҫленсе пырать. Кӗҫех чӑваш писателӗсен Мускав хулипе сывпуллашма тивет.

Вӑл вӑхӑтра чӑваш писателӗсен Союзӗн председателӗнче Л. Я. Агаков вӑй хуратчӗ. Культура эрнине хутшӑннӑ писательсене вӑл

«Днепр» гостиницӑри пӗр пӳлӗме пухрӗ. Чӑваш писателӗсене мӗн-мӗн кирлине палӑртса А. А. Фадеев патне ӗҫлӗ хутсем тӑратмала иккен.

Писательсем пурте тенӗ пекех Литфондран хваттерсем тума укҫа уйӑрса пама ыйтас терӗҫ.

А. Фадеевӑн ӗҫ пӳлӗмӗнче эрнелӗх пирки каласрӗҫ. Тӗплӗн сӳтсе еврӗҫ: ҫитменлӗхсене те, ӳсӗмсене те палӑртрӗҫ.

Юлашкинчен А. Фадеев пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ калама пуҫӑнчӗ: каларӗ-каларӗ те:

-Чӑваш писателӗсем валли ҫирӗм пилӗк хутлӑ ҫурт тума йышӑнас, - тесе печӗ ячӗ.

Пурте пӗр-пӗрин ҫине тӗлӗнӗҫлӗн пӑха-пӑха илчӗҫ.

А. Фадеев часах хӑй мӗн персе янине тавҫӑрса илчӗ те ахӑлтатса кулса ячӗ. Кулли унӑн чунран тухать...

-Халлӗхе ҫирӗм пилӗк хутлӑ ҫурт Мускавра та ҫук-ха... Ҫирӗм пилӗк хваттер тумалӑх Литфондран укҫа уйӑрса парас, - хӑйне хӑвӑрт тӳрлетрӗ Александр Александрович.

Пурин кӑмӑлӗ те ҫӗкленчӗ, ҫырлахрӗ.

## ӐНА ТӲПЕ ЙЫХӐРНӐ...

Ун чухне Михаил Ивнович Юрьев Шупашкар хулин Пасар урамӗнче пурӑнатчӗ. Килйышӗ пысӑкчӗ унӑн: вӑл вӑхӑтра пӗр ачи те пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухманччӗ-ха. Ҫав пысӑк йыша ашшӗн – Михаил Ивановичӑн – тытса тӑмаллаччӗ. Унӑн арӑмӗ ӗҫлеместчӗ, йышлӑ ача-пӑчана хӑйсем тӗллӗн мӗнле пӑрахса хӑварӑн?

Йывӑҫ ҫуртчӗ вӗсен. М. И. Юрьев вӑл

вăхăтра Чăвашрадиора тĕп редакторта ĕçлетчĕ.

Эпĕ, студент, çуллахи каникула килнĕскер, радио çуртне кĕретĕп. Çурчĕ ун чухне Кайпăлкка шывĕ хĕрринчех ларатчĕ. Çулла, чӳречене уçсан, шыв шанкăртатса юхни те илтĕнетчĕ. Халĕ ку вырăнсем шыв айне пулнă.

Михаил Ивановичпа курнăçрăм. Кĕç-вĕç ĕç кунĕ вĕленмеллеччĕ. Вăл мана:

-Паян ĕç укçи пачĕç. Атя ман патăма, - тесе йыхăрчĕ.

-Килĕшӳллĕ пулать-ши? Эпĕ сирĕн мăшăра пĕлсех каймастăп, - терĕм.

-Вăл манпа пĕрле пыракансене нихăшне те хăррăн пăхмасть, хирĕç хуравларĕ Михаил Иванович.

Çула май лавккана кĕрсе тухрăмăр. Эпĕ батон туянтăм.

-Çын патне пуçласа пынă чухне çăкăрпа пымалла, - каласа хутăм эпĕ.

-Хă...Чăваш йăлине пĕлетĕн-çке эсĕ, - сăнĕ çуталчĕ Михаил Юрьевăн. Çитрĕмĕр. Картишĕнче ĕне тăрать.

-Ачасене сĕт кирлĕ, - кĕскен каларĕ кил хуçи. Пӳрте кĕтĕмĕр.

Михаил Ивановичăн мăшăрĕ пире кăмăллăн кĕтсе илчĕ.

-Çĕнĕ юлташу пулĕ-ха ку? - мана тĕпчевлĕн пăхса ыйтрĕ мăшăрĕнчен арăмĕ.

-Мускавра вĕренет. Сăвăç. Паллашăр.

Мăшăрĕ мана алă пачĕ. Манăн чунăм лăпланчĕ, хирĕçлемеççĕ.

Унтан мăшăрĕ:

-Михаил Иванович, Элли шăлаварне çурса пăрахрĕ. Çурт тăррине хăпарса кайнă та...-кил хуçине пĕлтерчĕ арăмĕ.

-Элли, кил-ха! – кĕҫех ҫӳллех мар ача тухса тăчĕ. Пĕр виҫҫĕмĕш класра вĕренет-ши?

-Мĕн тума хăпарса кайнă эсĕ пӳрт тăррине?

Ача пĕр ура ҫинчен тепри ҫине пускаласа тăчĕ те:

-Атте, эпĕ ҫурт пуҫне пропеллер лартрăм. Тухса пăхма та пулать. Ҫилпе хытă ҫаврăнать, чăн-чăн пропеллер! Шăлавара анне ҫĕлерĕ ĕнтĕ, - питĕ лăпкăн каласа хучĕ Элли.

-Ĕне валли курăк илсе килнĕ-и-ха? - ыталахальтен тенĕ пекле ыйтрĕ ашшĕ.

-Килнĕ, - кĕске пулчĕ Элли хуравĕ.

Михаил Ивановичăн ача йышлă тенине илтнĕччĕ-ха эпĕ. Ҫавах та вĕсем пӳртре пачах та курăнмаҫҫĕ. Ача-пăча киле ҫын килсессĕн яланах сĕтел тавралла явăнса ҫӳрет. Кусем – ҫук. Апла ашшĕ-амăшĕ ачасене йĕркене ҫирĕп вĕрентет.

Михаил Иванович сĕтел ҫине пулăштух кăларса лартрĕ. Арăмĕ ҫиме пуҫтарчĕ. Эпĕ те чĕрĕк илнĕччĕ, кĕсьерен кăларса кил хуҫине патăм.

Хуллен-хуллен шăкăл-шăкăл калаҫу тапранчĕ.

Михаил Иванович Юрьев сăвăсем те, пьесăсем те ҫырнă, пичетлесе кăларнă, вырăсларан чăвашла чылай куҫарнă. Ĕҫчен ҫын пулнă Юрьев. Сăввисене вара Нямань хушма хушаматпа пичетленĕ.

Кăштах хĕртĕмĕр те, Михаил Иванович:

-Элли, кил-ха кунта, - тесе чĕнчĕ. Элли ун умне пырса тăчĕ. Унтан ачине: -Атя, сăвă каласа пар-ха хăнана, - тесе хушрĕ.

Элли кĕттермерĕ, яшт! тӳрленсе тăчĕ те:

Эпир вӑйлӑн вӑя пухнӑ,

Тӗнчере – пӗрре.

Ҫӗнтермешкӗн эпир тухнӑ,

Ҫӗнтеретпӗрех...-янраттарма пуҫларӗ сӑвва. Каласа пӗтерсен, амӑшӗ Эллирен:

-Сӑвви камӑнччӗ-ха? - тесе ыйтрӗ куларах. Элли ӑна тӳрех:

-Няманӗн, - тесе хуравларӗ.

Ак сана! Ача веҫех пӗлет.

-Маттур, маттур! – лӑпкарӗ ачана ҫурӑмран ашшӗ.

Малтанхи тӗл пулу ҫапла иртсе кайрӗ манӑн. Ача хӑюлӑхӗ, тавҫӑрулӑхӗ килӗшрӗ. Вӑл ҫухалса каймасть, турткалашса тӑмасть. Хӑй пӗлнине ашшӗ-амӑшӗ умӗнче те, ҫын умӗнче те кӑтартма пултарать.

Кайран эпӗ Элли Михайлович Юрьевпа часчас курнӑҫман. Вӑл инҫе ҫӗрте, Грузи тӗп хулинче Тбилисире, ӳнер академийӗнче зӗреннӗ, хӑйӗн ӑсталӑхне ӳстернӗ.

Элли Михайловичпа, вӑл вӗренсе таврӑнсан, унпа пӗрле, нумаях пулмасан та, ӗҫленӗ. Питӗ тӑрӑшуллӑ ҫынччӗ. Кӗнеке издательствинче вӑй хунӑ чухне ӗнтӗ Элли хӑйне майлӑ шрифт шутласа кӑларчӗ. Шрифчӗ вара Элли Михайловича ҫеҫ тивӗҫлӗ. Кӗнеке издательствинче пичетленсе тухакан кӗнекесене те илемлететчӗ. Каласа хӑварам: вӑл манӑн «Ҫитмӗл ҫичӗ пӗр тӑван» ятлӑ юмахсен кӗнекине илемлетрӗ: нумай тӗслӗ сюжетлӑ ӳкерчӗксем кӑна кӗнекере вун улттӑ. Унсӑр пуҫне кӗнекен кашни страницинче ӳкерчӗксем. Епле тӑрӑшнӑ вӑл, мӗнле вӑй хунӑ. Кӗнекере 144 страница вӗт. Унтан «Асран кайми» ятлӑ сӑвӑсемпе поэмӑсен кӗнекен хуплашкине туса пачӗ. Паха хуплашка

пулса тухнӑ: алла тытма кӑмӑллӑ. Ытти писательсемпе сӑвӑҫсен кӗнекисене мӗн чухлӗ илем кӗртнӗ-ши пултаруллӑ художник?! Асӑнса та пӗтерейместӗн...

Чаплӑ ӳнерҫӗ хӑйӗн ӑсталӑхне ҫамрӑксене вӗрентнӗ, ӑс панӑ вӑл. Чӑваш кӗнеке издательствинчен урӑх ӗҫе куҫнӑ чух Галина Самсоновӑна хӑй вырӑнне ӗҫлеме сӗнет. Халӗ Г. Самсонова кӗнеке кӑларас ӗҫре паллӑ ӑстасенчен пӗри. Ҫаплаччӗ Э. М. Юрьев.

Хула администрацинче ӗҫленӗ чух тӗп архитектор пулнӑ. Шупашкар сӑнне илем кӗртесшӗн вӑйне-халне шеллемен вӑл. Хула кӗперӗсене пурне те хӑйне евӗрлӗ тимӗр эрешпе сӑн кӗртнӗ. Эрешӗсем чӑваш тӗррине аса илтереҫҫӗ.

Унтан пултаруллӑ художник Шупашкар хулин Гербне турӗ. Епле илемлӗ вӑл, чун патне пырать. Пилӗк кайӑк-кӑвакал Шупашкар таврашӗнчи ҫут ҫанталӑк пуянлӑхне сӑнлать ӗнтӗ. Йӑлтах пуҫ тавралла шутласа тунӑ ӳнерҫӗ. Вӑл хула историне тӗплӗн тӗпченӗ. Унсӑр ӑнӑҫлӑ ӗҫ пулать-и вара?

Пурне те хӑй куҫӗпе курма, чунӗпе туйма тӑрӑшнӑ Элли Михайлович. Кам ӑна парашютпа сикме хистенӗ? Никам та. Вӑл Шупашкар аэроклубне ҫӳреме тытӑнать. Тытӑнать те, йӳле ярса мар, чӑнласа вӗренет, вара парашютпа сикме пуҫлать. Ак сана! Вӑл ҫӳл тӳперен 200 хута яхӑн сикет! Хӑй каласа панӑ тӑрӑх, парашютиста ҫил Сӗнтӗрвӑрри еннелле те вӗҫтерсе кайни пулнӑ. Хӑраса ӳкмен сенкер тӳпене савакан ҫын. Унтан художник планерпа та вӗҫсе пӑхнӑ. Пӗр сӑмахпа каласан: пурне те хӑй тӗрӗсленӗ Элли Михайлович!

Акă мĕншĕн çамрăк ача Элли пӳрчĕ умне пропеллер хăпарса лартнă! Ăна ĕмĕт чĕннĕ.

Эллине курах пулĕ ĕнтĕ унăн шăллĕ Хаджи Михайлович та художнике тухнă. Вăл та Чăваш кĕнеке издательствинче нумайччен ĕçлерĕ. Шел, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

1995 çулхи çурла уйăхĕнче эпир пĕр палатăра, больницăра выртрăмăр. Хăй ĕç планĕсемпе паллаштарчĕ вăл. Çавăн чухне мана К. В. Иванов сăнĕпе кăларнă пĕр тенкĕлĕх укçа парнелерĕ. Çав укçана сăвăç çуралнăранпа 100 çул тултарнине асăнса Ленинградра кăларнă. Элли Михайлович хăй аллипе ăсталанă ăна. Сăвăç сăнлă укçана, Элли парнине, эпĕ ĕмĕрех чыслăн упрăп.

1997 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарти ӳнер музейĕнче Чăваш халăх художникĕн, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕн, К. В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕн Элли Михайлович Юрьевăн ĕçĕсен куравĕ уçăлчĕ. Унта Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Васильевич Федоров та пулчĕ, ăшă та ырă, витĕмлĕ сăмах каларĕ, Элли Михайлович ĕçĕсене пысăк хак пачĕ, талантлă художник терĕ вăл ăна.

Эпĕ те Элли Михайловича халалланă сăввăма вуларăм. Акă вăл:

*Элли Юрьева – чăваш халăх художникне*

Эпĕ пĕлнĕ санăн аçуна та,
Пĕрле ĕçленĕ кăмăлтан.
Телейпеле кун-çул сунатăп
Эп унăн ывăлне паян.
Çут тĕнчере ăста сахал,
Сăрлавçăсем вара – çитеççĕ.

Элли, ĕçӳ пырать кал-кал,
Эс çĕршывра хастар ӳнерçĕ.
Эс тӳпере те пулнă теççĕ,
Анса парашютпа унтан.
Ӳкерчĕксем сана çĕклеççĕ
Яланлăхах тӳпе таран.
Чăваш Ялавĕпеле Гербĕ
Сан чуну витĕр шăранса
Тухни çинчен пĕлетĕп эпĕ...
Элли, чăн паттăрлăх ку сан!
Чăваш чунне ăнланмасассăн,
Тĕпчемесен аваллăха
Эс парас çукчĕ пулĕ сасă?
Эс ăнланатăн халăха.
Ӳкерчĕкӳ те, сас палли те
Пуласлăха куç хывнине
Курса тăратăп эпĕ витĕр,
Куратăп сан ĕçченлĕхне.
Элли, эс пĕтĕмпех ху евĕр,
Чăн-чăн ăсталăх – вăл санра.
Кун-çул утти, кун-çул кĕрлевĕ
Кашни ӳкерчĕкрех янрать
Куç умĕнче те халăхра, -
Сăрă симфоние куçать,
Телейĕн хапхине уçать...

Сăвва эпĕ Элли Михайловича патăм. Ӳнерçĕ ăсталăхĕнчен чăннипех те тĕлĕнетĕп. Питĕ нумай енлĕччĕ унăн пултарулăхĕ.

Куравра эпĕ А. С. Пушкинăн «Пĕчĕк трагедисем» кĕнеки валли хатĕрленĕ ӳкерчĕксене асăрхарăм. Вĕсене чылайччен пăхса тăтăм. Ку трагедисене П. Хусанкай, Ю. Айдаш тата эпĕ чăвашла куçарнă. Çак кĕнеке Раççей Федерацийĕн кĕнеке выставкинче диплом илнĕ. Пал-

лах, Элли Михайлович ӳкерчӗкӗсен витӗмӗ те пӗлтерӗшлӗ пулнӑ ӗнтӗ кунта.

Кам шутланӑ художник пирӗнтен ҫапла ир уйрӑлса каять тесе. Утмӑл пилӗк ҫула та ҫитеймерӗ, виҫӗ уйӑх кӑна юлнӑччӗ вӗт-ха.

Утмӑл пилӗк ҫул тӗлне Ӳнер музейӗнче художник ӗҫӗсен ҫӗнӗ куравӗ уҫӑлчӗ. Анчах хӑйсӗр. Шел. Кирек мӗнле пулсан та - ӑстасем вилмеҫҫӗ, талантлӑ ҫынсем яланах халӑх асӗнче пурӑнаҫҫӗ. Унӑн ӗҫӗ-хӗлӗ вилӗмсӗр. Акӑ, Республика лапамӗнче тӳпенелле кармашса Ялав вӗлкӗшет. Апла Элли Михайлович пирӗнпе пӗрлех!

Элли Михайлович Юрьев ҫинчен тӗпчев ӗҫӗсем те пичетленме тытӑнӗҫ-ха. Унта пӗтӗмпех тӗплӗн те тарӑннӑн каласа парӗҫ художник пултарулӑхӗпе кун-ҫулӗ пирки. Пурсӑмӑр та шанатпӑр. Элли Михайлович ӑна тивӗҫлӗ!

2001 ҫ.

## ПУРНӐҪ ҪЫННИЧЧӖ...

Ҫур ӗмӗре яхӑн юлташлӑ пурӑннӑ ҫын ҫинчен тата ҫӗре вӑхӑтсӑр кӗнӗ пултаруллӑ та маттур, ӗҫчен писатель пирки ҫырма калама та ҫук йывӑр. Мӗншӗн тесен ытлашши сӑмах каласа хурӑн та — ытлашши пулӗ. Вӑл мана тӑрса хурав параймӗ, ӑна пӗлекенсем «ҫакна ҫырма кирлӗ марччӗ» тесе хурӗҫ. Ҫавах та ҫак пӑтранчӑк саманара юлташсем пӗрне-пӗри ырӑ сунни сахал пек туйӑнать. Вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗрсессӗн пӗр-пӗрне хӑвӑрт асран кӑларатпӑр. Ҫырнӑ, пичетленсе тухнӑ произведенисем пирки калама тӑрсассӑн тиркевлӗн алӑ сулма пул-

тараççĕ е усал сăмахпа çавăрттарса хума май тупаççĕ. Ёлĕкрех тус, юлташ сăмахсем питĕ хисепреччĕ: санпа мĕн те пулин сиксе тухать-и – киле пырса ларман пулин те – юлташ телефонпа шăнкăравлатчĕ, санпа пĕрле хурланатчĕ, санпа пĕрле хуйха-суйха е телейлĕ самантпа савăнăçлă кунсене çурмалла пайлатчĕ, - халĕ çапла самантсем сĕвĕрĕлсе пынă пек туйăнать мана.

Çапла, Анатолий Емельяновпа иксĕмĕр хушăран хура кушак чупса иртмен: апла-капла асăрхаттарса каланисем пулнă пулĕ - кун пекки пурнăçра пулатех ĕнтĕ. Эпир пĕрне-пĕри ĕненнĕ, шаннă, хăшĕ-пĕри элек таврашĕпе пире пăсма тăрăшнă пулин те эпĕ юлташ пирки аплакапла персе ярас çуккине пĕлнĕ вăл, эпĕ те ун пирки ахальтен шăл йĕрсе çӳремессине ĕненнĕ. Юлташăмăн кăмăлĕ уçăччĕ, хĕвре те чул чиксе çӳреместчĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн варринерех, 1955 çулсем хыççăн, пĕр-пĕринпе куçа-куçăн хирĕç тăрса калаçма тытăннă эпир. Вăл тапхăрта культ сĕрĕмĕ аран-аран сĕвĕрĕлме тапратнăччĕ-ха. Пуç тăрринчи хура пĕлĕтсем витĕр таса хĕвел шевлисем шăтарса тухатчĕç те пирĕн сукмаксене çутататчĕç. «Çурхи тумламсен тапхăрĕ» /вырăссем «оттепель» тетчĕç/ пуçланса йăл илетчĕ ун чухне. Анатолий Викторович Емельянов çак тапхăралла Вăрнарти комсомол райкомĕн секретарĕнче вăй хуратчĕ пек ас тăватăп.

Каçарăр-ха, комсомол райкомĕн секретарьне суйличчен зооветеринари техникумĕнчен вĕренсе тухать пулас писатель, ун хыççăн темиçе çула яхăн хăйсен районĕнчи «Самолет» колхозра ветеринари фельдшерĕнче тăрăшать,

пурăнăç аслă юхăмне чăмать Анатолий Емельянов. Унăн чунĕ ĕçре пиçĕхет. «Пулас ут тихаран паллă», - теççĕ пирĕн ватă, кун-çул сунталĕ çинче туптаннă сынсем-шурсухалсем юптарса та шахвăртса. Ĕçре пиçĕхнĕ çамрăка çара илсе каяççĕ. Çапла, çултан çул пиçĕхсе, аталанса, вăй пухса пырать вăй питти çамрăк.

Анатолий Емельянов малтанах сăвăсем çырма тытăннă. Вăл вĕсене район хаçатĕнче пичетлетчĕ. Никам та, нимĕнле писатель те тӳрех роман е повеçпе тытăнман пулĕ тетĕп пултарулăхăн йывăр çул-йĕрне? Тен, тĕнчере пулнă, анчах ăçтан пурне те пĕлсе пĕтерĕн. Эпĕ ун чухне, «Ялав» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ май, Анатолий Емельянов сăввисене вуланă, тишкернĕ, хăш-пĕр уйрăмшар сăввисене çутă кун та кăтартнă. «Кăштах юсасчĕ» е «тӳрлетесчĕ» тесе те çырса янă пулĕ Вăрнар еннелле. Тен, вăл мана куншăн ăшра кӳреннĕ те тĕр, - çавах палăртман. Каялла темшĕн «юсаса-тӳрлетсе» янине ас тумастăп. Темиçе çул иртсен вара хăш-пĕр чух мана А. Емельянов: «Эсĕ хĕрлĕ кăранташпа паллă тунисене пăхатăп...» – тесе шӯтлекелесе илетчĕ.

Вăл вăхăтра эпир, редакцире ĕçлекенсем тата редколлеги членĕнче тăракансем, питĕ тĕплĕн, чăкрашланса ăсталăх пирки ыйтаттăмăр. П. Хусанкайпа Я. Ухсая, А. Алкапа Илпек Микулайне тата ыттисене те ал çырăвне тепре пăхса тухма сĕннĕ, «тепĕртак тăрăшса пăх-ха» тенĕ, кăлтăксене тӳрлеттернĕ, авторĕсене тавăрса панă. Вĕсем куншăн тарăхман. Хальхи саманара вара йăлтах ирĕке кайнă / темĕн çырма та ирĕк панă-çке!/ , хăшĕ-пĕри, кăшт асăрхаттарсанах, алчăрса каять – пурте

«классик». «Ман пек çырса пăхăр-ха, нихăçан та çыраймăр! – тет те штукатурланă стена çумĕнчи цемент хăпăнмалла алăка шатлаттарса тухса каять. Кайран сан пирки элек сарма та именмест. Ахальтен мар-тăр ĕнтĕ Анатолий Емельянов хăйĕн «Ăш хыпнă чух» кун кĕнекинче çапла çырать: «Элеке пĕри сарать, тепри çулса тытать, виççĕмĕшĕ вĕçтерсе ярать. Куршанак пекех çыпçăнать вăл, пиçен е кукша пуç вăрри пек саланать. Унта-кунта шăтать.

Епле тÿссе ирттермелле çак элеке таса чунлин?..» / «Тăван Атăл», 1995 ç., 4 №. / Ку ахальтен çырăнман пулĕ тетĕп. Писатель пурне те хăй чĕри витĕр кăларать. Чĕре тÿсет теççĕ. Çук-тăр çав. Тепĕр чухне вăл çурăлса та каять, çынна чире те ярать. Çавăнпа та пĕрнепĕри упрама вĕренмелле пирĕн.

Писатель малтан «Канăçсăр çуркунне», «Кăвайт çутисем» ятлă калавсен кĕнекисене пичетлесе кăларать. Аван йышăнать вулакан унăн кĕнекисене. Чылайăшĕ ырăпа асăнатчĕ ун пирки: «Чăваш литературине таса та пултаруллă çын килчĕ», - тетчĕç. Митта Ваçлейĕ куçран каласа ырланине час-часах аса илетчĕ А. Емельянов. Ку писатель чунĕ çине услам çу сĕрнĕ майлах пулнă ĕнтĕ.

1965 çулта манăн унпа çывăх паллашма, нумайччен юнашар ларса калаçма вăхăт тупăнчĕ, май килчĕ.

Çав вăхăтра Анатолий Емельянов «Çавал сарăлсан» роман çырса пĕтернĕччĕ. Чăваш кĕнеке издательствинче хăшĕ-пĕри çак романа ырлатчĕ, теприсем вара тиркетчĕç. Паллах, малтанхи романа камăн кĕнекепе тухнине курас килмĕ?

«Обществӑлла редактор туп, вара кӑларӑпӑр», - теҫҫӗ романҫӑна. /Вӑл вӑхӑтра ҫапла ятлӑ редактор та пурччӗ. Издательство редакторӗ мар, айккинчи редактор ӗнтӗ./ «Ҫавал сарӑлсан» романа вуласа тухрӑм та – обществӑлла редактор пулма килӗшрӗм. 1966 ҫулта «Ҫавал сарӑлсан» роман кун ҫути курчӗ. Тертлӗ пулчӗ романӑн ҫулӗ.

Акӑ хайхи «Ҫавал сарӑлсан» роман Мускавра вырӑсла пичетленсе тухрӗ! Ӑна вырӑссен паллӑ писателӗ Семен Шуртаков вырӑсла куҫарчӗ. Романа хирӗҫле тӑракансен куҫӗсем чарӑлсах кайрӗҫ. А. Емельянов вӗсене ҫӗнтерчӗҫке! Ҫитменнине «Ҫавал сарӑлсан» С. Михалков ум сӑмахӗпе тухрӗ. Ҫавах та писатель хӑлаҫланса, мухтанса ҫӳремерӗ. Ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ калавсем, повеҫсем, романсем, очерксем, публицистика статйисем ҫырчӗ.

Тата ҫакна та асӑнса хӑварам: А. Емельянов мӗн пенсие тухичченех кантурта ӗҫленӗ. Апла писатель кӑнтӑрла патшалӑхшӑн вӑй хунӑ, каҫхине, ӗҫрен таврӑнсан, пултарулӑх ӗҫне малалла тӑснӑ. «Ик шӑнӑрлӑ ҫын», - теҫҫӗ ун пеккисем пирки халӑхра. Апла писатель чӑнчӑн пурнӑҫ ҫынни пулнӑ! Акӑ вӑл епле яваплӑ вырӑнсенче ӗҫленӗ: Вӑрнар райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ, ЧАССР культура министрӗ, Издательствӑсемпе полиграфи управленийӗн пуҫлӑхӗ, Чӑваш Писательсен правленийӗн председателӗ тата ЧАССР Аслӑ Канашӗн депутачӗ...Кунсӑр пуҫне хисеплӗ писателе РСФСР тата СССР Писательсен правленийӗн членӗсене суйлаҫҫӗ - т. ыт. те, т. ыт. те. Яваплӑхӗ мӗнле пысӑк тата?!Пурте сан патна ыйтупа пыраҫҫӗ, - пурне те тивӗҫлӗ хурав памалла. Ҫынсен

ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме питӗ хӗн: пӗрне хваттер кирлӗ, теприне айӑпсӑр айӑпланӑ иккен — пурне те, пурне те кирлӗ пек татса памалла. Пурнӑҫа пӗлмесӗр майне-шывне тавҫӑрсах пӗтереймӗн...

Публицист пултарулӑхӗ епле иксӗлми унӑн?! Хамӑр республикӑри тата Мускаври хаҫатсене, вӑл вӑхӑтрисене, уҫса ҫеҫ пӑхсамӑр. Хӑй чунӗпе халӑхшӑн, тӑван ҫӗршӗн, ӗҫчен ҫын кӑмӑлӗшӗн ҫуннине витӗрех курма-туйма пултаратӑр. Ку каллех ахаль пулмасть. Пурте, пӗтӗмпех писатель чӗри витӗр тухать.

Кунта эпӗ Анатолий Емельяновӑн пултарулӑхӗпе ӗҫӗ-хӗлне тӗпчес тӗллев лартман. Хамӑн хӑш-пӗр шухӑша ҫеҫ каласа хӑварасшӑн пултӑм. Ун ҫинчен монографи е пысӑк тӗпчев ӗҫӗ ҫырмалла. Ку литературоведсен ӗҫӗ. «Шӑнкӑрав куракӗ», «Чапшӑн пурӑнмастпӑр», «Шыв типнӗ ҫул», «Кӗмӗл ҫил», «Хура кӑрӑҫ», «Ят» тата ытти калӑплӑ произведенийӗсем, калавӗсем тӗплӗн тишкерме ыйтаҫҫӗ. «Кантӑр» лирикӑлла калавӗ мӗне тӑрать. Кунта ӑсталӑхӗпе А. Емельянов Иван Бунин шайне ҫӗкленнӗ.

Ахаль мар пулӗ писателе Халӑхсен туслӑхӗн, Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав тата ытти орден-медальсемпе, Хисеп грамотисемпе наградӑланӑ.

Литературӑри паха ӗҫӗсемшӗн Анатолий Викторович Емельянова Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ, К. В. Иванов ячӗллӗ Патшалӑх премийӗсене панӑ. Шухӑшласан, мӗнле тивӗҫлӗ те сумлӑ ятсемпе ҫуммӑн тӑрать писатель ячӗ! Чӑваш Республикин икӗ премине сайра писатель тивӗҫнӗ. Ӗҫлекен ҫынна кирлӗ пек тивӗҫтерме те пӗлеҫҫӗ иккен пирӗн Чӑвашра. Тавахуншӑн ӗҫ хакне кӑшт та пулин чухлакансене.

Паллах, ĕçлекен çынна, тăрăшса та халăхшăн ĕçлекен çын, кирек хăçан та пулин чыслă та хисеплĕ ята тивĕçет, çĕнтерет. Çавăнпах-тăр Анатолий Емельянова Чăваш халăх писателĕн хисеплĕ ятне панă.

Пуrăннă пулсан кăçалхи кăрлачăн 10-мĕшĕнче А. В. Емельянов 70 çула çитмеллеччĕ. Шел, вăл пирĕнпе пĕрле уяв сĕтелĕн президиумĕнче лараймасть. Апла пулсан та эпир ăна чĕррĕн курса чыслăпăр. Акă К. В. Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче А. Емельянова хисеплесе курав уçăлнă. Ку та сумлă пĕлтерĕшлĕ.

Писателĕн ырă ячĕ ĕмĕрех пирĕн чунсенче упранĕ, чĕрĕ сăнарĕ умра тăрĕ, унăн произведенийĕсем чăваш халăхĕ пурăннă чух вилĕмсĕррĕн пире ăс-хал парса тăрĕç.

2002 ç.

**Ефимов Георгий Андреевич**

# ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО

Стихотворения и воспоминания

Под редакцией автора
Макет и оформление В. П. Сидоров
Компьютерный набор Тихонова А. В.

На 1-ой стр. обложки: персидская миниатюра к поэме Алишера Навои;
На 4-ой стр. обложки: народный поэт Чувашии Георгий Ефимов с супругой народной артисткой ЧР Светланой Михайловой-Ефимовой

Сдано в набор 11.05.2003 г. Подписано к печати 17.06.2003 г.
Формат 60х84 $^{1}/_{32}$ Бумага офсетная. Гарнитура Новогаз.
Усл. печ. л. 6, 25. Тираж 300 экз.

Издательство «Калем».
Лицензия ЛР № 03927 от 10.10.99 г. Госкомпечати РФ.

